# БУКВАРЬ ДЛЯ ЧУВАШЪ

СЪ ПРИСОЕДИНЕНІЕМЪ

## РУССКОЙ АЗБУКИ.

## ЂАВАШ КЕНЕКИ.

ИЗДАНІЕ ТРЕТІЕ
ПРАВОСЛАВНАГО МИССІОНЕРСКАГО ОБЩЕСТВА.

35
№ 5288
БИБЛІОТЕКА
ПОГАШЕНО

КАЗАНЬ.
Типографія В. М. КЛЮЧНИКОВА, Бол. Проломная улица, соб. домъ.
1884.

Ч
В. 1/121
35/299

# БУКВАРЬ

# ДЛЯ ЧУВАШЪ

СЪ ПРИСОЕДИНЕНІЕМЪ

# РУССКОЙ АЗБУКИ.

## ЂĂВАШ КĔНЕКИ.

ИЗДАНІЕ ТРЕТІЕ

ПРАВОСЛАВНАГО МИССІОНЕРСКАГО ОБЩЕСТВА.

№ 5988
ПОГАШЕНО

КАЗАНЬ.
Типографія В. М. КЛЮЧНИКОВА, Бол. Проломная улица, соб. домъ.
1884.

От Совѣта Братства Св. Гурія печатать дозволяется. К
занъ. Іюля 28 дня, 1884 года.

Предсѣдатель Совѣта Братства **КИРИЛЛЪ**, Еп
скопъ Чебоксарскій.

Всесоюзная Библиотека имени В. И. Ленина

127/2-26

2007087639

# ПРЕДУВѢДОМЛЕНІЕ.

Для чувашскаго языка принятъ русскій алфавитъ. Чувашскіе звуки, по произношенію сходные съ звуками русскаго языка, изображаются соотвѣтствующими буквами русскаго алфавита; для изображенія же несходныхъ звуковъ употребляются ближе подходящія русскія буквы съ придаточными знаками. Съ принятымъ для чувашскаго языка алфавитомъ можно ближе познакомиться изъ слѣдующихъ 12 §§.

§ 1. Всѣхъ знаковъ или буквъ для изображенія звуковъ чувашскаго языка принято 25. Изъ нихъ 8 гласныхъ: а, е, у, ӳ, ы, и, ӑ, ӗ; 16 согласныхъ: в, л, ль, м, н, нь, р, к, п, с, ç, т, ть, ҫ, х, ш и краткое и (й).

§ 2. Гласныя въ чувашскомъ языкѣ двойственны, или парны: а—е, у—ӳ, ы—и, ӑ—ӗ. Каждая пара представляетъ одинъ и тотъ же основной звукъ, только въ одномъ случаѣ произносимый твердо, въ другомъ мягко. Поэтому гласныя могутъ быть раздѣлены на *твердыя:* а, у, ы, ӑ, и *мягкія:* е, ӳ, и, ӗ.

§ 3. Парность гласныхъ звуковъ въ чувашскомъ языкѣ соотвѣтствуетъ *закону созвучія*, который состоитъ въ томъ, что въ каждомъ чувашскомъ словѣ гласныя должны быть или *всѣ твердыя*, или *всѣ мягкія*. Закону созвучія подлежатъ всѣ измѣ-

ненія слова при склоненіи и спряженіи, а также грамматическія приставки.

*Примѣчаніе.* Отъ *закона созвучія* въ нѣкоторыхъ случаяхъ бываетъ отступленіе, -именно слово, въ корнѣ котораго есть твердая гласная, иногда принимаетъ въ окончаніи мягкую гласную или слогъ съ мягкой гласной; напротивъ же—т. е. чтобы слово, въ концѣ котораго есть мягкая гласная, принимало въ окончаніи твердую гласную или слогъ съ твердой гласной,—никогда не бываетъ. Но случаевъ отступленія отъ закона созвучія не много и притомъ они не произвольны, а опредѣляются грамматическими условіями.

§ 4. На основаніи предъидущаго § всѣ слова чувашскаго языка могутъ быть раздѣлены на *твердыя*, въ которыя входятъ твердыя гласныя, и *мягкія*, въ которыя входитъ мягкія гласныя. Узнать, извѣстное слово *твердое* или *мягкое*, не трудно. *Твердое* слово требуетъ твердую приставку: та, па, и т. д., а *мягкое* слово требуетъ соотвѣтственную мягкую приставку те, пе и т. д. Для правильности письма иногда требуется знать извѣстное слово: *твердое* оно, или *мягкое*.

§ 5. Гласныя а, ы, и произносятся какъ порусски; у въ Ядринскомъ, Козмодемьянскомъ и Курмышскомъ уѣздахъ какъ руское о съ удареніемъ, а у всѣхъ остальныхъ чувашъ какъ русское у; ӳ мягче, чемъ русское у; е похоже на русское оборотное е (э), но мягче нѣсколько; ӑ и ӗ произносятся похоже на русскія а и э, или о и ё, если только послѣднія произносить быстро. Впрочемъ правильное произношеніе ӑ и ӗ лучше всего усвоить практически при помощи природнаго чувашенина. Звуки ӑ и ӗ не свойственно рускому языку.

§ 6. а, е, у, ӳ, ы, и имѣютъ опредѣленное и ясное произношеніе, мы ихъ назовемъ *долгими гласными*: ӑ и ӗ про-

износятся бѣгло и неопредѣленно,—*короткія гласныя:* ӑ и ӗ на концѣ словъ нерѣдко усѣкаются, теряются, чего не бываетъ съ прочими гласными.

§ 7. Й произносится какъ порусски; кромѣ обыкновеннаго употребленія послѣ гласныхъ, какъ въ русскомъ языкѣ, Й въ чувашскомъ служитъ для смягченія (йотаціи) гласныхъ. Всѣ гласныя смягчаются: йа, йе, йӳ, йу, йы, йи, йӑ, йӗ. Такія смягченныя гласныя въ чувашскомъ языкѣ встрѣчаются и въ началѣ, и въ срединѣ, и въ концѣ словъ.

§ 8. *Согласныя* въ чувашскомъ языкѣ подраздѣляются на *плавныя:* Л, Лҍ, М, Н, Нҍ, р, В, и *нѣмыя* К, П, С, Ҫ, Т, Тҍ, Ť, Х, Ш. Такое раздѣленіе согласныхъ на *плавныя* и *нѣмыя* установлено на основаніи отличительныхъ свойствъ тѣхъ и другихъ.

§ 9. *Плавныя* согласныя: Л, М, Н, р, В произносятся какъ порусски: передъ гласными *твердыми твердо,* а передъ *мягкими мягко* Лҍ и Нҍ всегда произносятся мягче чѣмъ Л и Н. Лҍ и Нҍ употребляются только передъ твердыми гласными, напримѣръ: вылҍӑх, кунҍӑм.

§ 10. *Нѣмыя согласныя:* К, П, Х, Ш произносятся какъ порусски,—передъ *гласными твердыми твердо* а передъ *гласными мягкими* нѣсколько *мягче;* С, Т какъ передъ гласными твердыми, такъ передъ мягкими *всегда произносятся твердо*, какъ русское с и т передъ гласными ы, у, а, о; Ҫ, Тҍ какъ передъ гласными твердыми, такъ и передъ мягкими всегда произносятся, *мягко*, какъ русское с и т передъ гласными ѣ, е, я, ю. Тҍ у Курмышскихъ, Ядринскихъ и Козмодемьянскихъ

чувашъ произносится какъ русское ч; Ť знакъ для изображенія звука средняго между Т и Ђ, Ť употребляется преимущественно въ окончаніи 3-го лица настоящаго времени единственнаго числа у тѣхъ глаголовъ, у которыхъ въ корнѣ твердая гласная: пулаŤ, таваŤ, кайаŤ и т. д., и въ немногихъ словахъ передъ твердой гласной: аŤа, Ťыха.

§ 11. *Всѣ согласныя нѣмыя* въ чувашскомъ языкѣ; К, П, С, Ç, Т, Ђ, Ť, Х, Ш *въ двухъ извѣстныхъ опредѣленныхъ случаяхъ подвергаются особенному смягченію*, именно К произносится какъ русское г, П какъ б. С какъ з передъ твердыми гласными а, у, ы, Ç какъ з передъ мягкими гласными: и, е, ю, я, Т какъ д передъ твердыми гласными, Ђ какъ д передъ гласными мягкими, Ť также похоже на д, Х какъ г въ словахъ: Господь господинъ; Ш какъ ж. Такое смягченіе согласныхъ нѣмыхъ въ чувашскомъ языкѣ зависитъ единственно отъ извѣстнаго сочетанія нѣмой съ гласными и съ плавной согласной. Именно каждая изъ 9 согласныхъ нѣмыхъ подвергается всегда вышеозначенному смягченію, если находится:

a) *Между гласными:* лаша (слѣдуетъ читать лажа), пуса (пуза), тутар (тудар), пукан (пуган), упа (уба), кĕçĕр (кĕзĕр), хисеп (хизэп), ђетек (ђедек).

b) *Послѣ* плавной передъ гласной: карта (карда, калта (калда), пăлтăр (пăлдăр), куршанкă (куржангă), улпут (улбут) и т. д. Точно также въ отношеніи *особеннаго смягченія* согласныхъ нѣмыхъ *предложеніе* или краткую фразу можно разсматривать какъ одно слово: ырă çĕр (читается ырă зĕр), çара пуç—(сяра бусь).

Во всѣхъ другихъ случаяхъ *такому особенному смягченію* согласныя нѣмыя не подвергаются.

*Примѣчаніе 1-е.* Въ чувашскомъ языкѣ собственно вовсѣ нѣтъ согласныхъ г, б, з, д- ж, только въ 2 вышесказанныхъ случаяхъ к, с, п, т, ш произносится похоже на нихъ.

*Примѣчаніе 2-е.* Ученикамъ при обученіи грамотѣ по чувашски нѣтъ надобности говорить о *смягченіи* согласныхъ нѣмыхъ. Они безъ всякихъ указаній со стороны учителя непремѣнно будутъ читать такъ какъ слѣдуетъ; но самому учителю слѣдуетъ обратить особенное вниманіе на такое свойство согласныхъ нѣмыхъ въ чувашскомъ языкѣ при прохожденіи русской азбуки. Это весьма важно для усвоенія мальчиками правильнаго произношенія звуковъ русскаго языка. Чувашенина сильно зотрудняетъ употребленіе въ русскомъ языкѣ звуковъ г, б, д, з, ж, которыхъ у него нѣтъ, и к, п, т, с, ш, которыя у него подвергаются *смягченію*, а въ русскомъ языкѣ между тѣмъ нѣтъ. Чувашскихъ мальчиковъ при обученіи русской грамотѣ и русскому языку слѣдуетъ особенно упражнять въ произношеніи г, б, д, з, ж и к, п, т, с, ш, рѣзко показывая отличіе первыхъ отъ послѣднихъ.

§ 12. Слова, взятыя изъ церковно-славянскаго и русскаго языковъ, сохраняютъ свое правописаніе, исключая окончаній.

Для правильности чтенія почувашски русскому преподавателю нужно знать *мѣсто ударенія* въ отдѣльныхъ словахъ въ чувашскомъ языкѣ, которое опредѣляется слѣдующими правилами:

а) Удареніе всегда бываетъ на послѣднемъ слогѣ, когда онъ *долгій*, т. е. когда въ слово входятъ одни *долгія* гласныя (а, у, ы, е, и, ў), или когда все слово состоитъ изъ короткихъ бѣглыхъ слоговъ т. е. когда въ него входятъ звуки ă или ĕ. (§ 6) напримѣръ ҫака́н, ҫава́ш, лаша́, автáн, пăтá, кăмрắк, пăтắ, мăкшắ, хăмắш, вăкắр, кĕмĕ́л, шăрҫắк, шăнкăрҫắ.

б) На предпослѣднемъ слогѣ отъ конца, когда послѣдній короткій, а предпослѣдній долгій; напримѣръ çáрӑк, çу́хрӑм, кӳ́пӑс, кӳ́рӑк, ка́шӑк, ту́тӑр, тӑ́нтӑш, ту́рӑх, су́лӑ, су́лӑн, па́ллӑ.

в) На третьемъ слогѣ отъ конца, когда два послѣднихъ слога короткіе, а третій отъ конца долгій, напримѣръ ка́лӑнар, та́рӑпӑр, вӗ́рентӗнӗр, та́рçӑмӑр, пу́çӑмӑр.

г) На четвертомъ слогѣ отъ конца, когда три послѣднихъ слога короткіе, а четвертый отъ конца долгій, напримѣръ пу́лӑттӑмӑр, ка́лӑттӑмӑр, вӗ́ренеттӗмер, ви́ç-çӗмӗшӗ.





I





ıııı, ıııı, иии, тт, ппп, |||| ш,

ееее, сссс, ээээ, ооо, и, й, ш,

п, тттц, ггц, ы, к, у, р, л, м,

ь, ъ, в, х, е, И, Ш, Т, П, К, У,

Р, Б, Ы, Л, М, Ч, Н, А, В, Ъ, Ь,

Х, Е, 1, 2, 3, 4, 5, 6, 7, 8, 9, 10,

**а, н.**

ан, ана.

**у.**

ун, уна, ану, ну.

**р.**

ур, ура, ара, аран.

**ш.**

шу, шур, шан, аш, шар, шанар.

**ы.**

ыр, ыра, ыран, ыраш, шыра.

**в.**

ав, вар, выр, аван, шыв, шывра.

**л.**

лар, вал, вула, мал, шал, авал.

## м.

мал, мул, мур, мар, ама, аман, мала, мана, улма, арман. ан ман. ан аман. ан ав. ыраш выр. авала шанар. аван мар.

## с.

ус, сур, сар, сыр, сум, сул, сав, сула. ан ас. сунас аван мар. сана салам. сыв мар. ыраш вырас. ура сырас.

## х.

| | | | |
|---|---|---|---|
| ах, | сых, | хал | хум, |
| ух, | сыхла, | хул | хура, |
| хур, | хуш, | хула | хуран, |
| хыр, | шух, | хам | хурама. |

хур шывра. хуран хырас. мул сыхла. хурама аван. хама хуш, хам сыхлам.

## п.

| | | | |
|---|---|---|---|
| хап, | пыр, | хып, | суха, |
| хуп, | пыл, | пусма, | сухан, |
| пух, | пас, | пура, | сахал, |
| пар, | сап, | палан, | пуху, |
| пур, | пус, | парас. | лаша, |
| лап. | шап. | хушпу. | вушар, |

Суха хура. Упа ула. Шапа шывра. Хупах усал. Алса сыпас. Урпа пухас. Ху савса-ху пыр. Ыраша вырас. Васамра палан пур. Сана сухана хушас. Ама аван-хам усал. Шывра сасан пур. Пасара ан пыр. Сахар, ан шавла. Хулара аван хапха пур.

## т.

| | | | |
|---|---|---|---|
| ут, | тура, | хут, | тата, |
| ат, | тар, | тух, | турта, |
| тат, | тып, | вут, | тутар, |
| туп, | ват, | тавар, | малта, |
| пут, | тав, | ту, | автан. |

Утса пыр. Татса сып. Мана тав ту. Тутара тара тыт. Тулта аван, тула тух. Тата шыва ан пут.

Автан аван, сысна усал. Вут хут. Туран шуса ан. Хута тан тыт.

## К.

| | | | |
|---|---|---|---|
| ак, | кала, | вак, | куштан, |
| рак, | капла, | кас, | пукан, |
| кат, | купа, | каска, | така, |
| кул, | капан, | кашта, | такан, |
| такана, | карта, | курка, | кукша. |

Вак касма кус. Рак курма пыр. Кам куракан кала. Ку купана кама нарас? Апла-капла ан кала. Аван такан ула лашара. Шакра карас пур. Аша вакрах касма кала. Кума, тав сана! Лаша акара, така картара. Мана канма пар. Кушак шапа курман.

Ана, анна, ыра, ырра, тырра, ала, алла, палла, калла, малла, аллу, паллу, куллу. Ку хыррра касса пыр. Тырра алласа сут. Асса ан лар. Сасса палла. Аллу хура. Ватта ырра хур. Атта таса ту. Вутта вакла. Аппа, апат ту. Пусса ан сур. Кукка, ануна акала та, тырруна аккала.

## ă.

| | | | |
|---|---|---|---|
| ăш, | пас, пăс, | сăра, | курăк, курак, |
| ăс, | пар, пăр, | сарă, | сăпса, |
| ăста, | тар, тăр, | хăрăк, | ăсан, |
| ăса, | тап, тăп, | кăмрăк, | вăтăр. |

Сана Турă ăс панă. Вăл урапа тума ăста. Вăрмана пас тытнă. Хурантан пăс тухнă. Лупашкара пăр шăннă. Уруна-аллуна тăп тыт. Хăмларан сăра тунă. Сăпса хăрăк хăвăла пыл тунă. Ăсан ула куракран пысăк. Пысăк хурама хăрнă. Манăн аппа курăк татнă. Ķăткă купа туна. Кашķăр сурăх тытма ăста; анă тытма Макар вăтăр тапă (капкăн) хунă. Кукка сăра лартнă, аташ вутă хутнă. Кăкшăма тăмран тунă. Мăкша сăпса сăхнă. Кушак сăсăла тăкнă та, ăна сунтăха хупса хунă, 1) Шалтан тăваттăн, тултан саккăрăн.

## и.

| | | | |
|---|---|---|---|
| ыр, | пыр, | ил, | сир, |
| ир, | пир, | сип, | тир, |
| выр, | пит, | шит, | кил, |
| вир, | тип, | вит, | кин, |
| пин, | тин, | Иван, | шит, |

Ир тăр. Вир выр. Пит хура. Ырăран ан пис, усалтан пис. Хамăр хир тавра утса тухрăм та, пит ывантăм. Иван шăннă, ăна сăкманпа вит. Кин, кил кунта апата. Пасара тухта тир ил. Вăрманта пин хурт пуртăр. Пир ансăр. Кил тăвăр. Им пултар, сип пултăр.

## е.

| | | | |
|---|---|---|---|
| ерне, | епир, | илен, | анне, |
| есир, | пире, | миме, | тете, |
| етем, | серте, | вите, | валем, |
| ерех, | илем, | атте, | ерешмен. |

Есир вир вырнă, епир хир курнă. Етем тенни ан асăхтăр вăл. Ерехе ан сăхлан: усал вăл. Макар тете, еппин пире те вите туса пар. Манăн атте, анне, тата тете пур. Пире мимене килме каланă. Аппана атте илен илсе панă. Сирте серте пур-и? Сире савса серепе патăм, есир ăна калле панă. Тăвată ернере епир вулама пушкарăпăр. Хур шăмми тытан-хур пулман, тет.

## ç.

| | | | |
|---|---|---|---|
| кас, | çыр, | çип, | валеç, |
| каç, | сар, | çерем, | çăка, |
| пус, | çарă, | çерçи, | çăпан, |
| пуç, | су, çу, | çыран, | хăçан, |
| сут, | çăл, | çаран, | çăм, çура, |
| çут, | сула, | çук, | çапла, |
| сап, | çула, | çиме, | çăхан, |
| çап, | çых, | çырла, | хутаç, |
| сыр, | сип, | калаç, | çава. |

Каç пулнă. Çурта çут. Çыру çыр. Çын хыçне ан тăр. Çара çуна лашана çамал. Çула çерси çăмарта тунă. Çаранта çырла пур. Çăка çулçи çемçе. Анне çăкăр унанă, инке çăнăх алланă. Ытлашшине ан калаç. Пире çула çăпата кирлех те мар. Çаранта кăçал кикен кăна, утă сахал. Çула кун вăрăм. 2) Шурă хуланăн хапхи çук. Çерем уçрăм, вир акрăм, ăна вырма çын тытрăм.

## ĕ.

| | | | |
|---|---|---|---|
| ăс, | ĕм, тĕм, | кĕмĕл, | кĕске, |
| ĕç, | тум, тăм, | тек, тĕк, | кĕрпе, |
| есĕ, | тĕме, | елек, ĕлĕк, | кĕрĕк, |
| епĕ, | ĕмĕр, | кĕлĕ, сĕлĕ, | çĕтĕк. |

Шыв ĕç. Епĕ те есĕ те çын. Кивĕ кĕпер. Çайрăк çĕмĕрт. Çĕнĕ кĕпе тăхăнтăм. Пирĕн ĕне вилнĕ, пирĕн сĕт çук ĕнтĕ. Атте сывах мар: унăн тĕсĕ пĕрттĕ çук. Çĕнĕ кĕрĕк çĕлетрĕм, пусса тăхăна пĕлмерĕм; ахалех çĕтĕлсе пĕтрĕ; кунтан тепре çĕлетсен, епĕ тăхăна пĕлĕтĕм. Çула çимĕç хатĕрле. Хĕл хырăмĕ аслă, пĕри те ытлашши пулмĕ. Ĕлĕкхи тертĕм асма килет те, кăмăлăм тулса çитет. Тутартан çирĕм пуслăх тĕк илтĕм. Улăхра çĕмĕрт çирĕм. Кĕрперен пăтă пĕçереççĕ. Ута çулаççĕ, вутта татаççĕ. Тек ан калаç теççĕ ваттисем. Çăкăра касаççĕ, аша тураççĕ. Куçпа кураççĕ, алăпа ĕçлеççĕ. Асла хисепле теççĕ ваттисем. Ырра курсан, ырă пулăн; усала курсан, усал пулăн. Ырă çынпа паллаш, усал çынтан тар. Анне мана мĕскĕн çынна шелleме хушрĕ: „вĕсене ку çĕрте сăвап-сунакан çын, леш çĕрте çăмăллăхра выртĕ!“ терĕ. Епир çырава вĕренетпĕр. пире кĕнеке, хăма, хут, тĕк кирлĕ. Тиркекене тиркĕ тĕпĕ çакланнă. Çынна хĕрхенекене Турă пăрахмĕ. Суккине Турăран ĕмĕтленер, турришĕн Турра тав тăвар. Епĕ хирте вырса икĕ

ѣм турӑм; анне виҫӗ тӗм турӗ;—мӗн пурӗ
иллӗк тӗм турӑмӑр та киле таврӑнӑмӑр. Ҫур-
унне Сӗве шывӗ, аслӑ-ати пек кӗрлет. Епир
ӗрре вӑрман витӗр тухрӑмӑр, вунӑ кашкӑр
уртӑмӑр вуннӑшӗ те сӑп сӑрӑ. 3) Икӗ хӗрри
ырӑлӑх, вӑта ҫӗрӗ пасарлӑх. 4) Пӗр пиҫих-
илӗ, симӗс пуҫлӑ: 5) Пӗр ҫӗлӗкӗн хӗрӗх сап-
ӑк. 6) Атӑл урлӑ хӗлӗх картӑм. 7) Ӑшӗ тим-
ӗр, тулӗ мимӗр. Асли-аслӑ пултӑр; кӗҫӗн-
ӗҫӗн пултар. Хӑна тивмен ҫӗлен-калтала тив-
е хушман.

## Ӳ.

т, ӳт, кул, кӳл, пус, пӳс, тус, тӳс, ус, ӳс, сӳ.
ӳре, тӳрӗ, тӳпе, хӳме, тӳме, кӳр, нӳхреп,
ӳлес, сӳс, ҫӳҫ, ҫут-сӳт, пӳр, тӳшек, сӳре,
ҫӳпӗ, хӳре, пӳрт.

Етемӗн ӳт пур. Хура лашана кӳл. Пирӗн
ӳлӗре шӳкке пур. Анна, пӳс пек шурӑ, цир
ӗртнӗ. Хӗн куракана Турӑ тӳсӗмлӗх патӑр.
пӗ асаттене шыв патӑм та, вӑл мана: „пысак
с“! терӗ. Тӳресене Турӑ лартнӑ. Есир, ҫам-
ӑксем тӳрӗ сӳрӗр: унтан ырри ҫук. Нӳхреп

çула сивĕ, хĕлле ăшă. Вăрăсем çĕрле хӳме сӳтсе кĕнĕ. Кӳршĕ тарçи çӳре пуххи (çӳппи) тасатнă. Çынтан тӳпеми илсессĕн, ху та тӳпеми пар. Çӳçне пит вăрăм ан ӳстер: вăл куçа кĕрет; куç вара пӳрленсе, тăтăнах ыратса сӳрет ӳпренĕн ĕмĕрĕ-икĕ ерне. 8) Лаштаран çӳлĕ, автантан лутра. 9) Пӳрт хыçна хуп тăратнă.

Сӳсрен пуçне пире пит хĕн: кĕпи те кирлĕ, вĕренĕ те кирлĕ, пуши те кирлĕ, çын сӳсрен пуçне шап аптăрамалла.

Хирлӳ çĕрĕк иккен, епĕ ăна укçа парса кăлăх илтĕм. 10) Тулта ту, пӳртре шыв.

## Ҭ.

ҭар, тар, ҭуп, туп, тан, ҭан, ҭун, ҭан, ҭак, ҭуста, тир, ҭир, тĕн, ҭĕн, тĕп, ҭĕпĕ, ҭăлан, ҭатлăх, ҭукун, ҭакак, ҭашкă, ҭĕлхе, ҭаплă, ҭипер, ҭăрăш, ҭаршав, аҭа, ҭăваш, наҭар, ҭăпар, лаҭака, мунҭа, пăнҭă, ҭăпта, каҭҭă, ниҭҭе, ҭеҭек, ҭеҭҭи, çиҭҭĕ, маҭҭа.

Лашăна ҭар. Малалла ҭуп. Ҭиркуре ҭан çапаççĕ. Манăн ҭунăм тин канҭĕ. Турă етеме кĕлтуса ҭунне çылăхран тасатма хушнă. Ҭустана

çĕре ан пăрах; ҫипер тыткала. Ҫăтлăхра çӳреме хĕн: пите-куҫа ҫĕркелет, тумтире те пĕтерет. Ҫукуна ҫукунтанах тунă, ҫӳлмеке тăмран тунă. Ҫакакăн мĕн пур сăвви те пĕрре-айҫах. Пирĕн аппа ҫаршавлăх пир тĕртнĕ. Пире çалтăрсем пăнҫă пек анҫах курăнаççĕ.

Сĕлĕ ани çине ҫăпар, путене çăмарта тунă; ăна пусса вун-икĕ ҫĕпĕ кăларнă, вун-иккĕшĕте ҫăп-ҫăпар.

Каҫаканăн çăмĕ тесен, сăмĕ çук; сĕҫĕ тесен, сĕҫĕ çук.

**Епир** ҫикри ана çинҫе тулă выртăмăр. Епĕ унта çурлана çухатрăм. Атте мана уншăн çилентĕ; çурлана пиҫҫе тупнăта каламасăр тăнă.

Ҫăваш ҫăваш хутне кĕрет, тутар тутар хутне кĕрет. Ҫĕмпĕрте ҫăваш аҫисем вĕренеççĕ. Ҫелхĕ Питĕре çитерет. Лаша пуласси-тихарах палла, çын пуласси-аҫарах палла. Аптăранă кăвакал кутăн ҫăмнă. Курман кăмака çинҫе; куракан Мускавра. Ҫавса çывăхта, çыртмалла мар. Çĕр сум укçу пулиҫҫен, сĕр туса пултăр. Типĕ кашăк çăвара ҫĕрет. 11) Амăшĕ тула тухиҫҫен, ывăлĕ Мускава çитет. 12) Турҫăка

*

вĕçĕнҫе тутли пур. 13) Пĕр сăпкара икĕ аҫа. Каҫҫă пилĕкне хĕрлĕ пиçиххи çыхнă, çине хура сăкман тăхăннă, аллине ҫĕн пушă тытнă.

**Епĕ** пĕҫĕкçĕ ҫухне пĕрре ҫалха çыхма тытăнтăм; çыха пĕлмесĕр, çиппе ҫисти ҫăптаса (муталаса) пĕтертĕм. Анне курҫĕ те: „аҫам, малтан çыхма вĕрен, унтан вара тин тытăн!" терĕ. Илемлĕ ан пул та,—ăслă пул, теççĕ ваттисем. 14) Пĕр пиҫĕкенĕн хĕрĕх кăшăл.

## Лҙ.

Вылҙа, вылҙăх, шалҙçа, калҙҫа, вăлҙҫă, çулҙçă.

**Епир** аҫасемпе лашалла вылҙарăмăр. Иван çынни пулҫĕ, епĕ лаши пултăм, мана пушăпа çапрĕç те, епĕ кăшт макăртăм.

Çынсем вылҙăхĕсене ирте, каçта шăвараççĕ.

**Пиҫҫе** çуркунне пахҫине хăмла шалҙçи лартса тухрĕ. Çăва кĕрсессĕн, çав шалҙçасем тăрăх хăмла аврисем пĕтĕрĕне, пĕтĕрĕне улăхрĕç. Хамлисем алса пурнески пек усăна, усăна тăра пуçларĕç.—Уçăмăн кăлҙҫи те вăрăм та ĕнтĕ; ça-

пахта пуç кăларманхалĕ. Пуç кăларсассăн, пуçахĕ ҭасăх шăркана ларĕҭĕ вара. Хир куçлă, вăрман хăлхалă. Ĕçленни сыншăн пулсассăн, вĕренни хушăн пулĕ. Ĕмĕр ирттересси, хир урлă каçасси мар. Вунă хут виç те, пĕр хут кас.

## Ӈ.

Хуӈăм, мăкăӈ, хуӈакам, хуӈамăшĕ, хуӈаçа, ӈаӈа, пăӈҭă.

**Мăкăӈ** пахҭара ÿсет; ҭеҭекĕ унăн хĕп-хĕрлĕ; тăрри, пукра пуçĕ пек. Мăкăӈăн вăрри тутлă; анҭах ăна çисессĕн çывăрас килет.

Кинĕсем хуӈашшĕпе хуӈамăшне пăхăнса тăраççĕ. Хĕр ҭухне атте-аннеаллинҭе, катҭа тухсассăн, хуӈаçа, хуӈама аллинҭе.

**Пирĕн** патра пĕрре çаварнире хăна килҭĕ. Пиҭҭе ăна: „хуӈам кĕрех пÿрте терĕ“. Пÿрте кĕр сессĕн епĕ те хăнана хуӈăм, тесе, ҭĕнĕ пуçларăм. Аттесем манран кула пуçларĕç: санăн хуӈăму мар вăл, пиҭҭÿ хуӈĕ, есĕ ăна хăта, тесе, каламалла!“ терĕç.

## Ť.

Аҫа, аťа, ťыха, кала, калаť, ҫыраť, кулаť, вулаť, лараť, тăраť, кураť. (перет, тивет, ҫелет, ишет, вилет).

Аťа, аҫа, хут вĕренер. Ватисенм хут веренмен ҫынна суккăр ҫын, теҫҫĕ. Ҫаранта вырт-мара пĕри кала-кала параť, ыттисем итлесе лараҫҫĕ. Манăн щăллăм кĕнеке пит ăста вулаť 16) Курпун вырăс ҫул кăтартаť. 17) Сăмсасăр кăвакал пăр шатараť. 28) Атăл урлă лăпсăр упа каҫаť. 19) Хурăн хулли хумханаť, хура халăх пуҫтарăнаť. 20) Кăмакара лăпсăр упа ташлаť. 21) Пĕҫĕкҫеҫҫĕ пукане пин хут кĕпе тăхăнаť. 22) Хĕлле мăнтарланаť, ҫула наҫарланаť. 23) Хирте ҫара ҫатма лараť. 24) Тумлаť, тумлаť ҫĕре тивмесť. 25) Пĕр вакка хĕрĕх ҫерҫи тăкăнаť. 26) Хĕҫĕ касса пыраť, ҫарĕ хирĕҫле пыраť. Ут ĕҫĕрĕнет, тыттарť сăмах ĕҫĕрĕнет, тыттармаст. Мĕн акнă, ҫавă шăтаť. Куссан, куссан, урапа та такăнаť. Укҫа ҫул кастараť. Кашăка, сыпмассерен, турам кĕмест.

**Пирĕн** çӳрен тыха халĕ те утлантармаст. Утланнă чух çыртма тытăнат: те унăн çурăмĕ кăтăкланат, те, ахаль выльат?

**Кун** кĕскелет, çĕр вăрăмланат; урам варри çара пыльтăк пулат. Вăхăчĕ, вăхĕчĕпе сивĕ çил вĕрет. Хĕвел кăшт пăхат те, каллех пĕлĕт хыçне пытанат. Вăрмансем çаралма тытăнаççĕ. Çапла хăçан пулат?

**Епир** çула çерем çинче вăрлăх çапрăмăр. Сасартăк пирĕн тĕле пĕлĕт хупларĕ илчĕ; çанталăк тĕт-тĕттĕм пулчĕ тăчĕ. Унчен те пулмарĕ, сил-тăвăл пирĕн сарăма, тырри мĕнĕпе, варкăштара пусларĕ. Епир хăрăннипе нимĕн тăва пĕлмĕспĕр. Хăшĕ аллине кĕрĕçе тытнă та, улăмсене тĕрткелесе çӳрет, хăшĕ сенĕк илнĕте те, тырă хырма тытăнат. Пирĕнпе пĕрле тырă çапакан кӳршĕ лашине утланнă та, пирĕн тавра тек кустарса çурет: „тĕнче пĕтет! тĕнче пĕтет! чĕлĕмĕм ăста-ши“? тесе кăшкăрат. Тăвăл чарăнсассăн, пер пĕринчен кулма тытăнчĕç вара. Лаша утланса кăшкарса çӳрекентен питĕрех культĕç.

## Й.

Уй, туй, май, пай, тай, кай, хай, вӑй, туйра, хайла, майла, нумай, майра, суйла, сайра, хӑйра, кайра, ыйхӑ.

**Йа:** йал, йар, йат, йашка, йалан, йапала, йасмӑк, йака, майа, кайа, мӑйа, мӑйан, пуйан, туйа, майак, найан.

**Йу:** йул, йут, йун, йупа, йумах, йурӑ, йус, йусман, йулташ, йумӑҫӑ, йуман, кайу.

**Йы:** йытӑ, йысна, йывар, йыхрав.

**Йе:** йен, йетес, йепле, иеррипе, йенҫӗк, йелехей, тийе, ҫийе, ҫейе, йернӗ, ҫийет.

**Йӳ:** йӳн, йӳҫӗ, йӳллӗ, ҫийӳ.

**Йӗ:** йӗс, йӗтӗн, иӗлтӗр, йӗтем, йӗпе, йӗнер, йӗнӗ, йӗнерҫӗк, ҫийӗр, мейӗр, йӗрӗлҫе.

**Йӑ:** йӑт, йӑх, йӑла, йӑмӑк, йӑлмак, йӑваш, йӑлттӑм, йӑлӑм, кайӑк, кайӑп, пайӑрка, хайӑр, хӑйӑр, мӑйӑр, хӑйра, шӑйӑр, шӑйрӑк.

Йалан ӑспа ҫуресен, йалти ватӑ йатламасӑ. Тутар пит йасмӑк акаӑ. Пирӗн ӗҫ пайан майа

кайрĕ те ха, ыран йепле пулĕ-ши? Йулхава йалан уйав. Пуйанăн кушăкĕ те куйан, тытат, теççĕ. Епир хĕллĕ çул çине уман майак ларт, са тухрăмăр. Йысна йыхрава килҫĕ, те епир ăна сăра ĕçтерсе йатăмăр. Епир кĕркунне йулташсемпе пĕр çĕре пухăнатпăр та, йумăхсем йаратпăр.

Пирĕн кăçал çаранта кайу кайнă ĕçке! Кĕтÿçĕ пăрусене çитерме çавăнта кайма хушас.

Ватта туйа кирлĕ, пĕҫĕкçĕ аҫана сăпка кирлĕ.

Манăн йăмăк майне мăйа çакса йанă. Савăннипе йалт! йалт! сиксе çÿрет.

Хăш çул хирте пит мăйан нумай пулат. Çар иртсессĕн, паттăр нумай. Икĕ кайăка хăвалакан, пĕрне те тытайман, тет. Выртан каска мăкланнă, çÿренĕ ҫул йакланă, тет.

Ватисем каланни вырăнлă, патша каланни йурăхлă.

Ĕç апат ыйтмаст, вăл хăй тăрантат. Улма йывăçĕнҫен улми айакка кайса ÿкмест. Тÿрĕ калакан тăванне йураман, тет. Сăмса айĕнҫи курăнмаст, вăрман урли курăнат. Вăтанман йумăçĕ пулпă тет; ÿркенмен ăста пулнă, тет.

Пысăк сăмах калиҫҫен, пысăк ҫĕлĕ ҫăкăр йăт. Пĕр кун кайас тесессĕн, ҫиҫĕ кунлăх ҫиме хатĕрле, теççĕ. Йыттăн хӳри кукăр, ăна шанма çук. Ӳт ҫĕлхенĕн шăмми çук, ҫăн сăмахăн суйи сук. Хунҫамăшĕ йепле, кинĕ те çапла. Вăйăран вăкăр тухаť. Ҫамрăкла вăренеймесессĕн, ватăлсассăн вĕренме хĕн вара. Ĕçрен ан хăра, вăл хăй сантан хăратăр. Ҫынтан вăтанмасассăн, Турăран хăрамасассăн, пархатар кураймăн, теççĕ ваттисем. Хурама пĕрни хăй йенеллех пĕрĕнет. 27) Йунĕ пурта, ҫунĕ çук. 28) Хĕрĕх йывăçăн тăрри пĕр. 29) Сакă айĕнҫе хуртлă кĕççе выртаť. 30) Хура кĕççе варринҫе пуйан çын хĕрĕ тăрăť. 31) Йăлтăр, йăлтăр тăваť, пĕтĕм хире çулса тăкаť. 32) Ҫиҫҫĕн кайса, вунтăваттăн килеççĕ. 33) Пĕр пĕркенҫĕк айĕнҫе тăватă хĕр йĕрет.

34) Ҫеçен хир варринҫе ватă йуман, ватă йуманăн вун-икĕ турат; вуникĕ туратра тăваташар йăва; тăватă йăвара çитшер çăмарта.

35) Пĕҫĕкçеççĕ кинĕм пур килен-кайан ҫуп тăваť. 36) Ҫупса, ҫупса пынă ҫух, кĕмĕл сĕррĕм тухрĕ, ӳкрĕ; ăна уйăх курҫĕ, хĕвел илҫĕ.

37) Тимӗр йыттӑн ҫӳс хӳре. 38) Тӗкме витӗр йур ҫӑвать.

**Пирӗн** йунах тыха хӗлле цит натҙартҙӗ; суркунне Атӑл йӑлӑмне кайса йатӑмӑрта; йӑптӑхне тӑкрӗ, ҫап сутӑ, йап-йака, илемлӗ пулса кайрӗ.

**Пирӗн** асатте пӗрре тутара; „ҫиме лар" тесе каланӑ тет. Тутарӗ пӗр тепмесӗр, сӗтел хушшине кӗрсе лартҙӗ, тет те, мӗн пур йашкана хӑйех ҫисе йатҙӗ тет.

**Ҙийе** вӑрманта та, пахҙара та ӳсет; ҫырли унӑн, салма пек; тӗсӗ хӗрлӗ, тути кӑвасу (йӳҫенкӗ) тути калать. Ҙийене ҫийеҫҫӗ.

**Епӗ** пӗҙӗкҫӗ ҙухне, сӗтел хушиҙе йаланах урана сулласа лараттӑм. Анне мана: „йӳлӗ пул, ҙипер лар! уруна ан сулла! амӑшӗ вилет." теҫҙӗ.

**Пирӗн** йалта пӗр сын пасартан сӳсмен илсе таврӑнна, тет. Ун патне кӳрши пынӑ тет те; „сӳсмене хаклӑ патӑн-и? тесе ыйтнӑ тет. „Хакне-мӗнне пӗлмерӗм, аллӑ пус патӑм", тесе каларӗ тет лешӗ.

**Епĕ** пĕрре хĕлле йĕлтĕр илтĕм; пăшала çакрăм, йытта йертрĕм те, вăрмана кайăка кайрăм. Телей пулмарĕ: кайăк тытаймарăм; ахаљ ашса çӳренни анђах пулђĕ. Кайран хамах: апла ашса çӳриђђен, килте пĕр мăшăр çăпата тăвас мен, тесе, ӳкĕнтĕм, вара.

## Пирĕн çемйе.

Епир мĕн пурĕ тăваттăн: атте, анне, епĕ, тата йăмăк. Атте хирте суха сухалаĭ,—тырă акаĭ; хĕле кĕрсессĕн, вутă турттараĭ.—Шав тулта асапланса çӳрет. Анне пирĕн çийе-пуçа тирпейлет: çăваĭ, çĕлет, йашка çăкăр пĕçерет. Вĕсем ĕçлесе çӳренĕ ђух, епĕ пĕђĕкçĕ йăмăка сăпкара сиктерсе ларатăп.

Атте, анне сыв ђухне, пырта тутă, çи-пуçта питĕ.

„Аçăна, анне хисепле, хăнах аван пулĕ“ тенĕ Турă.

39) Икĕ аманăн пиллĕкшер ађа, хăйсем пурте пĕр йатлă.

## Йăлăнтармăш.

Пирĕн атте пасара каймассерен, пире валли кулаç илсе таврăнатчĕ. Пĕрре çапла, пасартан таврăнсассăн, атте пурсăмăрата пĕрер татăк кулаç валеççе пачĕ. Мана ыттисенчен сахал панă пек пулчĕ, епĕ çавăнпа кулаçа илмесĕр, йăлăнтарса, пĕр кĕтессе кайса лартăм.

Атте ман йенелле çаврăнса пăхрĕ те: „мĕшĕн илместĕн тата кулаçна?“ терĕ. Епĕ пĕр чĕнмесĕр ларатăп. Атте мана панă кулаç татăкне илчĕ те, йăмăксене валеçрĕ пачĕ. „Мейĕр, çийĕр Иван татăкне; вăл кĕтĕсре йăлăнтарса лартăр-ха!“ терĕ. Йăмăксем манăн татăка çирĕç йачĕç. Кайран ытаçчĕ, кулаç çук. Нимĕнсĕрех тăрса йултăм вара.

Çын аллăнчи кулаç пысăккăн курăнаť, теççĕ ваттисем. Паракантан ил, çапакантан тар.

**Хĕветĕре** куккăшĕ, сухаран таврăнсассăн, ватă турă лашине кĕтĕве йама утлантарса йанă. „Асту, Хĕветĕр, хытă ан хăвала лашана, вăл пайан сухара ывăннă!“ тенĕ. Хĕветĕр йалтан тухсассăнах, лашине хытă хăвала пуçланă.

Лаши, ывăннăскер, кăшт лĕрт! лĕрт! тукаланă та, тăпах ҫарăннă. Хĕветĕр вара лаши ҫинҫен аннă та, ҫуранах ҫавăтса кайнă кĕтĕве.

Ута пăхакан ҫуран ҫӳремен, ватта пăхакана выҫҫăн ҫӳремен, теҫҫĕ ваттисем.

40) Тăваттăн тĕвеҫҫĕ, пĕри овăсат.

41) Уелан кайăк шыв ĕҫет, иккĕ тererлĕк вăйă ĕыҫат.

**Пĕр** выҫă, ырхан шăши кĕлет урайне шăтарса, кĕлете кĕнĕ тет. Кĕлĕтре ҫĕр-хута тырă ҫирĕ тет. Хырăмĕ, порапан пек, пулҫĕ, тет. Киле таврăнас, тесе хайхи шăтăкĕ патне пырҫĕ, тет. Шăтăкран пуҫĕ тухаҫ тет, хырăмĕ тухмасҫ тет. Асапланкăларĕ тет те, нийепле тухаймарĕ тет. Ирхĕне кĕлете кушак кĕҫĕ тет те, тытса ҫирĕ тет, ҫав шăшийе.

Пырна пула выҫҫăн вилĕн, теҫҫĕ.

42) Пĕр шăшийĕн икĕ хӳре.

**Манăн** Михала йатлă йулташ вĕр ҫĕнĕ пуша йаврĕ. Ҫав пушипе куракана пĕрне ҫапаҫҫĕ. Пĕрре ҫапла ҫисе ларакан йăмăкĕ патне пыҫĕ те пушшипе шарт! тӳтарҫĕ пуҫĕнҫен. Йăмăкĕ йĕре пуҫларĕ. Амăшĕ илтрĕ те, ҫупса кĕҫĕ.

Михаларан пуҫҫине туртса илҫӗ тӗ, хӑйне ҫантара пуҫларӗ „ан тив ҫынна! ан тив ҫынна! ак сана! ак сана!“ терӗ.

Ҫапа пӗлмен пуҫӑ хӑйне ҫавӑнса тивнӗ тет.

**Митук** амӑшӗ, ҫинӗ ҫухне, йашка ҫине тӑвар йанӑ. Тӑвар йарсассӑн, йашкине тутӑ кӗнӗ. Амӑшӗ таҫта тухса кайнӑ. Митук ҫара тӑвар ҫийе пуҫланӑ. Кайран хӑсса кӑларнӑ.

**Пӗр** йыттӑн ҫӑварӗнҫе ашлӑ шӑмӑ пулнӑ, тет. Вӑл йытӑ шыв урлӑ каҫма тӑрӑх каҫнӑ. Шывра хӑй мӗлкине курах кайнӑ. Тепӗр йытӑ та ашлӑ шӑмӑ йатса каҫат пулӗ, тесе шухӑшланӑ тет ку. Ҫав мӗлки хыҫҫӑн шыва сикӗпанӑ тет. Хӑй ҫӑвариниҫи шӑммине ӗҫерсе шыва йанӑ, лешӗ ҫук пулнӑ. Нимӗнсӗрех ишсе тухнӑ тет вара вӑл йытӑ.

Нумайа хапсансӑссӑн, нимӗнсӗр тӑрса йулӑн теҫҫӗ ваттисем.

43) Акар йытӑм ашса пырат, айакки витӗр хӗвел пахат.

44) Хура йытти ҫакӑнса тӑрат; хӗрлӗ йытты ӑнах вӗрет.

**Çуркунне** хĕртсе хĕвел пăхаť. Тулта ăшă. Çил пĕртте вĕрмест. Çӳлте тăрисем йурлаççĕ. Йур ирĕле-ирĕле кăшт анђах йулнă. Урам хушшинђи çырмасем ђăл!-ђăл!-ђăл! йухса выртаççĕ. Епир ађасемпе хăма татăкĕсенђен кимĕ пеккисем турăмăр та; пĕр хытăрах йухакан çырмана йатăмăр. Хамăр: камăн иртет! камăн иртет! тесе кăшкарашкаласа, кимĕсем хыççăн ђупса пыратпăр. Çапла ђупса пынă çеммĕн, епĕ умра мĕн пурне курман та: шыв лупашкине лап! кĕрсе ӳкрĕм. Кĕпем-йĕмĕм йĕп-йĕпе! Сиве шăнтăм хам! Кĕпе-йĕм улăштарас, тесе, киле ђупса кайрăм.—„Аçта йĕпĕтрĕн?—йепле йĕпентĕн?!" тийе пуçларĕ мана анне. Епĕ вара тӳррипе каласа патăм. „Çук сана кĕпе! Лар кăмака çине улăхса! Ӳлĕм умса-хыçна ђипер пăхса çӳре!" терĕ.

Шывăн турађĕ çук, теççĕ.

**Икĕ** çын пĕрлешсе ĕçе кайнă, тет. Вĕсем ĕçлесе виç тенкĕ укçа туппă тет. Çав укçана уйăраймасăр, тавлашса, виç кун ирттеренĕ, тет. Ей айвансем! апла тавлашса ирттериђђе, тата виç кун ĕçлес мĕн! Вара миçешер тенкĕ тивĕђĕ вĕсене?

Ахалъ тăриҫҫен кĕрĕн аркине йăвала, теҫҫĕ.
45) Лутра вырăс йал касаҭ.

**Хуҥамăшĕпе** кинĕ хире пăрҫа татма кайнă. Пăрҫа таткаласассăн, иккĕште ҫиме йăран херрине тухса ларнă. Хуҥамăшĕйĕн, ватăскерĕн, пăрҫа ҫимелĕх шăлĕ те пулман. Пăрҫине ҫăваринҫе ҫĕлхипе тек йăваласа ларнă, пĕртте ҫийеймен. Кинĕ хăй пăрҫине ҫисе пĕтерсессĕн, хуҥамăшĕ йенелле ҫаврăнса пăхрĕ тет. „Вара есĕ, апай (ани, пăйанам) йепле халĕ те ҫисе йараймастăн? Епĕ хамăнне тахҫанах ҫисе йатăм! тесе каларĕ тет.

Ватă ваталаҭ, ҫамрăк ӳсет.
46) Иккĕ кашта шурă ҫăххăм пур, пурте шап шурă.
47) Шăлсăр карҫăк шăмă кышлаҭ.

**Пĕр** арăмăн пит турăх ҫийесси килнĕ, тет. Анҫах унăн ĕни хĕсĕр тет: пĕртте пурăламасҭ тет. Пĕрре ку арăм ĕни картара выртнине курҫĕ тет, курка илсе ҫасрах ҫупрĕ тет кӳршĕ арăмĕ патне: „акам! ĕне пăрулама выртнă, кĕвелĕк парса йарҫҫĕ!“ тесе каларĕ тет.—„Вара есĕ, акам, ăслă-и? ухмах-и? те пăрулама вырт-

нă-ха вăл, те ахаљ выртнă? тесе каларĕ тет кӳршĕ арăмă.—„Ей!...епĕ ăстăваймарăм та!“ тесе тухса кайрĕ тет хай арăм.

Туман ťыханăн пилĕкне ан хуç, теççĕ. Сенĕкĕ малта, ырçи варринђе, шăпăрĕ хыçĕнђе.

**Ђыкан** ватă лашине, çамрăк лаша вырăнне, сутасшăн пулнă тет. Лашине çитерсе пит мăнтăртнă тет. Пĕрре илсе тухаť пасара, сутаймасť. Тепре те илсе тухаť—татах сутаймасť. Пасарта çынсем, шăлне пăхаканĕ пĕри: „ватă та ватă“ тесе калаççĕ тет. Хай ђыкан киле таврăнаť те, лаши шăлне путпилкăпа (йĕкевпе) хăйраса, çамрăк лашаннĕ пекех, тăваť. Лаши, хăйранă шăлĕсемеп çийеймесĕр, пасар çитеђђен ђисти нађарланаť. Ђыкан, сатурланса, урăх хула пасарне илсе кайаť лашине. Кунта та сутаймасť. Пăхаканĕ пĕри: „пит нађар! кунтан лаша пулас çук!“ тесе, пĕр йенелле пăрăна, пăрăна кайаççĕ, тет. Тата тепĕр пасар çитеђђен, хай ђыкан лаши, çийеймесĕр, нађарлансах вилђĕ тет вара.

Етем курмасассăн та, Тур кураť, теççĕ ваттисем.

**Пĕр** аслă кӳлте ҫăвашсем, вырăссем, тата мăкшăсем пулă сĕрсе ҫӳреҫҫĕ, тет. Ҫăвашĕсем ҫĕрсе кăлармассерен, „ҫук! та ҫук!“ тесе калаҫҫĕ тет. Мăкшăсем сĕрсе кăлармассерен: „араҫ! та араҫ!“ тесе калаҫҫĕ тет.—„Ку йепле-ҫăвашпа мăкшă телейлĕ? Шӳкке те карас, шӳкке те карас тытаҫҫĕ?“ тесе тĕлĕнеҫҫĕ тет вырăссем. „Епир те вĕсем пекех сĕретпĕр ĕҫке, мĕшĕн пире пĕр пулăта кĕмес-ши?!“ тесе тарăха, тарăха ҫĕреҫҫĕ хайсем.

48) Вырăс, тутар, ҫăваш-пĕр сăмах.

49) Ҫунатлă-вĕсеймест, ури ҫук-хуса ҫитмелле мар.

50) Ҫăрттан ҫăмах пырай, пăрĕ шăнах пырай.

## Суйеҫҫĕ.

Пĕр аҫа хирте сурăхсем кĕтсе ҫӳрет тет. Кашкăр курам пек туса, ҫынсене: „килĕр кунта! кашкăр пур, кашкă-ă-ăр! тесе, кăшкăра пуҫларĕ тет. Ҫыннсем ҫупса пыҫĕҫ тет ун патне. Кашкăр та ҫук, мĕнте ҫук тет; ахаљ улталанни анҫах пулнă, тет. Ку аҫа ҫапла пĕре те улталарĕ тет, иккĕ те улталарĕ тет. Виҫ-

çемĕшĕнҫе хайхин патне кашкăр ҫăнахта ҫупса пыҫĕ тет. Аҫа çынсене ҫăнтан кăшкăра, пуçларĕ тет. Каллех суйеçтерет пулĕ, тесе, çынсем пĕри пыракан çук тет, аҫа патне. Кашкăр никам çукне курса, аҫанăн пĕтĕм кĕтӳне пӳвса тухрĕ, тет.

Пĕре те улталăн, иккĕ те улталăн, виççĕмĕшĕнҫе-макăрăн, теççĕ ваттисем.

51) Çеçен хирте туман урапа кусаҭ.

## Хураçка.

Пирĕн Хураçка йатлă пысăк йытă пурҫҫĕ. Епе ăна хĕлле пĕҫĕкçĕ çунана кӳлтĕм; хам çуна çине лартăм та: „ну, аҭа, Хураçка, урамалла! тесе пушăпа çат! тутартăм Хураçкана. Хураçка урама тухас вырăнне, çуни-мĕнĕпе кĕлет айне сиккипе ҫупса кĕрсе кайрĕ. Манăн пуçа кĕлет пĕрени çумне шан! тутарса хăварҫĕ.

## Кăлăх тавлашакансем.

Икĕ çын урамра пĕр кĕнеке тупнă тет. Иккĕште илесшĕн тет ку кĕнекене. Пĕри калаҭ тет: „епĕ илем!“ тепри те калаҭ: „епĕ илем!“

тесе. Çапла тек тавлашса тăраççĕ тет урам варринче. Вĕсем патĕнчен тепĕр çын иртсе пырать тет. „Мĕн çинчен тавлашатăр есир капла?“ тесе ыйтрĕ тет. — „Акă, кĕнеке тупрăмăр та, иксĕмĕр те илесшĕн ăна“ тесе каларĕç кусем. — „Вула пĕлетĕр-и?“ тесе ыйтрĕ тет лешĕ. — „Çук, пĕлместĕпĕр!“ тесе калареç тет тупакансем. — „Апла пулсассăн, сире кĕнеке мĕн тума кирлĕ? Есир ăна вула пĕлекене парăр! Есир икĕ кукша, çук çӳçĕсене турасшăн, турашăн тавлашнă пек, тавлашатăр!“ тесе хăварчă тет лешĕ.

## Сармантейĕн

сарă чăххи сарă çăмарта тунă; ăна шăши пынă та, хӳрипе çапса сĕмĕрнĕ. Сармантей те йĕрет, сарă чăххи те какалать. Хапхи калать: „Манăн та уçăлса хупăнас“, тет. Анать пĕр вăкăр шыва куллен кун: „хапха, есĕ мĕшĕн уçăлса хупăнатăн?“ тет. „Уçăлса хупăнмасăр“, тет: „Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă, ăна шăши пынă та хӳрипе сапса çĕмĕрнĕ: Сармантей те йĕрĕт, сарă чăххи

те какалаť!“ Вăкăрĕ калаť: „манăн та мĕкĕрсе анас“ тет. Мĕкĕрсе анаť шыв хĕррĕне. Шыв калаť: „мĕшĕн, вăкăр, мĕкĕретĕн?“ „Мĕкĕрмесĕр, тет: Сармантейĕн сарă ђăххи сарă сăмарта тунă тет; ăна шăши пынă та, хўрипе çапса çĕмĕрнĕ, тет: Сармантей те йĕрет, тет, сарă ђăхxи те какалаť, тет, хапхи те уçăлса хупăнаť“. Шыв калаť: „Манăн та хумханас“, тет. Пĕр çĕнĕ çын шыв ăсма анаť: „шыв, мĕшĕн хумханатăн?“ тет. „Хумханмасăр, тет: Сармантейĕн сарă ђăххи сарă сăмарта тунă, тет; ăна шăши пынă та хўрипе çапса çĕмĕрнĕ, тет: Сармантей те йĕрет сарă ђаххи те какалаť, тет, хапхи те уçăлса хупăнаť, тет, вăкăрĕ те мĕкĕрет“. Çĕнĕ çын калаť: „манăн та пĕр витрене çăпса çĕмĕрес“, тет. Çапса çĕмĕрет витрине. Киле тавăрăнаť. Хуђамăшĕ ђуста çăраť: „кин, мĕшĕн хăрах витрепе анђах ăсса килтĕн“, тет. Ăсса килмесĕр, тет: Сармантейĕн сарă ђăххи сарă çăмарта тунă, тет; ăна шăши пынă та, хўрипе çапса çĕмĕрнĕ, тет; Сармантей те йĕрет, тет, сарă ђĕххи те какалаť, тет, хапхи те уçăлса хупăнаť тет, вăкăрĕ

те мĕкĕрет, тет, шыв та хумханаť“. Хуђамăшĕ калаť: „манăн та ђустана кăларса ывăтас“, тет. Кăларса ывăтаť. Ывăлĕ кайнă вăрмана. Тавăрăнаť вăрмантан. Ывăлĕ калаť: „мĕшĕн, йашка пĕçермерĕр?“ тет. Амăшĕ калаť: „Сармантейĕн сарă ђăххи сарă çăмарта тунă, тет; ăна шăши пынă та хўрипе çăпса çĕмĕрнĕ, тет: Сармантей те йерет, тет, сарă ђăхxи те какалаť, тет, хапхи те уçăлса хупăнаť, тет, вăкăрĕ те мĕкĕрсе анаť, тет, шыв та хумханаť, тет, çĕнĕ çын та хăрах витрине çапса çĕмĕрнĕ тет, хуђамăшĕ те ђустĕне кăларса ывăтнă. Ывăлĕ калаť: „Манăн та хăрах атта кăларса ывăтас“, тет. Кăларса ывăтаť. Пĕтрĕ. Уксах çынсем çўреççĕ вĕт? çавсем, вĕт, вĕсем.

## Тилĕпе тăрна.

Тилĕ тăрнана хăй патне хăнана йыхăрса кайнă тет. Тăрнана силлеме пăтă пĕçернĕ тет. Пăттине ăшăк тиркĕ çине сĕркелесе анђах лартнă тет тăрна умне. „Çийех, тăрна тус! çийех“! тесе сĕнет тет хăй. Тăрна вăрăм сăмсипе пăтта тăк-так! тăк-так! тутаркаларĕ

тет. Ҫӑварне пӗртте кӳртеймерӗ тет. Тилӗ хӑнана валли антӑрнӑ йашкине хайех ҫуласа пӗтерҫӗ тет.

Тепӗр кунне тӑрна йыхӑрса кайрӗ тет тилле хӑй патне хӑнана. Пӗҫерҫӗ тет тӑрна йашка. Вӑрӑм мӑйлӑ кӑкшӑм ҫине антарса лартрӗ тет тилӗ умне. „Ҫийех, тилӗ тус, ҫийех“! тесе сӗнет, тет тӑрни тилле. Тилӗ кӑкшӑм йӑратавра кускаласа ҫӳрерӗ, ҫӳрерӗ, тет; ҫапахта кӑкшӑм ӑшне пуҫне нийепле кӳртеймерӗ, тет. тутанса та пулмарӗ тет тӑрна йашкине. Тӑрна хӑй вӑрӑм мӑйне кӑкшӑм ӑшне ҫиксе йаҫӗ, тет те, йашкине хӑйех ҫисе пӗтерҫӗ тет.

„Йатлаҫу па ан кай ӗнтӗ, тилӗ тус“! тесе ӑсатса йаҫӗ тет тӑрна тилле.

Ҫӑкӑр-тӑвар хире-хирӗҫ теҫҫӗ.

## Ҫерҫи.

Епир аҫасемпе ҫерҫи тытрӑмӑр. Унӑн уринҫен вӑрӑм ҫип ҫыхса йатӑмӑр. Ана ҫапла пай тахҫен вӗҫтерсе ҫӳрерӗмӗр. Вӗҫтерсе ҫӳресессӗн, пирӗн ҫерҫи ҫатан ҫине ларҫӗ. Епир ӑна тата вӗҫтересшӗн, ҫипне турткала пуҫларӑмӑр. Ҫерҫи икӗ ҫатан хутлӑхне хӗсӗнҫӗ тӑҫӗ. Ӑна

кӑларасшӑн, пӗри те, тепри те алӑсене ҫикетпӗр ҫатан хутлӑхне. Ҫерҫи хӑраннипе шаларан шала кайаҭ. Хӑй ҫӑварне карнӑ та, хӑш! хӑш! туса сывлаҭ. Ҫапах асаџланкаласа кӑлартӑтӑмр ҫатан хутлӑхӗнҫен. Таса ҫерем ҫине йатӑмӑр. Ҫерҫи пирӗн вӗҫме мар, вырӑнтанта сикмест. Кӑшт ларсассӑн, ҫунаҫӗсене сарҫӗ пӑрахрӗ, пуҫне ҫикрӗ, урисемпе пӗр-ик-виҫ тапхӑр тӑлт! тӑлт! тутарҫӗ те, тӑпах пулҫӗ. Епир ӑна ахалҫ тӑваҭ пулӗ, тесе шухӑшларӑмӑр. Пурмарта ҫерҫи йӑри тавра куклене, куклене лартӑмӑр, ӑна ӑшӑтасшӑн, ӑшшӑн вӗре пуҫларӑмӑр. Ҫерҫи сикмест те, тумасҭ те.

Ҫапла вӗркелесе тӑнӑ ҫухне, пирӗн хыҫа кӳршӗ карҫӗкӗ килнӗ тӑнӑ.—„Мӗн тӑватӑр есир кунта“? терӗ пире. Епир шартах сикрӗмӗр. Нихӑшӗ нимӗн ҫӗне пӗлместӗпӗр. Карҫӑк пирӗн хушшӑмӑра пӑхрӗ те, хай ҫерҫийе курҫӗ. „Кам вӗлерҫӗ куна“? тесе ыйтрӗ. Епир тата питрех хӑрарӑмӑр; пӗр ҫӗнмесӗр тӑратпӑр. Карҫӑк ҫерҫийе илҫӗ те: „ӗ-ӗ! пархатарсӑрсем, ҫылӑхсӑрсем! ӑна вӗлернӗшӗн сире мӑй таран ҫылӑх пулӗ ӗнтӗ“! терӗ. Епир хӑран-

...БИБЛИОТЕКА...

нипе, вӑтаннипе, пӗррӗн, пӗррӗн саланса пӗтрӗмӗр килелле. Манӑн ҫав ҫӗрҫишӗн пӗр-икӗ кун ӑш выртмарӗ; кӑлӑх вӗлернешӗн вӑл мана пит шел туйӗнҭӗ.

## Иккӗ йӗке хӳре (криса).

Икӗ йӗке хӳре пӗр ҫӑмарта тупнӑ тет. Ӑна пӗрле уйӑрса ҫийесшӗн пулнӑ тет. Анҭах вӗсен тупнӑ ҫӑмартине илмешкӗн хура курак вӗҫсе килет-тет. Мӗн тӑвас? Ӑҫта ҭикес ҫӑмартана? Йепле ӑна хура куракран пытарас? Ҭасрах йӑтса кӗресҭӗ шӑтӑка—алӑсем кӗске, тытма ҫитеймеҫҫӗ. Кустарса кӗресҭӗ—ҫӗмӗрӗлес рен хӑрушӑ. Хайхисем ак ҫапла тунӑ тет вара: пӗри ҭасрах ҫӑмартана тӑватӑ урипе ыталаса месерле выртрӗ тет; тепри ӑна хӳрӗнҭен сӗтӗре пуҫларӗ тет. Ҫунапа сӗтӗрсе кайнӑ пек, сӗтӗрсе кайрӗҫ тет ҫӑмартана тӗп сакӑ-айне.

## Уҫӑлма тухнӑ шӑши ҫури.

Пӗр шӑши сури шӑтӑкӗнҭен карташне уҫӑлма тухнӑ, тет. Ҫӳресессӗн, ҫӳресессӗн, амӑшӗ

патне тавранҫӗ тет те: „ах Турӑ, анне, епӗ икӗ кӑйӑк куртӑм ӗҫке?... пӗри пит аван, тепри тискер терипе тискер ӗнтӗ!“ тесе каларӗ тет. амӑшне.

—„Мӗнле кайӑксем вӗсем апла? тесе ыйтрӗ тет амӑшӗ“.

—„Тискерри карташӗнҫе ак ҫапла уткаласа ҫӳрет ӗҫке саҫҫим!... хура уралӑ, хӗрлӗ кикрӗклӗ, куҫӗсем сиксе тухас пек! Сӑмси ҫаклӑ пек кукӑр! Умӗнҫен иртсе кайнӑ ҫухне, хӑрах урине ҫӳлелле ҫӗклесе, пысӑк ҫӑварне сарса пӑрахрӗ те, вӑл акӑрса йаҫӗ ӗҫке!... Епӗ хӑраннипе ниҫта кайса кӗре пӗлмерӗм“.

—„Вара, аҫам, автан, вӗт, вӑл! Унтан мӗн не апла тӗрлӗ хӑрасси пур?! Унӑн пирӗн тӗлтен усаллӑхӗ-мӗнӗ ҫук. Тата тепри мӗнлеҫӗ“?

—Тепри хӗвел ӑшшӗнҫе ӑшӑнса выртаҫҫӗ: шурӑ мӑйлӑ, йап-йака сӑрӑ уралӑ. Шурӑ ӑмӑрне ҫулакаласа выртаҫ; хӳрине хӑй кӑшт вӗлл! вӗлл! сиктеркелет. Ман ҫинҫен хӑй куҫне пӗртте илмест“!...

—„Ей, айван, айван!... Вара, аҫам, ку кушак аҫи вӗт!“ тесе каларӗ тет амӑшӗ сурине.

Пăхма-хĕрсем хăвел пек, ăшĕ-ҫикки хура йун, теҫҫĕ ваттисем.

## Ырхан ķашкăр па йытă.

Пĕр ырхан кашкăр, йал таврашĕнҫе ҫӳренĕ ҫухне, самăр йытта курах кайрĕ тет.

—„Йытă тус! есир апат ăҫтан илетĕр ҫак?“ тесе ыйтрĕ тет унтан.

—„Ҫынсем параҫҫĕ пире“, тесе каларĕ тет йытă.

—„Еппин есир ҫынсене пит йывăр ĕҫ ĕҫлетĕр пулĕ?“ тесе ыйтрĕ тет, кашкăр.

—„Ҫук, пирĕн ĕҫ йывăрахмар. Ҫĕрле хуҫа килне сыхлатпăр ҫав,—мĕн пур ĕҫ те, ҫав анҫах пирĕн“.

—„Ҫавăншăнах сире ҫав тери апатлантараҫ ҫĕ-и? Вара апла пулсассăн, сирĕн ĕҫе ĕҫлеме епĕ те халех пырăтăм. Пире апат тупма ахаљ пит хĕн вĕт“!...

—„Мĕн-кĕтсе тăрасси пур тата? аҭа, хуҫа сана та, пирĕн пекех апатлантарĕ“! тесе ҫĕнҫĕ тет йытă кашкăра.

Кашкăр хавасланса, йытăпа пĕрле йерсе

кайрĕ тет йытă йыши патне. Хапхаран кĕнĕ ҫухне, йыттăн мăйĕ ҫинҫи ҫăмĕ ҫаралнине курах кайрĕ тет ку кашкăр.—„Ку мĕн санăн, йытă тус“? тесе ыйтрĕ тет.

—„Ахаљ вăл“! тесе каларĕ тет йытти.

—„Йепле ахаљ? тесе ыйтрĕ тет татах кашкăр.

—„Ахаљ ҫăв. Сăнҫăрпа пулнă вăл. Епĕ кун каҫиҫҫен сăнҫăрта кăкаранса тăратăп вĕт. Мăй ҫăмне сăнҫăр кăшт хырнă ҫав!“ тесе каласа паҫĕ, тет йытă.

„А-а-х-у-у!... Апла пулсассăн, сыв пулах, йытă тус! сирĕн пек самăр ан пулам та, анҫах ирĕкре пулам!“ тесе каларĕ тет те, тара паҫĕ тет кашкăр вăрмана.

Тутла йуратсассăн, йўҫҫĕне те йурат, теҫҫĕ. Ĕҫлемесĕр, хырăм тăранмасť, теҫҫĕ. Кашкăра мĕн тĕрлĕ тутлă ҫитерсенте, вăл ҫапах вăрманаллах пăхăť, теҫҫĕ вырăссем.

## Вăрăсем.

Ĕлĕк пирĕн йалта пĕр ҫыннăн пит аван хура лаша пулнă тет. Вăл хура лашана вăрăсем пит сăхланнă тет. Пĕр каҫра ăна вăрлама

килнĕ тет. Вăл каç хура лаша йыши патне упа ташлаттаракан кĕрсе выртнă тет. Упа йыши пÿрте выртнă тет; упине хура лаша витине хупнă тет; хура лашана карташне кăларса йанă тет. Вăрăсем çĕрле хура лаша витĕне кĕнĕ тет те, хыпаласа шыра пуçланă тет. Упа, сиксе тăрса, йанă тытнă тет вăрра. Вăрри, сехри хăпнипе, мĕн пур вăйĕпе кăшкăрса йанă, тет. Тухса тынтă тет вара вăрра. Унтан тĕр мене хуптарнă тет.

Вăрă вăрласа пуйаймĕ, пуçне çийĕ,—çавă пулĕ. Алли тăвин, пуçĕ çĕклĕ теççĕ ваттисем.

## Епĕ ÿкĕнни.

Манăн атте куçĕ-пуçĕ курнă ђухне, тулти ĕçрен пушансассăн, йалан савăт-сапа тĕплетђĕ, кăшăл çапатђĕ. Вăл ĕçленĕ ђухне, пире валли выљама хăма татăкĕсем темĕн ђухлĕ пулатђĕ.

Пĕрре епир кÿршĕ ађи, Кĕркурипе, хăма татăкĕсемпе урай варринђе выљакаласа ларатпăр. Кĕркури, тепле, ăнсăртран, манăн пÿрт пеккине ишрĕ пăрахрĕ. Манăн Керкурийе çилĕ килђĕ. Хăма татăкĕпе пуçĕнђен пат! тутартăм.

Кӗркури йӗҫӗ йаҫӗ. Анне илтрӗ те: „мӗшӗн тиврӗн? хӑна тивсессӗн аван пулӗ-и? Авӑ ӗнтӗ вӑл киле кайаҭ; кампа выҫӑн, вӑл кайсассӑн?“ терӗ. Кӗркури ҫӑнахта ҫӗлӗкне, алсисене тӑхӑнҫӗ те, алӑк патнелле утса кайрӗ. Епӗ хӑраннипе, вӑтаннипе нимӗн ҫӗнейместӗп. Тӳсеймесӗр, йӗтӗм йатӑм. Мӗшӗн кӑна ҫанрӑм-ши? тесе ӳкӗнетӗп хам ӑшӑмра. (Унҫух мана Кӗркури пит шел туйӗнҫӗ). Кӗркури епӗ йӗннине илтрӗ те: „ан йӗр, Алҫуш, ан йӗр“! аҭа, татах паҫӑрхин пек, выҫар!“ терӗ. Мана тата питӗрех те намӑс пулҫӗ. Ҫарӑнаймасӑр, тата хытӑ йӗре пуҫларӑм. Кӗркури аҫашлакаласассӑн, йӑпаткаласассӑн, тин аран ҫарӑнтӑм.

Ҫавса ҫывӑх та, ҫыртмалла мар.

Нумай пӗтӗ, сахал ҫитӗ; пӗрле тӑннине мӗн ҫитӗ? тесе йурлаҫҫӗ ваттисем.

Алӑкран тухса кайсассӑн, аллӑ тӗслӗ ӑс кӗрет.

## Ыйткалакансем.

Ҫула кун уйар. Хӗвел хӗртсе пӑхаҭ. Йал йышисем пурте хирте тырӑ выраҫҫӗ. Урамра пӗр сасӑ-ҫӗвӗ те сук. Епир асаннепе тырӑ

типӗтсе ларатпӑр пӳрт умендҗе. Манӑн хӑлхана йурӑ сасси кӗрех кайрӗ. Итлесе тӑратӑп:— йура тесессӗн,—йурӑ мар: халиҗҗен кун пек йурӑ илтменҗҗе епӗ. Пысӑк ҫын йӗнӗ йеверлӗ туйӗнҗӗ мана. Унҗҗен те пулмарӗ, пирӗн ҫумри тӑкӑрлӑкран икӗ ватӑ вырӑс кӗҫ тухаҫҫӗ. Иккӗшӗте ҫара пуҫӑн, шап шурӑ сухаллӑ, ҫӗтӗк сӑкманӗсем ҫӑнӑхпа шуралнӑ; хыҫӗсене пӗрер хутаҫ ҫакса йанӑ, аллисене туйа тытнӑ. Хайсем иккӗшӗте йунашарах, пӗр пӗринҗен иртмесӗр, урам варрипе йурласа, йеррипе, киле пӳҫларӗҫ пирӗн паталла.

—„Асанне, асту халӗ:—авӑ икӗ вырӑс йурласа килеҫҫӗ!... Ӳссӗр-имӗн вӗсем?“ тесе ыйтрӑм епӗ.

—„Ӳссӗр ҫынсем мар, аҗам, вӗсем: ыйткалакаксем вӗсем. Вӗсем ӳссӗрипе йурламаҫҫӗ. Сӑвап-сунан памӗ-ши, тесе, кӗлӗ йурри йурлаҫҫӗ вӗсем. Сӑвап сунса параканшӑн: „тырри-пулли пултӑр, сыхлӑ-сывлӑхлӑ пултӑр: пӗртен пине ҫиттӗр; пире панӑ вырӑнне, Турӑ патӑр! тесе Турра кӗлтӑваҫҫӗ вӗсем“ терӗ мана асанне. „Аҗа, епир те ҫӑнӑх парар вӗсене, пире те сӑвап пулӗ“, терӗ. Алтӑрпа кӗлетрен ҫӑнӑх илсе

тухрĕ. Иксĕмĕр ыйткалакансем патне кайрăмăр. Ыйткалакансем епир пырсассăн ҫарăнҫĕҫ. Асанне иккĕшин хутаҫҫине те ҫăнăх йаҫĕ. Вырăссем йурласса ҫарăнҫĕс те, ҫӳлелле пăхса, хăйсенĕн ҫĕлхипе кала, кала сăх-сăха пуҫларĕҫ. Вĕсем пе пĕрле асанне те сăх-сăхрĕ. Епир вара карташне кĕтĕмĕр, ыйткалакансем татах йурла пуҫларĕҫ. Йалтан та йурласах тухса кайрĕҫ.

Йаллă ҫĕрте ҫерҫи вилмест, теҫҫĕ.

Етем йĕрессине пăрахман тет, Турă парассине хăварман тет.

Турă ҫырăвĕнҫе те: „ҫук ҫынна панни, Турра паннипе пĕрех“, тенĕ.

## Ҫурла.

Ĕлĕк авал ҫурла пулман, тет. Тырра, ҫурлапа вырас вырăнне, ату-пăрипе улăм сыппи тĕлĕнҫен пĕррĕн, пĕррĕн шăтара, шăтара, татнă тет. Пĕрре ҫапла авал хирте саккăрăн пĕр тăван тырă выраҫҫĕ тет. Кăнтăрлаҫҫен темĕн пек асапланҫĕҫ тет, ҫапахта нимĕн ҫухлĕ те вырайма рĕҫ тет хăйсем. Кăнтăрлахи апатран вара, саккăрĕшĕ те канма выртрĕҫ, тет. Вĕсем ҫы-

вăрнă ҫухне, пĕр шурă сухаллă, ватă старик килҫĕ тет те, тимĕр ҫурлапа выра пуҫларĕ тет кусенĕн тыррине.

Сакăр тăван ҫывăрса тăриҫҫен, шурă сухаллă старик темĕн ҫухлĕ вырҫĕ, тет. Вĕсем саккăрăн пулсассăнта, ун ҫухлĕ вырайман тет. Сакăр тăван тăрсассăн, старик ҫасрах киле кайрĕ тет. Хыпаланнипе ҫурлине тĕм ҫинех манкса хăварнă тет. Сакăр тăван каҫалăкĕсем кутне пыҫĕҫ тет. Хай ҫурлана курҫĕҫ тет те: „кукăр хурт! кукăр хурт!“ тесе кăшкăраша пуҫларĕҫ тет. „Ку кукăрта вĕлерер, вĕлермесессĕн, пĕтĕм тырра ҫисе тухĕ вăл! Авă халĕ те, пĕр самантра мĕн ҫухлĕ ҫинĕ вăл! Атăр, ҫасрах вăрăм шертепе персе вĕлерер ăна!“ тесе канашлаҫҫĕ тет.

Унтан пурте хир тăрăх шерте шырама ҫупрĕҫ тет. Тупса килҫĕҫ тет шерте. Пĕри ҫурлана шерте вĕҫĕпе ҫаклатса, ывăтрĕ йаҫĕ тет ҫӳлелле. Ҫурла теприйĕн ĕнси ҫине кат! пырса ларҫĕ тет. Виҫҫĕмĕшĕ ҫасрах ҫупса пыҫĕ тет те, ҫурла авринҫен карт! туртрĕ тет. Тăванĕ пуҫне касрĕ татрĕ тет. Мĕн тăвас?

Аҫта ҫ̌икес ку кукӑр хурта? Пӗрне вӗлерҫ̌ӗ, тата ыттиссне те вӗлерӗ ку?! Атӑр, шыва пу- тарар!“ тесе каларӗҫ тет. Шерте вӗҫӗпе ҫаклат- са, шыв хӗррине илсе кайрӗҫ тет ҫурлана. Ҫур- ла вӗҫне пысӑк ҫ̌ул ҫыхрӗҫ тет. Кимӗ ҫине кӗрсе, тарӑн ҫӗре ишсе кайрӗҫ тет. Шыва пӑ- рахнӑ ҫ̌ухне, ҫурла кимӗ хӗррине ҫакланҫ̌ӗ тет те, киммине вайкӑнтарҫ̌ӗ йаҫ̌ӗ тет. Пурте шыва путса вилҫ̌ӗҫ тет вара.

52. Пӗҫ̌ӗкҫеҫҫӗ пӗкӗрӗлҫ̌ӗк пӗтӗм хире пӗл- терет. Пере пӗлмен алӑ туйи хӑйне ҫаврӑнса тивнӗ, тет.

## Выртмара мӗн тунни.

Епир ака-суха ҫинҫ̌е, тата кӗркунне те, каҫ- серенех лашасемпе ҫарана выртма кайаттӑпӑр. Пирӗн выртма ҫаранӗ хамӑр йалтан инҫе мар, — пӗр-икӗ ҫухрӑм анҫ̌ах пулӗ. Вӑл ҫаран икӗ йал хушшинҫ̌е: пӗр вӗҫӗнҫ̌е пирӗн йал, тепӗр вӗ- ҫӗнҫ̌е, пӗр ҫухрӑмра пулӗ, урӑх йал. Икӗ йенҫ̌е икӗ лутра кӑна сӑрт. Варринҫ̌е пӗҫ̌ӗкҫеҫҫӗ ҫыр- ма йухса выртат. Ҫырма тӑрӑх, унта-кунта, хура хӑва тӗмӗсем ӳсеҫҫӗ. Ҫав ҫарана епӗ ла-

шасӗмпе темиҫе те кайнӑ пулӗ. Каймассерен аҫасем пӗр-пӗр вӑййӑ туртса кӑлараҫҫӗ.

Перре ҫапла епӗ кӗркунне кайрӑм. Кӗрхи каҫ пит тӗттӗм пулаӗ те, сулхӑн пулаӗ; ҫӗр каҫиҫҫен урасем шӑнса, шанк! хытса кайаҫҫӗ. Ҫавӑнпа аҫасем, пурте пухӗнҫӗҫ те: „аӗӑр, аҫасем, кӗҫӗр кашлиҫӗ ҫунтарар! кӑҫал кашлиҫӗ нумай!“ терӗҫ. Ҫапла каласассӑнах, пурте ҫӑл-пар! саланҫӗҫ анасем ҫинелле. Аҫа-пӑҫа нумайӑн: пӗр наҫҫасра (самантра) темиҫе купа, пысӑк купасем, урам пек, йӗркерен тӑва, тӑва тухрӗҫ. Унтан вӑл купасене вут тӗрте, тӗрте йаҫӗҫ. Ак хай-хи, кашлиҫӗ ҫатӑртатса ҫуна пуҫларӗ!... Ҫулӑмӗ ҫӳлелле, пӳрт ҫуллӗш кайаӗ. Пӗтӗм ҫаран ҫап-ҫутӑ пулҫӗ. Аҫа-пӑҫа савӑннипе нимӗн тӑва пӗлмест. Хӑйсем, пурте, кашлиҫӗ тусанӗпе, ҫыкантан та хура пулнӑ ӗнтӗ! куҫӗ шуррисем анҫах курӑнаҫҫӗ. Хӑйсем ҫапахта пӗр-пӗринҫен тӑрӑхлакаласа, кулса, вут йӑри тавра ҫупкаласа ҫӳреҫҫӗ. Шӑри-шари, лӑй-лай! тӑваҫҫӗ: пӗтӗм ҫаран ҫӗр-ҫӗмӗрӗлет саҫҫим! Калӑн темӗн пулнӑ тесе.

Ҫапла ҫуйӑхкаласа тӑнӑ ҫӗре хамӑр йал

нассусӗ кӗҫ кӗмсӗртетсе килет. Тепӗр йенҫен тепӗр йал нассусӗ килет. Нассуспа килекенсем пирӗн пата пырса ҫарӗнҫӗҫ те, ни вӑрҫаймаҫҫӗ, ни йатлаймаҫҫӗ пире. Хӑрапнипе шап шурӑ шурса кайнӑ хӑйсем. Аллисене шарт! ҫапса тӑраҫҫӗ: „ку ҫухнехи ывӑл-хӗр темӗн туртса кӑларӗ!—Вара епир сирӗн йал ҫунаҭ пулӗ, тесе!“ теҫҫӗ йут йалсем—„Епир те сирӗн йал ҫунаҭ пулӗ тесе ӗҫке-ха!“ теҫҫӗ пирӗн йалсем. Лашисене кӑшт кантарҫӗҫ, ҫӗлӗм турткаларӗҫ те, калле шакӑртаттарса таврӑнҫӗҫ киле.

## Пирӗн ҫурт ҫунни.

Епир пӗр каҫхине хиртен тырӑ вырса пӗтерсе таврӑнтӑмӑр. Таврӑнсассӑн, ӗҫ пӗтернӗ йӗркипе, мунҫа кӗрсе тухрӑмӑр. Аттесем: „тавтапуҫ Турра! хирти тырра-пулла пӗр майлӑ турӑмӑр ӗнтӗ!“ тесе савӑнса, калаҫкаласа лараҫҫӗ. Апантлантӑмӑр та, туха, туха выртрӑмӑр. Епӗ те: „ӗнтӗ ыран ирех тӑрса хире кайас ҫук. Пӗр еренерен манӑн Ҫӗмпӗре вӗренме каймалла. Ҫӗмпӗр йеплеши? Йулташсем сыв-ши? Пурте каллех килӗҫ-ши вӗренме?“ тесе шухӑшлакаласа

выртататăп. Ҫапла шухăшласа выртнă ҫĕрте, кăшт йăхă тĕлĕшне кайайнăҫĕ. Акă хайхи хайаррăншари! шари! кăшкăра пуҫларĕҫ урамра. Ку мĕн пулҫĕ? тетĕп. Атта тăхăнса сиксе тухатăп..... пĕтĕм карташĕ ҫап ҫутă! Анне карташĕ тăрăх: „пĕтрĕмĕр! вут тухнă!“ тесе ҫупса ҫӳрет.

Урама ҫупса тухатăп:—урамра ҫын хурт пек вĕркет. Хăшĕ витре йăтса вут ҫуттипе хирĕҫ ҫупат; хăшĕ хапхинҫен тийевлĕ урапа туртса тухат. Аҫа-пăҫа сасси, выҫăх ҫĕрлĕх сасси—пур те пĕр ҫĕрте. Калле карташне ҫупса кĕтĕмте, аттесемпе пĕрле кĕлетрен йапаласем кăлара пуҫларăм. Виҫ-тăват ăлав кăлартăмăр-и, кăларайммарăмăр-и—пирĕн хыҫалти хуралтăсем йалкăша та пуҫларĕҫ! Унтан витене, кĕлете пӳрте те хыпрĕ... вара пĕтĕм кил вут анҫах пулҫĕ....

Епир карташĕнҫен урама тухрăмăр. Атте ҫунакан пӳрт патне ҫупса кайрĕ. „Пĕтрĕн, вĕт, пĕтрĕн, мăнтарăн пӳрҫĕ! Нумай ăшăтсаттăн ҫанма-ҫурăма! Спаҫҫипа, спаҫҫипа сана! аҫам-пăҫама ăшăтса усранăшăн!“... терĕ те, аҫа пек, уласа йĕрсе йаҫĕ. Пĕҫернĕнете пĕлмест, ҫав

тĕрлĕ хĕрӳ ҫунакан вут патĕнҫех тăраť. Ӳнтан вара ăна икĕ ҫын хулĕнҫен тытса, пĕр йенелле ҫавăтса кайрĕҫ. Анне тата, мана ҫухатнă та, тек йĕрсе ҫупкаласа ҫӳрет. Унтан мана курҫĕ те: „аҫам, аҫам! йепле хĕл касăпăр-ши? Аҫта пурăнăпăр-ши?... Аťа, аҫам, йулашкинҫен ăшăнса йулар хамăр пӳрт ăшшипе, ӳлĕм урăх нихăҫанта курас ҫук унăн ăшшине!“ терĕ. Ҫунакан пӳрт патне пырса тăтăмăр та, анне те йĕрет, епĕ те йĕретĕп. Тăрсассăн, тăрсассăн, кăларнă йапаласене тирпейлеме кайрăмăр. Анне кашни йапалана тытмассерен уласа йĕрет. Ҫапла йĕре, йĕре ҫĕр ирттерсе йатăмăр. Пĕр ернерен мана Ҫĕмпĕре вĕренме ăсатрĕҫ. Анне ăсатнă ҫухне, пуҫран тытрĕ те, йĕрсе йаҫĕ: „ан ӳкселе ĕнтĕ, аҫам! ҫӳлленхи пек куҫҫенеҫпе ăсатма Турă пӳрмерĕ! Хĕлхута савăнас выранне, куҫ-ҫулĕпе пит ҫуса ирттермелле пулҫĕ!“ терĕ. Ҫĕмпĕре килсессĕн, манăн ăш нумайҫҫен выртмарĕ; йалан килти хуйхă асма килетҫĕ.

Вут куҫне шыв! теҫҫĕ ваттисем. Вăрă вăрласассăн, кил йулаť; вутран пĕр шăрпăкта йулмасť, теҫҫĕ.

Вутӑн алли вӑрӑм, вӑл таҫтан та йарса илет. Вут-кӑварпа выҙама хушман ваттисем.

53. Шыва йатӑм, путмарӗ, ҫӗре ҙикрӗм, ҫӗрмерӗ.

54. Мӑн асатте хуранне сӗр-аллӑ ҫын йӑтаймасҭ.

## Марук вилни.

Манӑн пӗр Марук йатлӑ йӑмӑкӑм пурҙҙӗ. Хап-хура ҫӳҫлӗ-ҙӗ, тӑп тӑваткӑл питлӗ-куҫлӑ-ҙӗ; куҫӗсем хура ҫӗмӗрт пӗк-ҙӗ. Ҙупкаласа ҫӳренӗ ҙухне, ҫӳҫӗ вӗл-вӗл-вӗл! туса вӗҫсе пыраҭ-ҙӗ. Хӑй йӑваш-ҙӗ, лӑпкӑ-ҙӗ, кутӑнланмасҭ-ҙӗ, йунсӑрланмасҭ-ҙӗ; парсассӑн илет-ҙӗ, памасассӑн йӗрсе. аптӑратса ыйтмасҭ-ҙӗ. Пурмӑрта ҙунтан йурататтӑмӑр хӑйне. Аппасем, тетесем пысӑк-ҙӗ выҙамасҭ-ҙӗҫ ӗнтӗ; епир Марукпа йалан иккӗн анҙах выҙаттӑмӑр. Манӑн Марук пулмасассӑн, ни пӳртре ларас калмест-ҙӗ, ни тулта тӑрас килмест-ҙӗ. Аннепе пӗр-пӗр кӳрше ларма кайсассӑн, Марука кӗтсе ывӑнаттӑм вара.

Шӑп ыраш вырса пӗтнӗ вӑхӑтра пирӗн Марук сасартӑк ҙирлерӗ те, ҙисти тӗсрен ӳкрӗ.

Куçĕсем анса кайрĕç, хурарах-су сăнлăскер кăн-кăвак пулса тăѕĕ, Вырăн çинѕен пуçне çĕклейми те пулѕĕ. Анне йара куна ун куçĕнѕен пăхса ирттерет-ѕĕ. Касхине те çывăраймасŤ-ѕĕ. Епĕ йалан пӳртре Марук халĕ ѕĕрĕлĕ, халĕ выљама кайăпăр, тесе, ларатТăм. Анне пире Марук йахăнне пĕртте йамасŤ-ѕĕ. Епир ăна айакран анѕах пăхса лараттăмăр. Марук хăй патнелле çын пыра пуçласассăн, хура куçĕпе тилмĕрсе пăхаŤ-ѕĕ. Темĕн каласси пур-ѕĕ ĕнтĕ хăйĕн, мĕскĕнĕн, анѕах калаçма вăйĕ çук-ѕĕ.

Çавăн ѕухне, атте таçтан çарăк тийесе таврăнѕĕ. Атте пӳрте кĕѕĕ те, Марук патне пырса пĕшкĕнсе пăхрĕ. „Аѕу вилет, вĕт!... ѕасрах илсе вырттар турăш умне!“... терĕ аннене. Анне тĕпĕлтен турăш умне йăтса çитериѕѕен, Марукăн ѕунĕ тухса та кайнă. Аттепе анне ĕсĕклесе йĕре пуçларĕç: епĕ те, вĕсене курмах, йĕрсе йатăм. Унтан пире тула кăларса йаѕĕç. Епĕ тулта урапа çине улăхрăм та, Марука парас тесе, ырă, ырă çарăксем суйла пуçларăм. Кăшт тăрсассăн, анне мана пӳрте ѕĕнсе кӳртрĕ. Турăш умĕнѕе, сакă çинѕе, шап-шурă

пирпе витнĕ, Марук выртаҭ. — „Курса йул, аҭам, Марукна: урăх ĕмĕрте те курас çук ĕнтĕ есĕ ăна“! терĕ те, Марук пиҭĕ çинҭи шурă пире сирҭĕ. Марук, пăрнă тутăр пек, шуралса кайнă, куçĕсене хупнă, пĕр сиккелемесĕр выртаҭ. „Анне, Марук ăçта кайаҭ вăл? ăна çарăк парас-ха мăнăн; вăл çарăка астивсе те пăхман ха!“ терĕм епĕ.

„Ей, аҭам! вăл пирĕн çимене çийес çук ĕнтĕ. Ана „леш çĕрте“ унăн пирĕштййĕ хăй çимине çитерĕ; хăйпе пĕрле йертсе çӳрĕ! Акă епир Марукшăн Турра çырлах тăвар!“ терĕ. Унтан турăш умне çурта çутрĕ те, ҭăркуçланса ларса, Турра пуççапа пуçларĕ. Хăйĕн куç-çӳлли урайне шăпăр, шăпăр тăкăнаҭ. Епĕ те анне пе пĕрле Марукшăн темиçе ӳксе пуççапрăм Турра.

Вилĕм пуйана, çука, асла, кĕçĕне тиркемест. Вилĕм вăл каласа килмест, çавăнпа йаланах ырă ĕçсем туса, Турра кĕл-туса тăмалла.

Ҭир кĕрессе-пăтпа кĕрет, тухасса-сулатникпе тухаҭ, теççĕ вырăссем.

## Епĕ сăхсăхма вĕренни.

Хĕлле, Микула праçникĕнҫе, пирĕн пӳрте вăрăм тумтирлĕ, вăрăм çӳçлĕ, çӳлĕ, шурă сухаллă старик килҫĕ кĕҫĕ. Аттесем ура çине капăр! тăҫĕç. Шурă сухаллă старик стел умне пырса, тӳп-тӳрĕ тăҫĕ те, турăш йенелле пăхса, кĕлĕ сăмахĕсене кала, кала сăх-сăха пуçларĕ. Аттесем те, ăна курмах, сăх-сăха пуçларĕç. Епĕ сак çинҫе выљаса çӳретĕп. Шурă сухаллă старик пӳрте кĕрсессĕнех, тӳшек хыçнелле тартăм. Старик кĕл туса ҫарăнҫă те, сап-сарă тутăр ăшĕнҫен хĕресне кăларҫĕ. Çав хĕресе аттесене пĕрерĕн-пĕрерĕн ҫуп тутара пуçларĕ. Аттесем, пурте, сăх-сăха, сăх-сăха хĕрес ҫуп-турĕç. Старик ман йенелле çаврăнса пăхса, аттене темĕн каларĕ. Атте ман патма пыҫĕ те: „аҭа, аҫам, сана паҫăшка хĕрес ҫуп-тутарас тет!“ терĕ. Ман çӳçе йакаткаларĕ те, старик умне çавăтса пырса тăратрĕ мана.

Старик хăй ҫĕлхипе темĕн калаҭ мана, пĕр сăмахне те ăнланаймарăм; „сух-сух-ту! сух-сух-ту!“ теннине анҫах уйăрса илтĕм. — „Сăх-

сăхма хушат̆ вăл, аҫам! сăх-сăх, аҫам, сăх-сăх!“ терĕ мана атте. Епĕ унҫҫен пĕртте сăх-сăхман, сăхсăха пĕлместĕп те. Шурă сухаллă старик хăй аллипе манăн сылтăм аллăн пуҫ пурнине, шĕвĕр пурнине, тата вăта пурнене тан тыттарҫĕ; малтан ҫамка ҫине хуртарҫĕ, унтан кăкăр ҫине, унтан сылтăм хул пуҫҫи ҫине, ҫи кайран сулахай хул-пуҫҫи ҫине хуртарҫĕ те, пуҫа малалла тайрĕ; унтан хĕресне ҫуптутарҫĕ. Вара аттене татах темĕн кала пуҫларĕ. Турăш йенелле ҫаврăнса, тепĕр хут сăхсăхрĕ те, пўртрен тухса кайрĕ.

Старик тухса кайсассăнах, епĕ аттерен: „атте, кам вăл?“ тесе ыйтрам. „Пуп вăл, аҫам, вăл тиркўре Турра кĕл-тăват̆. Сана ирте, каҫта, апат уммĕн те, апат хыҫҫăн та Турра сăхсăхма хушат̆. Сăхсăхмасассĕн пит ҫылăх тет!“ терĕ. Ҫавăнтанпа вара епĕ йалан сăхсăха пуҫларăм.

## Ўкĕт.

Таса ырă ҫын пул. Турă ҫине шанса, ăна пĕтĕм ҫĕрўпе йуратса пурăн.

Турă çыннăн мĕн тытнине, туннине анђах мар, çын ăшăнђи шухăшне те пĕлсе тăннине ан ман.

Турă сана çуратса ђун панă; сана халĕ усрать. Мĕн пур телейĕ пурте Турăран пулать.

Есĕ Турра çавăнпа йалан тав-туса пурăн; ху ђунна йаланах Турра парăнтарса тăр. Ĕç тума тытăнмассерен, малтан Турра йăлăн.

Патшана хисепле: ăна Турă лартнă, Турă лартман тӳре те çук, пур тӳрссене те Турă лартнă. Патша ирĕкĕнђен ан тух, вăл кăларнă закона пурнете пăхăнса тăр.

Ватă çынсене, хăнтан аслисене хисепле; тантăшусем умĕнђе пуçна ан мăнат; хăнтан кĕçĕннисене пурне те кăмăл кур.

Пупсене, аçупа аннӳне, пуçлăхсене, пур ырă çынсене те хисепле; вĕсенĕн сăмахĕнђен пĕртте ан тух.

Хăна ырă сунаканшăн анђах мар, хăвăн тăшманусемшĕн те Турра кĕл-ту.

Сана Турă усал тума çуратман, ырă тума çуратнă. Ăна есĕ пĕртте ан ман: мĕн вăй çитнĕ таран çынсене ырă тума тăрăш.

Пуринпе те тӳрӗ пурӑн; пӗр ҫынпа та урлӑпирлӗ ан пул.

Пӗр-пӗр ҫын сана хурлӑх тусассӑн, есӗ ӑна каҫар; ху пӗр-пӗр ҫынна хурлӑх тусассӑн, ҫ̌асрах килӗш унпа.

Усал ӗҫ тума мар, усал сӑмах та ан калаҫ.

Пӗртте ытлашшине ан калаҫ. Ваттисем калаҫнӑ ҫ̌ух, вӗсенӗн сӑмахне ан пӳл,—пӗр ҫ̌ӗнмесӗр итлесе тӑр.

Ҫ̌иперех пӗлмен йапала ҫинҫ̌ен, пӗлнӗ пек ан калаҫ, малтан тӗплӗ ыйтса пӗл.

Йапалана-курнӑне пӗрне, ан хапсӑн, ку манан пулинҫ̌ҫ̌ӗ, тесе ан шухӑшла.

Ҫыннӑнне пӗрне те ан тив, ан вӑрла, хӑвӑн мӗн пурӗпе тутӑ пул.

Ҫынтан кивҫен илсессӗн, вӑхӑтӗнҫ̌е калле пар.

Ху каланӑ сӑмӑхна тыт.

Нихӑҫанта ан ҫуйеҫтер.

Найан ан пул, ӗҫҫ̌ен пул, сивӗҫ̌ӗ пул: Ӗҫленни Турра та йурӑхлӑ, хӑна та усӑ кӳрет.

Ҫук ҫынсене мӗн вӑй ҫитнӗ таран пулӑш.

Ҫынпа хирӗҫ пулсассӑн, ырӑ, ӑшӑ сӑмах кала.

Хӑнтан ыйтакан ҫынна тӳррипе каласа пар. Пӗлмен ҫынна вӗрент, хуйхӑлӑ ҫынна йӑпат. Ҫак каланӑ сӑмахсем тӑрӑх пурӑнсассӑн, ырӑ ҫын пулӑн: Сана пӗри те тивмӗҫ. Йулташусем, пӗлӳшӳсем пур те йуратӗҫ; курайман тӑшманусем, нимӗн те тӑваймӗҫ. Санӑн пурнӑҫу телейлӗ пулӗ вара.

## 1. Тĕнҫе пулни.

Ĕлĕк, ҫи малтан, Турă анҫах пулнă; Унтан пуҫне урăх нимĕн те пулман. Халĕ курăнакан тĕнҫери йапаласем пĕри те пулман: ҫĕрте пулман, хĕвел те пулман, уйăх та пулман, ҫăлтăрсем те пулман, етем те пулман,—пĕр ҫунлă йапала та пулман ĕнтĕ. Ҫакă, епир пурăнакан ҫутă тĕнҫене Турă ултă кунта пултарса ҫитернĕ. Тĕнҫене пултармашкăн Турра нимĕн те кирлĕ пулман. Акă халĕ-пире, етеме, пӳрт тăвас тесессĕн, пĕрени те, пуртти, те пăҫăки те кирлĕ. Ҫăпата тăвас тесессĕн,—шĕшли, те пушăҫĕ те кирлĕ. Турра ҫавăн пек йапаласем пĕртте кирлĕ пулман. Вăл тĕнҫене пултарнă ҫухне, сăмахпа анҫах каласа тăнă. Ҫи малтанах, кун-ҫĕр пуҫланиҫҫен, Турă пирĕштисене пултарнă та, ҫĕре пултарнă. Пирĕн ҫĕр пултар-

сассăнах, халхин пек илемлĕ пулман: унăн çинҫе пĕр ҫĕрĕ ҫун, пĕр йывăç-курăк та пулман; тăпри, шывĕ, ҫулĕ—пур те пĕр çĕрте пăтранса тăнă; йăри-тавра тет-тĕттĕм пулнă. Çĕр таврашĕнҫе Турă Сывлăшĕ анҫах, çил пек вĕçсе çӳрене.

Пирĕштисене пултарсассăн, çĕре пултарсассăн, Турă каланă: „пултăр тĕнҫере çутă!“ тенĕ. Каласассăнах, çутă пулнă. Вара кунпа çĕр пуçланса кайнă: ир те пулнă, каç та пулнă. Пĕр кун пулнă вара. Иккĕмĕш кунне Турă епир куракан пĕлĕте пултарнă.

Виççĕмĕш кунне Турă каланă: „шыв çĕртен уйăрăлса, пĕр çĕрелле пухăна, пухăна тăтăр! унăн вырăнне типĕ çĕр тухтăр!“ тенĕ. Çавăн ҫухнех вара, шывран тинĕссем, çырмасем пула, пула тăнă. Турă тата каланă: „çакă типĕ çĕр хăй çинҫе тĕрлĕрен, сыпăкран сыпăка пыракан йывăç-курăк ӳстертĕр!“ тенĕ. Çĕр çине тĕрлĕрен илемлĕ йывăççем шăта, шăта тухнă.

Тăваттăмĕш кунне Турă каланă: „пултăр пĕлĕт çинҫе пĕтĕм тĕнҫене çутатса тăракан çутăсем!“ тенĕ. Çапла каласассăнах, пĕлĕт çинҫе

хӗвел, уйăх, çăлтăрсем пулса тăнă. Хӗвеле Турă тӗнҫене кăнтăрла çутатса тăма хушнă, уйăхăхпа çăлтăрсене çӗрле-каçхине. Кунпа çӗр палли çавсем пулса тăнă вара.

Пиллӗкмӗш кунне Турă каланă: „шывра тӗрлӗрен пулă пултăр, çӗр çинҫе тӗрлӗрен çӗрӗнкусан, çӳлӗн-вӗçен пултăр!“ тенӗ. Çавăн ҫухах вара шывра тӗрлӗрен пулă ишсе çуре пуçланă; çӗр синҫе çӗрӗн-кусан йăраланса çӳре пуçланă; çӳлте вӗçен кайăксем вӗçсе çӳре пусланă. Вӗсене пурне те Турă пурăнса ӗрҫеме хушнă.

Улттăмӗш кунне Тура каланă: тӗнҫере тӗрлӗрен тăватă-уралă выҫăх-ҫӗрлӗх пултăр!“ тенӗ. Каласассăнах, çӗр çинҫе тӗрлӗрен тăватă-уралă выҫăх-ҫӗрлӗхсем çӳре пуçланă. Çакă ҫунлă йапаласене пултарса пӗтерсессӗн, Турă вара етеме арлă-арăмлă пултарнă.

## 2. Етеме пултарни.

Етӗме Турă, ытти йапаласене пултарнă пек, пӗр сăмахпа анҫах пултарман. Етеме пултарас уммӗн; Виçлӗ Тура Хăйне Хăй каланă: „аҭăр, Хамăр тӗслӗ етем туса пултарар!“ тенӗ. „Çӗр

çинҫи ҫунлă йапаласене пурне те хăйне пăхăнтарса тăтăр çав етем!“ тенĕ. Унтан Турă çĕр тăпри илнĕ те, çав çĕр тăпринҫен етем кĕлетки тунă. Етем кĕлетки ăшне сăмсинҫен вилми, ҫĕрĕ, ăслă сывлăш вĕрсе кўртнĕ. Етеме ҫун кĕнĕ те, вăл вара утса çўре пуçланă. Турă, çав Хăй пултарнă етеме, Адам йатлă хунă. Адама Турă Хăй лартса ўстернĕ илемлĕ пахҫана кўртсе йанă. Вăл пахҫана „рай“ теççĕ. Турă Адама çав пахҫана пăхса усрама хушнă.

Рай варринҫе икĕ йывăç ўснĕ; пĕри „ҫĕрĕлĕх йывăççи“ йатлă пулнă; унăн улмине Турă Адама çиме хушнă. Вăл йывăçăн улмине çийекен етемме ĕмĕр вилĕм те, ҫир-ҫăр та тивмелле пулман. Тепĕр йывăççи „ырăпа усала систерекен“ йатлă пулнă. Ку йывăçăн улмине Турă Адама çиме хушман. „Ку йывăçăн улмине ан çи!“ тенĕ Турă: „унăн улмине çинĕ шекпех вилĕн! тенĕ.

Турă вара Адам патне пур ҫунлă йапаласене те йертсе пынă. Адам вĕсене пурне те хăй ҫĕлхипе йат пара, пара тухнă. Турă пилленĕ тăрăх, çакă ҫунлă йапаласем, пур те, Адама,

патшана пăхăнса тăнă пек, пăхăнса тăмалла пулнă.

Çав мĕн пур ђунлă йапаласем хушшинђе Адампа çăвар уçса, сăмах хуша пĕлекен пулман. Адама малашне пĕђђен пурăнма пит киђен пек пулмалла пулнă. Çавăнпа Турă Адама хĕрхенсе каланă: „ку етеме пĕђђен пурăнма ырă мар; ăна пулăшма, хăй пек, тепĕр çын тăвам!“ тенĕ. Унтан Адам çине пит йывăр ăйхă йанă. Çывăрнă ђухне, Адамăн хăрах айак пĕрђине кăларса илнĕ. Çавă айак пĕрђи шăмминђен Турă Адăм валли арăм пултарнă. Вăл арăма Турă Адам патне йертсе пынă. Адам, арăмне курсассăн: „акă ку, ман пекех; кунăн шăммите манăн, ӳђĕте манăн. Ку манăн арăм пултăр!“ тесе каланă. Адам хăй арăмне Ева йатлă хунă. Турă, етеме арлă-арăмлă тусассăн, акă çапла каласа пилленĕ вĕсене: „ĕрђĕр, ывăллăхĕрлĕ пулăр, пĕтĕм çĕр çине сарăлăр; пур ђунлă йапаласене хăра пăхăнтарса пурăнăр!“ тенĕ. Пĕтĕм тĕнђе етемми çакă икĕ çынтан ĕрђесе кайнă вара.

## 3. Адам ывăлĕсем.

Ҫак Адампа Еванăн вĕсене ҫылăх тунă пирки райран хăваласа кăларсассăн, икĕ ывăл ҫуралнă. Асли Каин йатлă пулн, кĕҫĕннн Авел йатлă пулнă. Асли ҫĕр ĕҫлесе тырă акса пурăннă, кĕҫĕнни выљăх-ђĕрĕлĕх усраса ӳстерсе пурăннă. Пĕрре Каинпа Авел, иккĕшĕте, Турра тавтуса парне памалла пулнă. Каин хăй ĕҫлесе тунă тыррине панă; Авел хăй кĕтĕвĕнђи, ђи малтан ҫуралнă такĕне панă. Каин парас парнине пĕр ырă шухăшсăр, пĕр ырă кăмăлсăр хатĕрленĕ. Авел хăй парнине ырă кăмăлпа, ђунтан вартан, етем ҫылăхне ҫăвакан Турра ĕненсе хатĕрленĕ. Каин парни Турра йурăхсăр пулнă, Авел парни—йурăхлă пулнă. Каин, ҫавăнпа курăймасăр, Авеле хире илсе тухнă та, персе вĕлерпĕ.

Каин, ку ĕҫе никам та курмарĕ пулĕ, тесе, шухăшласа килелле таврăннă. Анђах етемрен пытарсассăн та, Турăран пытарма хал ҫук. Турă Кайăнран ҫул ҫинђех ыйтнă: „Каин, шăллу ăҫта вара санăн?“ тенĕ.—„Темĕн, пĕлместĕп: епĕ унăн хуралҫи мар, вĕт!“ тенĕ Каин. Турă вара Каина

каланӑ: „ей, Каин! вара есӗ капла мӗн турӑн ӗнтӗ! Шӑллувӑн йунӗ пӗрӗхни мана та илтӗнет, вӗт! Акӑ ӗнтӗ, ҫакӑ, шӑллу йунне сӑхса илекен ҫӗр, сана ҙӑтаймӗ. Есӗ вӑл ҫӗр ҫине ӗҫлесе тырӑ акӑн; вӑл ҫӗр сана унщӑн хӑй ырӑлӑхне памӗ. Есӗ ӗмӗрне ниҫтата ҙунна кантарса пурӑнаймӑн; пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна сӗтӗрӗнсе ҫӳресех, ӗмӗрне ирттерсе йарӑн!“ тенӗ.

Каин Турра хирӗҫ каланӑ: „ку асапа тӳсесси мана пит хӗн пулӗ; ӑна тӳсме манӑн вӑйӑм та ҫитес ҫук. Акӑ ӗнтӗ Есӗ мана хам ҫуралнӑ ҫӗр-шывран айакка хуса йаратӑн; кунтан тухса кайсассӑнах, мана та пӗри-пӗри вӗлертӗрҙӗ!“ тенӗ.—„Ҫук, сана никам та вӗлермӗ“, тенӗ Турӑ Каина: „сана вӗлерекене, сантан тата ҫиҙӗ хут хӗнтерех пулӗ!“ тенӗ. Унтан вара Турӑ Каин ҫине, ӑна пӗр-пӗр ҫын ан вӗлертӗр, тесе, паллӑ хунӑ. Каин ашшӗ-амӑшӗ килӗнҙен тухса кайнӑ та, вӗсенҙен айакка кайса вырӑнаҫнӑ вара.

## 4. Ной.

Адампа Ева икӗ ывӑлтан пӗр ывӑлсӑрах тӑрса йулнӑ. Турӑ вӗсене, хӗрхенсе, тепӗр

ывăл панă. Вăл Сиѳ йатлă пулнă. Сиѳ ашшĕпе амăшне, ватăлмалăх кунĕсенҫе, тирпейлесе усранă. Ҫав Сиѳ йăхĕнҫен таххăрмĕш сыпăкра Ной йатлă ҫын ҫуралнă. Нойăн виҫĕ ывăл пулнă: Сим, Хам, Іафет йатлă. Ной хăй аҫипăҫисемпе ҫĕр ĕҫлесе, тырă акса пурăннă; тата пахҫасем тăва, тăва, иҫĕм ҫырли те ларткаласа ӳстернĕ.

Пĕрре ҫапла Ной иҫĕм ҫырли ереххине ĕҫнĕ те, хĕрĕнкĕленсе, пахҫинҫех ҫывăрса кайнă; Хĕрĕнкипе ҫиййĕнҫи тумтирне ыррăн тирпейлеймен те вăл: йепле выртнă, ҫаплах ҫывăрса кайнă. Ной ҫапла ҫывăрса выртнă ҫĕре, унăн вăталăх ывăлĕ, Хам, пынă. Вăл ывăлĕ унăн ашшĕпе-амăшне сума-суман ҫын пулнă. Ашшĕ ăна ҫавăншăн ҫас-ҫасах ӳкĕтлесе йатлакаланă. Халĕ ĕнтĕ Хам ашшĕ тирпейсĕр выртнине курнă та: „акă, хайхи ырă ҫын, хăйне хăй те тирпейлеймест!" тесе кулнă. Хăй пĕтҫен кулни ситмен халĕ, тата питҫĕшĕпе шăллĕне те ашшĕнҫен мăшкăлласа култарасшăн пулнă. Симпа Іафета ҫĕнсе килнĕ ҫывăракан ашшĕ патне. Кусем ашшĕне курсассăн кулман-туман;

ашшĕ тирпейсĕр выртнине куçĕсемпе пăхма та вăтаннă. Ашшĕ патне кутăн кĕнĕ те, тумтирне ҫипер тирпейлесе витсе тухнă.

Ной йăйхинҫен вăрансассăн, Турă пĕлтернĕ тăрăх, тирпейлесе вырттаракан икĕ ывăлне, Симпа Іафета, пилленĕ. Хамне, мăшкăлласа кулнăшăн, акă мĕн тенĕ: „есĕ, аҫам, хута, пархатар курайман, аҫу-пăҫусем те пархатар курайм̆ĕç; ĕрмĕр-ĕмĕрне çын куçĕнҫен пăхса, тарçăра тăмалла пулĕç!“ тенĕ. Ной калана пек, икĕ ывăлĕнҫен ырă çынсем пулнă. Хам йăхĕнҫен усал, пархатарсăр, çынсем пулнă.

## 5. Іосиф.

Çим - йăхĕнҫе, вун-иккĕмĕш сыпăкра Іаков йатлă çын пулнă. Çав Іаков хăй çемйипе Ханаан тийекен çĕрте пурăннă. Унăн вун-икĕ ывăл пулнă. Іаков вăл çĕр ĕçлесе тыр акса пурăнман. Авел пек, тĕрлĕрен выҫăх ҫĕрĕлĕх усранă, çавăнпа тăранса пурăннă вăл. Аҫисем çамрăк ҫухне, выҫăхĕсене хăй кĕтсе çӳренĕ; аҫисем ӳссе çитĕнсессĕн, вĕсем кĕтсе çӳренĕ. Іаков хăйĕн вун-икĕ ывлĕнҫен, пуринҫен ытла,

Іосиф йатлӑне йуратнӑ. Іосиф вӑл, хӑй ҫӑмрӑк пулсассӑн та, пит ӑслӑ, лӑпкӑ аҫа пулнӑ. Іосиф, Дан, Неофалим, Гад, Асир йатлӑ питҫӗшӗсемпе пӗрле пӗр кӗту кӗтсе ҫӳренӗ; ытти ывӑлӗсем, тата ҫапла, хӑйсене уйрӑм кӗтӳ кӗтсе ҫӳренӗ.

Іосифпа пӗрле ҫӳрекен питҫӗшӗсем (ҫав Дан, Нефөалим, Гад, Асирсем) пит усал, ҫарусӑр пулнӑ; хӑйсенӗн усаллӑхӗне ашшӗ йатне те ҫӗртнӗ, кил-сурт масине те йанӑ. Іосиф вӗсене, мӗн пӗлнӗ пек, ӳкӗтлесе ҫаркаланӑ; вӗсем ҫапах та ҫарӑнман. Іосиф уншӑн пит тарӑхнӑ; вӑл йаланах хуйхӑрса ҫӳренӗ. Хӑш, хӑш ҫухне тӳсеймесӗр, питҫӗшӗсем ашкӑнни ҫинҫен, ашшӗне кала, кала панӑ. Ашшӗ Іосифа килшӗн тӑрӑшнӑшӑн, питҫӗшӗсене те ҫарнӑшӑн, пит йуратнӑ. Вӗсенҫен уйрӑм ӑна пит илемлӗ тумтир ҫӗлетсе панӑ. Іосифа ашшӗ пит йуратнӑран, питҫӗшӗсем ӑна, пурте, курайми пулнӑ. Пӗри те, Іосифа тӑван вырӑнне хурса, ӑна ӑшӑ сӑмах каласшӑн пулман. Ҫитменнине тата—Іосиф икӗ тӗлӗк курнӑ. Ӑна питҫӗшӗсене каласа кӑтартнӑ. „Питҫесем, итлӗр ха“ тенӗ:

„акă епĕ кĕçĕр мĕнле тĕлĕк куртăм: епир хир варринҫе пурмăр та пĕрер кĕлте тунă пек, манăн кĕлтем, çыхсассăн, тӳп тӳрĕ тăрса ларҫĕ; сирĕн кĕлтĕрсем тăрса манăнне йенелле çаврăна, çаврăна пуççапрĕç пек!" тенĕ. Питҫĕшĕсем ăна хирĕç каланă: „вара ку мĕн пулĕ ĕнтĕ?... Есĕ пирĕн патша пулса, пире ху куçăнтан пăхтарса пурăнас тетĕн-имĕн?" тенĕ.

Унтан тата вăл питҫĕшĕсене тепĕр тĕлĕкне те каласа панă: „мана тĕлĕкре уйăхпа хĕвел, тата вунпĕр çăлтăр ӳксе пуççапрĕç пек!" тенĕ. Питҫĕшĕсем куна илтсессĕн, тата питĕрех те курайми пулнă вара. Ку тĕлĕкне каласа панă ҫухне, вăсенĕн ашшĕ те пулнă. Вăл Іосиф тĕлĕкне тĕрĕсĕпе ăнласа илнĕ. Анҫах ытти ывăлĕсем ашшĕ вĕрентсе калаĭ пулĕ, тесе, ан ıнухăшлаĭҫăр тесе, Іосифа ӳккелесе каланă: „ку мĕнле тĕлĕк курнă есĕ, аҫам? Вара ҫăнахта-и епир, тахçан вилнĕ аннӳпе, тата пур тăванусем те сана пырса пуççапмалла пулăпăрши?" тенĕ. Хăй çапах та Іосиф тĕлĕкне асăнҫен пĕртте йаман.

## 6. Іосифа сутса йанни.

Пĕрре Іосиф питтҫĕшĕсем пурте Сихем тийекен ҫĕре вылҗăхсем кĕтме кайнă. Іосиф унтҫухне ашшĕ патне, киле йулнă. Пайтахах вăхăт иртсессĕн, Іаков Іосифа каланă: „аҫам, питҫҫӳсем Сихем ҫĕрĕнҫе вылҗăхсем кĕтеҫҫĕ: есĕ ҫавăнта кайса пăх-ҫĕ, питҫҫӳсенĕн хыпарне пĕлсе килҫҫĕ. Хăйсем сыв-и, ҫӳреҫҫĕ-и, вылҗăх-ҫĕрĕлĕхсем тĕрĕс-тĕкел тăраҫҫĕ-и?“ тенĕ. Іосиф, ашшĕ сăмахне итлесе, илемлĕ тумтирне тăхăннă та, кайнă Сихем ҫĕрне. Унта вăл, питтҫĕшĕсене тупаймасăр, аташса ҫӳренĕ. Ана вара пĕр ҫын тĕл пулса кăтартса йанă питтҫĕшĕсем патне: „епĕ, вĕсем Даѳаим ҫĕрне кайас, тесе, каланнине илтсеттĕм!“ тенĕ: „ҫавăнта пулĕ вĕсем, ҫавăнта кайса пăх есĕ!“ тенĕ Іосифа вăл ҫын. Іосиф Дафаим ҫĕрне кайнă. Питҫĕшĕсем вăл килнине айакранах курнă та, пĕр-пĕринпе калаҫа пуҫланă: „авă, хай тĕлĕк куракан килет! айăр, ăна тытса вĕлерер те, пĕр-пĕр пусса йарар! Атте ыйтас-тăвас пулсассăн, пĕр-пĕр тискер кайăк-мĕн ҫисе йанă

пулӗ тийӗпӗр!“ тенӗ. Іаковăн аслă ывăлӗ, Рувим шăллӗсене ҫарса каланă: „ҫук, тăвансем, ăна вӗлерсе, кăлăх ҫылăха кӗрес мар! Хăвăр персе вӗлериҫҫен, акă, ҫак-хирти типӗ пусса йарар, вăл унта хăйех вилӗ!“ тенӗ. Рувим ку сăмахсене, Іосифа пиҫҫӗшӗсенҫен вăрттăн, ашшӗ патне кăларса йарасшăн пулса каланă.

Іосиф пиҫҫӗшӗсем пăтне ҫитсессӗн, пиҫҫӗшӗсем унăн илемлӗ тумтирне сӳсе илнӗ те, хăйне, Рувим каланă пек, типӗ пусса пăрахнă. Унтан Рувим выҫăхсем патне кайнă, ыттисем пур те апата ларнă. Ҫав вăхăтра, вӗсенҫен инҫех-те мар, сутă-илӗ тăвакансем иртсе пынă. Іуда йатли вӗсене курассăн, тăванӗсене каланă: „итлӗр-халӗ, тăвансем“, тенӗ: „ӗнтӗ епир шăллăмăра вӗлерсе, унăн йунне аттерен пытарăпăр, вара апла пире, хăмăра, мӗн усси пулӗ? Атăр, унăн вырăнне ак ҫăпла тăвар: хăмар алăпа ҫапса-хӗнесе вӗлерес мар; мӗшӗн тесессӗн, Іосиф вăл хăй кирек мӗнле пултăр та, ҫапах та пирӗн тăван, вӗт, вăл! Авă, сутă-илӗ тăвакансем килеҫҫӗ, сутса йарар ăна ҫав-

сөне!“ тенӗ. Апла каласассӑн, ҫисе ларакан тӑванӗсем, пурте, Іуда майлӑ пулнӑ.

Сутӑ-илӗ тӑвакансем вӗсем патнерех ҫитсессӗн, питҫӗшӗсем Іосифа пусӑран сӗтӗрсе кӑларнӑ та, ҫав сутӑ-илӗ-тӑвакансене вунҫиҫӗ тенкӗ те ҫирӗм пуса сутса йанӑ. Кайран Рувим Іосифа ашшӗ патне кӑларса йарас тесе, пусӑ патне пырса пӑхнӑ та, пусӑра Іосиф ҫук пулнӑ. Хӑраннипе Рувим тумтирне шарр! ҫурса пӑрахнӑ. Ытти тӑванӗсем патне пынӑ та: „Ах Турӑ!... вара ӑҫта ҫикем-ши епӗ пуҫма!... аҫамӑр ҫук вӗт, аҫамӑр ҫууук!“ тесе хуйхӑрнӑ. Лешсем ӑна ҫапах та йӑпатнӑ: пурте пӗр канӑшлӑ пулса, пӗр каҫака путекки пуснӑ та, унӑн йунӗпе Іосифӑн тумтирне варланӑ. Унтан вара вӑл тумтире ашшӗ патне леҫнӗ. „Акӑ, атте, епир хирте пӗр тумтир тупрӑмӑр; асту-ха:—Іосиф тумтирӗ мар-и вара?“ тенӗ. Іаков Іосиф тумтирне палланӑ та: „ку Іосиф ывӑлӑмӑн тумтирӗ! Хӑйне ҫӑнах та пӗр-пӗр тискер кайӑкмӗн ҫисе йанӑ пулӗ!“ тесе уласа йӗрсе йанӑ. Ӑшӗ ҫуннине тӳсеймесӗр, ҫийӗнҫи тумтирӗсене пӗтӗмпе ҫура, ҫура пӑрахнӑ. Хӑй ҫине

илемсĕр тумтир çакса йанă. Іаков ывăлĕ-хĕрĕсем, ашшĕ хуйхăрнине илтсессĕн, пурте ăна йăпатма пухăннă. Іаковăн вĕсенĕн йăпатнине илтесси те килмен. „хуйхăра, хуйхăрах аҫам патне çĕре айне анăп ĕнтĕ!“ тесе пĕр май йĕнĕ.

## 7. Іосиф пурнăçĕ.

Іосифа сутăн илекенсем çынсем Модіан йатлă халăх çыннисем пулнă. Вĕсем Іосифа хăйсемпе пĕрле Египет йатлă çĕре илсе кайнă. Египете çитсессĕн, вĕсем ăна патша умĕнҫе тăракан Пентефрій йатлă аслă улпута сутса йанă. Пентефрій Іосифа хăй умĕнҫе тытса тăнă. Іосиф, Пенҫефрій патĕнҫе пит лăпкă пурăннă. Унăн, Турă пулăшнă тăрăх, мĕн тунни-тытни пурте килĕшнĕ. Пентефрій çавăнпа Іосифа пит йуратнă; ăна шанса хăйĕн пĕтĕм кил-çуртне пăхса тăма хушнă. Іосиф пурăннă ҫухне, çав Пентефрийĕн пурнăçĕ пит малалла кайнă. Анҫах Пентефрійĕн арăмĕ усал, аскăн арăм пулнă. Çав арăм Іосифа хăй майлă пулманшăн Іосиф çинҫен упăшкăне кăлăх елеклесе кăтартнă. Лешĕ, çиллипе, ҫипер тĕпҫесе пĕлмесĕрех,

тĕрмене хуптарнă Іосифа. Анҫах Іосифа Турă тĕрмере те пăрахман. Вăл Турăран хăракан, ăслă, ырă ҫĕрелĕ ҫын пулнă, ҫавăнпа ăна тĕрме пуҫлăхĕ тĕрмери ҫынсене пăхакан туса хунă. Тĕрмери ĕҫсем пурте Іосиф урлă пулмалла пулнă.

## 8. Іосиф тĕрмере пурăнни.

Египет патшисем пурте Фараон йатлă пулнă. Фараон умăнҫе икĕ тӳре тăнă: пĕри патша ҫуртне ерех туса леҫекенсенĕн ҫăн аслă пуҫлăхĕ пулнă; тепĕри ҫăкăр-тăвар туса леҫекенсенĕн ҫăн аслă пуҫлăхĕ пулнă. Пĕрре ҫăв тӳресем иккĕш те патши умĕнҫе айăплă пулнă. Патша иккĕшне те ҫиленсе Іосиф выртакан тĕрмене хуптарнă. Тĕрме пуҫлăхĕ хушнă тăрăх ҫак икĕ аслă ҫанат умĕнҫе Іосиф тăмалла пулнă. Іосиф тĕрмере ҫак икĕ ҫаната пăхса тирпейлесе тăнă вара. Вĕсем тĕрмере пĕр ҫул выртнă.

Пĕр ирхĕне Іосиф ҫанатсенĕн пӳлĕмне кĕнĕ; кусем иккĕште салху ларнă. „Мĕшĕн есир пайан салху ларатăр?“ тесе ыйтнă Іосиф. Лешсем Іосифа хирĕҫ каланă: „кĕҫĕр епир, иксĕ-

мĕр те, тĕлĕк куртăмăр, анҭах мĕне курăннине хамăр пĕлейместĕпĕр, каласа паракан никам та ҫук!“ тенĕ. „Вара есир тĕлĕке Турă анҭах пĕлтернине пĕлместĕр-имĕн? Мана каласа парăрха тĕлĕкĕрсене!“ тенĕ. Ерех туса тăракансенĕн пуҫлăхĕ хăй тĕлĕкне каласа панă: „тĕлĕкре-манăн умра пĕр тĕм, иҫĕм ҫырли лараҫ пек, вал тĕмре виҫ авăр пек; ҫав иҫĕм ҫырли тĕме ҫулҫă кăларса ҭеҭеке ларҭĕ пек те, ҫырлисем те пиҫсе ҫитрĕҫ пек; епĕ ҫав пиҫнĕ ҫырласем шывне Фараон курки ҫине пăрса илтĕм те, Фараон патша аллине патăм“, тене. — „Санăн тĕлĕкў акă мĕн пуласса курăннă: виҫ авăр-вăл виҫ куна кăтартаҫ; Фараон сана виҫ кунтан каллех ĕлĕкхи вырăнна хурĕ; есĕ вара, ĕлĕкхи пекех, патшана ху аллупа хăвах ерех парса тăрăн“, тенĕ. Тĕлĕкне каласа пĕтерсессĕн Іосиф тўрене каланă: „есĕ каллех ĕлĕкхи ырă вырăнна кĕрсессĕн, мана та ан ман вара; мана ку тĕрмене пĕр айăпсăрах хупса хуҭĕҫ; епĕ кунти ҫын та мар, епĕ еврей ҫынни, мана кунта атте килĕнҭен вăрласа кўҭĕҫ. Есĕ Фараона йăлăн-ҭĕ, кăлартăр-ҭĕ вăл мана ҫак тĕрмерен!“ тенĕ. Іосиф ка-

ласа панни ҫепӗр тӳрийӗн кӑмӑлне те кайнӑ; вӑл та хӑй тӗлӗкне каласа панӑ Іосифа.

Манӑн пуҫӑм тӑрринҫе виҫ кунтӑ айлӑ ҫилӗ пек-ҫӗ; ҫӑн ҫӳлти ҫинҫе Фараон валли хатӗрленӗ тӗрлӗрен ҫӑкӑр пур пек; ҫав ҫӑкӑра вӗҫен кайӑксем-пыраканӗ пӗри сӑха-сӑха кайаҫҫӗ пек“, тенӗ. Іосиф каланӑ ӑна: „санӑн тӗлӗкӗ ак мӗн пуласса курӑннӑ: виҫӗ кунтӑ-виҫӗ кун вӑл; виҫ кунтан Фараон санӑн пуҫна кастарса таттарӗ. Кӗлеткӳне (ӳтне) йывӑҫ ҫине ҫактарӗ; ҫавӑнта санӑн ӳтне вӗҫен кайӑксем пыраканӗ пӗри сӑха-сӑха кайӗҫ“ тенӗ. Виҫӗ кун иртсессӗн, Іосиф каланӑ пек пулнӑ. Фараон патша пӗрне тӗрмерен кӑларса, каллех ӗлӗкхи вырӑнне хунӑ; тепӗрне пуҫне кастарса таттарнӑ та, йывӑҫ ҫине ҫактарнӑ. Анҫах ырӑ пурнӑҫа кӗрекен тӳре, тӗрмерен тухсассӑн, Іосифа маннӑ; Іосиф вара вӗсенҫен кайран тӗрмере тата икӗ ҫул выртнӑ.

## 9. Іосиф асла тухни.

Іосиф тӗрмере хӗн пурнӑҫра шӑп ӳссе ҫитӗнсе, пысӑк ҫын ӑсӗ кӗриҫҫенех ларнӑ. Вӑтӑр ҫула ҫитсессӗн, тин ӑна унтан тухма Турӑ ҫыр-

нă. Акă йепле пулнă вăл: Турă Фараона икĕ тĕлĕк кăтартнă. Пĕр тĕлĕкĕнҫе Фараон Нил йатлă ҫырма хĕрринҫе тăнă пек. Ҫав ҫырмаран сасартăк пит илемлĕ, мăнтăр ĕнесем, ҫиҫе ĕне сикрĕҫ тухрĕҫ пек те, шыв хĕрринҫи курăка ҫисе ҫӳре пуҫларĕҫ пек. Кăшт тăрсассăн, вĕсенĕн хыҫĕнҫенех, калама ҫук илемсĕр, ырхан ĕнесем, татах ҫиҫҫĕн сиксе тухрĕҫ пек. Ырханнисем мăнтăррисем патне пырса тăҫĕҫ пек те, ҫавăнтах мăнтăррисене ҫийе, ҫийе йаҫĕҫ пек; хăйсем ҫапах та пĕртте тӳрленеймерĕҫ пек: ĕлĕкхи пекех, ырхан ырханах йулҫĕҫ пек“, тенĕ. Унтан кайран ăйхинҫен вăраннă та, кăшт тăрсассăн, татах ҫывăрса кайнă. Ҫывăрса кайсассăн, тепĕр тĕлĕк курнă: пĕр хăмăл ҫиҫĕ тулли, тутă пуҫах кăларнă пек, ҫав хăмăлах тата пушпушă выҫă пуҫахсем-ҫиҫĕ пуҫах кăларнă пек. Ҫиҫĕ выҫă пуҫах ҫиҫĕ тутă пуҫаха ҫирĕҫ йаҫĕҫ пек те, хăйсем выҫă-выҫах йулҫĕҫ пек“, тенĕ. Фараон ирхине ăйхăран вăраннă та, хăй тĕлĕкĕсенҫен пит тĕлĕннĕ. Тĕлĕк ăстисене Египет ҫĕрне пĕрне те хăвармасăр, пурне те хăй патне ҫĕнтернĕ. Икĕ тĕлĕкне те каласа панă

вѐсене: „каласа парӑр ѐнтӗ мана, мӗн пулӑсса курӑннӑ мана ку тӗлӗксем?“ тесе ыйтнӑ вѐсенҫен Фараон. Анҫах ҫӗнтернӗ ӑстасем пӗри те каласа параймаи Фараона ку тӗлӗксене. Хай тӗрмере ларса тухакан аслӑ тӳре ҫавӑн ҫухне Іосифа тин асне илнӗ те, ун ҫинҫен Фараона каласа кӑтартнӑ: „епир тӗрмере выртнӑ ҫухне, унта Пентефрійӗн пӗр ҫамрӑк тарҫи те выртаҫ-ҫӗ; вӑл хӑй пирӗн ҫын мар-ҫӗ, еврей ҫынни-ҫӗ“ тенӗ: „ҫав ҫамрӑк еврей пире тӗлӗксене пит тӳрре кӳрсе каласа парса-ҫӗ: акӑ-вӑл каланӑ пек, епӗ тӗрмерен тухсассӑн, каллех ӗлӗкхи вырӑна ӳкрӗм, санӑн кил-ҫуртна ҫӑкӑр-тӑвар туса леҫекенсеннӗн пуҫлӑхне ҫактарса вӗлерҫӗҫ“, тенӗ.

Патша тӗрмене Іосифа ҫӗнме йанӑ. Іосиф ҫине-пуҫне тирпейлесе, ырӑрах тумтир тӑхӑнтарнӑ та, ҫӗнсе пырса патша умне тӑратнӑ. Фараон патша Іосифа каланӑ: „епӗ икӗ тӗлӗк куртӑм“, тенӗ: „анҫах вӗсене мана никам та каласа паракан ҫук; епӗ сан ҫинҫен, тӗлӗксене ӑста каласа параҫ теннине илтсеттӗм, тенӗ. —„Ѐнтӗ, патша, манӑн тӗлӗксем калама ӑста-

лăхăм-мĕнĕм çук-та, Турă сана хăна, тата санăн халăхна хĕрхенсе, вăл тĕлĕкўсене пĕлтерĕ!“ тенĕ Іосиф Фараона хирĕç. Фараон Іосифа икĕ тĕлĕкне те каласа панă вара. Іосиф патша тĕлĕкĕсене итлесе пĕтерсессĕн, кала пуçланă: „ей, патша! сана Турă тĕлĕкĕнте Хăй малашне мĕн тăвассине кăтартнă. Санăн тĕлĕкўсем иккĕште пĕр йапаланах кăтартаççĕ: çиҫĕ мăнтăр ĕне, тата çиҫе тутă пуçах—вăл çиҫĕ çул тырă-пулă пуласса пулĕ; çиҫĕ ырхан ĕне, тата çиҫĕ выçă пуçах—вăл çиҫĕ çул выçлăх пуласса пулĕ. Акă ĕнтĕ пĕтĕм Египет çĕрĕнҫе çиҫĕ çул тырă-пулă пит татса пулĕ; унăн хыçĕнҫенех тата çиҫĕ çул тырă-пулă пĕртте пулмĕ; етем вара выçăхса çиҫĕ çул ырă курнине ҫисти манĕ“, тенĕ Іосиф. Унтан тата вăл патшана ак çапла ăс панă: „есĕ, патша, çав тырă-пулă пулнă çулсенҫе кирлĕ ҫухлĕ кĕлетсем тутар та, çук çулсем валли тырă хатĕрлеттер; çак ĕçе пăхса тăма пĕр ăслă йĕркелĕ çыннуна суйласа хур!“ тенĕ.

Іосиф сăмахĕсем патша кăмăлне анҫах мар, унăн умĕнҫи улпутсенĕн кăмăлне те кайнă. Фараон халăх йенелле çаврăнса пăхса каланă:

„çакăн пек Турăлă çынна тата тупайă пăр-и?“ тенĕ; унтан тата Іосифа хăйне каланă: „ку тĕлĕксене Турă сана анҫах пĕлтерҫĕ, çавăнпа кунта сантан ăсли те çук ĕнтĕ; манăн килĕм-çуртăм пуçлăхĕ есĕ пулăн; кунтан малашне манăн халăхăм санăн сăмахăнтан тухмĕ; епĕ хам та сантан патшара ларнăран анҫах аслă пулса тăрăп!“ тенĕ. Унтан патша Іосифа илемлĕ пурçăн тумтир тăхăнтарттарнă; хăй пурнинҫи ылттăн çĕррине кăларса, Іосиф пурнине тăхăнтарнă; Іосиф мăйне ылттăн пăлҫăра çакса йанă-та, хăй кӳми хыçĕнҫен пыракан кӳме çинэ ларма хушнă. Іосиф çапла хула урамĕпĕ иртсе пынă, ăна пур те хăлăхсем ӳке-ӳке пуççапмалла пулнă вара. Фараон Іосифа „аслă—аслă“ тӳресемпе тан туса, всенĕн хушшипе кӳртесшĕн пулнă; çавăнпа ăна каҫҫа Пентефрій хĕрне илсе панă. Çапла вара Іосиф ҫисти Египет çынни пулса тăнă.

## 10. Іосиф пиҫҫĕшĕсемпе курнăçни.

Іосиф Фараон хушнă тăрăх, çиҫĕ çул тырăпулă пулнă ҫухне, сумсăр тырă пуçтарнă. Египет çĕрĕнҫи çынсене анҫах мар, йут çĕрти выç-

ҫӑн аптӑранӑ ҫынсене сутмалӑх та тырӑ пулнӑ. Анҫах йут ҫӗртен тырӑ илме пыракан ҫынсене, пӗрне те Іосифран пуҫне сутман, малтан вӗсем ун патне кайса ыйтмалла пулнӑ. Іосиф та питҫӗшӗсемпе ҫак йӗрке тӑрӑх курнӑҫнӑ.

Іаков пурӑнакан Ханаан ҫӗрӗнҫе те тырӑ пулми пуҫланӑ. Іаковӑн ҫими пӗтнӗ. Вӑл Египетре тырӑ сутаҫҫӗ теннине илтнӗ те, аҫисене йанӑ унта тырӑ илме. Киле, хӑйпе пӗрле, Веніамин йатлӑ, ҫи кӗҫӗн ывӑлӗне анҫах хӑварнӑ. Веніамин вӑл Іосифпа пӗр амаран ҫуралнӑ. Ҫав Іосифпа Веніамин амӑшне Іаков пит йуратнӑ. Іаков Веніамина хӑй патӗнҫен ниҫтата йарасшӑн пулман, ӑна вӑл пит сыхласа ӳстернӗ. Ҫул ҫинҫе темӗн пулас, темӗн килес, темӗнле синкер ҫакланас пур, тесе ытти ывӑлӗсемпе йаман ӑна. Іаковӑн вунӑ ывӑлӗ Египетӗн пуҫ хулине тырӑ илме пырса кӗнӗ. Ыйтти йут ҫӗртен пынӑ ҫынсемпе пӗрле Іосиф патне кайнӑ. Унӑн патне кӗрсессӗн, пурте ӑна ҫӗре ӳксе пуҫҫапнӑ. Іосиф питҫӗшӗсене курсассӑнах палланӑ; вӗсем Іосифа паллайман. Іосиф питҫӗшӗсене пӗлмӗш пулса, тӑлмаҫӑ урлӑ сӑнаса тӗпҫенӗ вӗсене: „есир ӑҫ-

тисем?“ тесе ыйтнă.—„Епир Ханаан ҫĕрĕнҷи ҫынсем, кунта епир тырă илме килтĕмĕр“, тенĕ пиҷҷĕшĕсем. Іосиф хайĕн ĕлĕкхи тĕлĕкĕсене асне илнĕ те: „есир ырă ҫынсем мар!“ тенĕ: „есир пирĕн ҫĕре сăнаса ҫўреме килнĕ пулĕ кунта!“ тенĕ.—„Ҫук, епир апла ҫынсем мар, епир кунта санăн ырăлăхă ҫине шанса, санран тырă сутăн илме килтĕмĕр!“ тенĕ пиҷҷĕшĕсем. Іосиф ҫапах та хăй сăмахнех каланă: „есир ҫĕр сăнакансем-тĕр!“ тенĕ. Лешсем каллех: „ҫук, епир ҷăнах та апла ҫынсем мар!“ тесе татсах каласа панă. Іосиф вара: „аҫăр пурăнаĭ-и сирĕн? тата тăванăрсем пур-и?“ тесе тĕпҷенĕ. —„Пирĕн атте Ханаан ҫĕрĕнҷе пурăнаĭ; епир хамăр вуниккĕн пĕр тăван: акă-вуниксĕмĕр-тен-вуннăшĕ ху умăнта тăратпăр; пĕри таҫта ҫухалҷҷĕ, тепри, ҷи кĕҫĕнни, атте патне киле йулҷĕ“, тенĕ Іосифа хирĕҫ.—„Кирек мĕн каласассăн та есир пирĕн ҫĕре вăрттăн сăнаса сўрекенсем-тĕр!“ тенĕ Іосиф пиҷҷĕшĕсене: „епĕ ăна акă йепле пĕлĕп: ҫав кĕҫĕн шăллăра кунта илсе килсе, мана кăтартмасассăн, есир кунтан киле ура йарса та пусаймăр! кусăр, пĕри-пĕри

кайса, илсе килĕр ҫав шăллăра, ыттисене епĕ пурне те тытса йулатăп,—ӡăнĕ-суи ҫăвантан паллă пулĕ вара“, тенĕ те пурне те виҫ куна тĕрмене хуптарнă. Виҫҫĕмĕш кунне Іосиф тĕрмене пынă та: „епĕ Турăран хăратăп ҫав; есир ак мĕн тăвăр: есир тӳрĕ ҫынсем пулсассăн, сирĕн пĕри кунта, тĕрмене йултăр, ыттисем тырă тийесе киле кайăр, килте сирĕн выҫҫăн аптăранă пулĕ:“ тенĕ: тепре килнĕ ӡухне, ҫав кĕҫĕн шăллăра та йертсе килĕр хăвăрпа пĕрле, унсăр пуҫне, есир манăн куҫăма ан курăнăр“, тенĕ.

Іосиф питӡĕшĕсем пĕр пĕринпе калаҫа, калаҫа хуйхăра пуҫланă: „ех! епир Іосифа сутса йанă ҫылăх пирки ку асапа куратпăр пулĕ. Вара епир хамăр куҫăмăрпа вăл куҫ-ҫуллипе пит ҫуса, темĕн пек, тилмĕре, тилмĕре йăлăннине хамăр та куртăмăр ĕҫке, ҫапах та хĕрхенмерĕмĕр ăна, мĕскĕне! акă ĕнтĕ халĕ унăн вырăнне хамăрах хыпса ҫунмалла пултăмăр!“ тенĕ. „Ей тăвансем, апла айкашкаласа ҫылăха ан кĕрĕр, тесе, ҫавăн ӡухнех ӳкĕтлемерĕм—имĕн епĕ сире? Есир ҫапах та мана итлемесĕр, сутса йанă ăна. Халĕ ĕнтĕ акă Турă ҫавăншăн тавăрать

пире!“ тенĕ Рувим йатли. Іосиф ку сăмахсене пурне те, пĕлмĕш пулса, итлесе тăнă. Итлесессĕн, итлесессĕн, кăмăлĕ тулса ҫитнине тўсеймесĕр, пўлĕмне кĕрсе йĕнĕ вара. Унтан тухнă та, Семеон йатлине тĕрмене хуптарнă, ыттисене тыра тийесе калле йанă. Тырăшăн тивĕҫлĕ укҫисене хутаҫҫисене вăрттăн каллех ҭикме хушнă. Ҫапла вара Іосиф пиҭҭĕшĕсĕм тăххăрăн тăврăннă киле. Вĕсем ҫул ҫинҭе пĕр тĕле выртма ҭарăннă. Пĕри ашакне ҫиме парас тесе, хутаҫне салтнă та, хутаҫҫинҭе тырăшăн панă кĕмĕлне курах кайнă; унтан вăл ыттисене те каласа панă; ыттисем те хăйсенĕн хутаҫҫисене салта, салта пăхнă: вĕсенĕн те хутаҫҫинҭе кĕмĕлĕсем пулнă. Пур те тĕлĕннĕ: „ку мĕн кăтартат-ха пире Турă!?“ тенĕ пĕрне пĕри.

Киле таврăнсассăн, мĕн курнине, мĕн илтнине пурне те ашшĕне каласа панă: „Египетри пуҫлăх пире „ҫĕр сăнаса ҫўрекенсем“, тесе, пĕлҭĕ; епир апла ҫынсем маррине ахаҭ ĕненмерĕ вăл; ҭăнне, суйине пĕлесшĕн кĕҫĕн шăллăмăра, Веніамина, хăй патне илсе пыма хушрĕ; унсăрăн пуҫне Ҫемеона парса йамăп—терĕ“, тенĕ Іакова

аҫ̌исем. Унтан вара Египетрен илсе килнӗ тырри не пўлмисене пушата пуҫланӑ. Пурин хутаҫҫинҫ̌ен те кӗмӗлсем сике, сике тухнине курсассӑн, Іаков шартах сикнӗ: „есир манӑн икӗ аҫ̌ана пӗтертӗр: Іосиф та, Семеон та ҫук ӗнтӗ: ҫитменнине тата, Веніамина та илсе кайма шухӑшлатӑр! есир мана апла хуйхӑ ҫине хуйхӑ тӑватӑр!“ тенӗ. Рувимӗ каланӑ: „атте! есӗ Веніамина хам алла пар; епӗ ӑна Египетрен калле илсе килмесессӗн, акӑ манӑн икӗ аҫ̌ама вӗлер вара!“ тенӗ. Аштӗ ӑна хирӗҫ каланӑ: „хӑвӑр кирек мӗн тӑвӑр, анҫ̌ах, темӗн парсассӑн та, Веніамин сирӗнпе пӗрле кайас ҫук: унӑн пиҫ̌ҫ̌ӗшӗ вилни те ҫитӗ халӗ. Сирӗнпе пӗрле кайнӑ ҫ̌ухне, ҫул ҫинҫ̌е ӑна пӗр-пӗр синкер-мӗн лексе, вӑл вилес пулсассӑн, епӗ вара ватӑлмалӑх кунӑмра йӗре-йӗрех вилӗп вӗт!“ тенӗ Іаков.

## 11. Іосиф тӑванӗсемпе тепре курнӑҫни.

Египетрен илсе килнӗ тырри пӗтсессӗн Іаков ывалӗсене татах каланӑ: „кусӑр, аҫ̌амсем, татах Египете кайса тырӑ илсе килӗр!“ тенӗ. Іуда йатлӑ ывӑлӗ аштӗне хирӗҫ каланӑ: „атте!

Египетри пуçлăх пире кĕçĕн шăллăмăртан пуçне урăх куçма та ан курăнăр терĕ. Кĕçĕн шăллăмăра пирĕнпе йарсаççăн, епир Египете кайăпăр та, татах тырă илсе килĕпĕр, унтан пуçне пире пуçлăх куçне курăнма та йурамаст", тенĕ. Іаков татах каланă: „вара есир—пирĕн тата кĕçĕн шăллăмăр пур, тесе мĕшĕн каларăр вăл пуçлăхă? Ех!... аҫамсем, манăн инкекме каланă ăна есир!"... тенĕ. Ывалĕсем ашшăне хирĕç каланă: „вăл пуçлăх пирĕн тĕпе-йăха тĕпҫесе ыйтрĕ: аçăр пурăнат-и? тăванăрсем пур-и? терĕ. Епир, „ăна-кăна" пĕлмесĕр, пурне те тӳррипе каласа патăмăр ăна; апла: кĕçĕн шăллăра та илсе килĕр манăн патма тийесси асра-пилте те çук пирĕн!" тенĕ. Іуда тата хăй каланă ашшĕне: „атте! йар аҫуна пирĕнпе, епир пуçтарăнса кайăпăр та, татах тырă илсе килĕпĕр; вара ху та, аҫамăр-пăҫамăрсем те вилĕмрен хăтăлĕç, ахаҫ епир пурмăрта выççăн вилĕпĕр вĕт!" тенĕ. „Есĕ, атте, ăна, илсе килмесессĕн, хамран шыра, епĕ ăна хам çине шантарса илсе кайатăп ĕнтĕ; ăна сыв халлĕн сан патна çитермесессĕн, санăн умăнта епĕ ĕмĕрех

айӑплӑ пулӑп“ тенӗ. Іаков каланӑ вара: „аплах пулсассӑн, есир, аҫамсем акӑ мӗн тӑвӑр: пирӗн ҫӗрте мӗнле ырӑ ҫимӗҫ ӳсет, ҫавсене пурне те, тӗрлӗрен, куҫҫенеҫе илсе кайӑр ҫав пуҫлӑх валли; тата укҫа та илсе кайӑр; ӗлӗкхи кӗмӗлӗрсене калле парӑр: вӗсем ӑна ӑстумасӑр ҫикнӗ пулӗ сирӗн хуҫтаҫҫӑрсене. Еппин пӗрех хут ӗнтӗ тата Веніамина та илсе кайӑр; ҫав пуҫлӑх кӑмӑлне ҫавӑрса, Турӑ Семеонпа Веніамина калле таврӑнмалла тӑвинҫҫӗ. Мана аҫасӑр-пӑҫасӑр йулма Турӑ ҫырнӑ пулсассӑн, йулам еппин!“ тенӗ.

Унтан вара Іаков ывӑлӗсем парнисене тийенӗ, Веніамина лартнӑ та, кайнӑ каллех Египете, Іосиф патне. Іосиф питҫӗшӗсем хушшинҫе Веніамина курсассӑн, хӑйӗн аслӑ тарҫине пиҫҫӗшӗсене пурне те хӑй пӳртне кӳртме хушнӑ; тата вӗсем валли кӑнтӑрлана апат хатӗрлеме хушнӑ. Лешсем, Іосиф пӳртне илсе кайнӑран шартах сикнӗ: „ку пире хайхи укҫашӑн тытса хуптармаст-ши?“ тенӗ: вӗсем вӑл укҫана пирӗн хутаҫсене, пире йепле те пулса, ҫейелӗхпе, айӑпласа, хӑйсененӗн тарҫисем тӑвасшӑн ҫикнӗ пулӗ ӑна“,

тесе шухăшланă. Пÿрт алăкĕ умне çитерехпе: „итле-ха!“ тенĕ Іосиф тарçине: „епир кунта тырă илме ĕлĕк те пĕрре килсеттĕмĕр; ун ђухне пирĕн акă мĕнле пулђĕ: кунтан тырă тийесе таврăнуçăн, çул çинђе хутаçсем çăварĕнђе сире тивĕçлĕ кĕмĕлсем вырта параççĕ; акă епир çав кĕмĕлсене хамăр алăпа, хамăр каллех илсе килтĕмĕр!“ тенĕ.—„Ан хăрăр! сире вăл укçана аçăр Турри пÿрнĕ, сирĕн ĕлĕкхи укçăр манăн алла çитрĕ!“ тенĕ Іосиф тарçи. Унтан вара Семеона тĕрмерен ђĕнтерсе килтернĕ. Ашакĕсене тирпейлесе çиме панă. Йăла тăрăх Іосиф пиђђĕшĕсенĕн урисене çутарттарнă. Унтан вара Іосиф килессе сиснĕ те, парнисене кăларса хатĕрлесе хунă. Кăнтăрла умĕнђен Іосиф пынă пиђђĕшĕсем патне; лешсем ăна хирĕç пур те ÿксе пуççапнă та, парнисене панă. Іосиф ыйтнă вĕсенђен: „хай, хăвăр каланă, аçăр сыв-и!“ тенĕ. Пиђђĕшĕсем: „сыв-ха, çÿрет-ха“ тенĕ.—„Сирĕн аçăр, вăл, Тура пилленĕ çын!“ тенĕ Іосиф. Пиђђĕшĕсем татах ÿксе пуççапнă Іосифа. Хăйпе пĕр тăван шăллĕне курсассăн: „хай кĕçĕн шăллăр çак-имен сирĕн?“ тесе ыйтнă. Унтан Ве-

ніамина каланă: „сыв пул та, пур пул, аҫам!“ тенĕ. Ăна курсассăн, Іосифăн кăмăлĕ ҫисти тулса ҫитнĕ; куҫ-ҫӳллисем пăрҫа пĕрҫи пек, пăрҫа пĕрҫи пек тумла, тумла ăннă. Ҫапах хăйне паллаттарман пиҫҫĕшĕсене. Тӳсеймесĕр хăйĕн шалти пӳлĕмне кĕрсе йĕнĕ вара. Унтан питне ҫунă та, пиҫҫĕшĕсем патне тухнă: „апат хатĕрлĕр!“ тенĕ тарҫисене. Тарҫисем вăл каласассăн, Іосифа валли пĕр пӳлĕме, питҫĕшĕсене валли тепĕр пӳлĕме, Египет ҫыннисем валли тата тепĕр пӳлĕме апат хатĕрленĕ. Іосиф пиҫҫĕшĕсене йĕркерен, аслинҫен пуҫласа, кĕҫĕннине ҫитетҫен сĕтел хушшине ларта, ларта тухнă. Пиҫҫĕшĕсем унтан шат тĕлĕннĕ. Унтан хăй ҫийекен ҫимене кӳре, кӳре ларттарнă вĕсенĕн умĕсене. Веніамина, ытараймасăр, йалан пиҫҫĕшĕсенҫен пиллĕк хут ытларах партарнă. Ăна Іосиф пиҫҫĕшĕсем Веніамина та, ĕлĕк хăйне курман пек, кураймаҫҫĕ-мар-и? тесе, сăнаса партарнă. Пиҫҫĕшĕсем ҫапла вара ҫинĕ те, ĕҫнĕ те Іосиф патĕнҫе.

Ҫисе тăрансассăн, Іосиф тарҫисене питҫĕшĕсенĕн хутаҫҫисене тырă тултарма хушнă,

тырăщăн тивĕçлĕ укçисене каллех хутаççисем ăшне ҫиктернĕ; унтан тата Веніамин хутаçне вăрттăн хăйĕн кĕмĕл ҫашкине ҫикме хушнă. Іосиф пиҫҫĕшĕсем ирхĕне ирех тăнă та, киле тухса кайнă. Хуларан тухсассăн, вĕсем инçе те кайанман. Іосиф тарçине каланă „кус ҫасрах, хуса çитсе кала çав çынсене! мĕшĕн есир ырра хирĕç усал турăр? те:—мĕн тума манăн хуçанан кĕмĕл ҫашкине вăрларăр; йе вăл сисмĕ терĕре есир! те“, тенĕ Іосиф. Тарçи хуса çитнĕ те, çапла кала пуçланă. Лешсем ăна хирĕç каланă: „вара ку, пирĕн улпут, мĕшĕн пирĕн çинҫен апла калать-ши? Турă сыхлатăр пире апла тăвасран: акă епир ĕлкхи кĕмĕлсене те Ханаан ҫухлĕ çĕртен калле пама, тесе, илсе калтĕмĕр;—епир апла санăн улпутăвăн ылттăнне-кĕмĕлне вăрлас шухăш тытса çўрекен çынсем пулсассăн, вăл кăмĕлсене те калле илсе килмĕтĕмĕр! Акă камăн хутаççинҫен тупăнĕ çав ҫашкă, çавна вĕлермелле, ыттисем пурмăр та санăн улпутувăн тарçисем пулăпăр вара!“ тенĕ. Іосиф тарçи: „йурĕ!“ тенĕ: „камра ҫашкă тупăнĕ, çавă тарçă пулĕ, ыттисем пур те киле кайăр! тенĕ.

Іосиф пиҫҫӗшӗсем тулли хутаҫҫисене ашакӗсем ҫинҫен ҫӗре антара, антара лартнӑ та, хутаҫ ҫӑварӗсене салтнӑ. Іосиф тарҫи йӗркерен шыра пусланӑ. Хай кӗмӗл ҫашкӑ Веніамин хутаҫҫинҫен сикнӗ тухнӑ. Іосиф пиҫҫӗшӗсем пур те шартах сикнӗ; хӑраннипе тумтирӗсене шар! шар! ҫура, сура, пӑрахнӑ. Хутаҫҫисене ашакӗсем ҫине хунӑ та, каллех хулана, Іосиф патне кайнӑ. Іосиф килтен тухса кайайман иккен ха вӑл вӑхӑтра. Вунпӗр тӑван Іосиф патне пынӑ та, ҫӗре ӳксе пуҫҫатнӑ. Іосиф вӗсене каланӑ: „мӗн турӑр вара есир капла? есир мана сисеймӗ терӗр-имӗн?“ тенӗ. Іуда Іосифа хирӗҫ каланӑ: ей, тӳре, мӗн калас ӗнтӗ пир сана? мӗнле йавап тупас? мӗнле тӳрре тухас ӗнтӗ пирӗн?... Нимӗн калама та сук ӗнтӗ пирӗн сана хирӗҫ. Ӗлӗкхи ҫылӑхӑмӑр ҫитрӗ ӗнтӗ пире. Акӑ ку ӗҫ пирки ӗнтӗ епир, пурсӑмӑр та, санӑн тарҫусем пулатпӑр!“ тенӗ. Іосиф татах каланӑ: „Турӑ сыхлатӑр!-мана есир, пурӑр та, кирлӗ мар; ҫашка вӑрлакана анҫах тытса йулӑп епӗ; ыттисем кайӑрах киле, аҫӑр патне!“ тенӗ. Іосиф ку сӑмахсене ӑшӑнҫе усал шухӑш

тытса каламан, вăл пиҫҫĕшĕсене пĕртте систермесĕр, Веніамина хăй патне хăварса, куҫ тулли курса тăранасшăн пулнă. Тата ун ҫухне Іосиф пиҫҫĕшĕсенĕн пурнăҫăпе ашшĕйĕн пурнăҫне пĕлесшĕн пулнă. Іуда Іосиф умнех тăрса, тата калама тытăннă: „ей улпутăм! санăн ирĕкĕ Фараонăннĕпе пĕрех! епĕ тата пĕр-икĕ сăмах калам-ха сана, есĕ уншăн ан ҫилен-ҫĕ мана!“ тенĕ: „есĕ малтан килӳҫĕн акă ҫапла тĕпҫесе ыйтсаттăн пиртен:—аҫăр пур-и? тăванăрсем пур-и?—тесе; епир сана тӳррипе каласа патăмăр:—ватă атте пур, терĕмĕр; тата унăн ватăлмалăх кунĕнҫе ҫуралнă пĕр ывăлĕ пур, терĕмĕр, унпа пĕр тăван тата тепĕр ывăл пур-ҫĕ, анҫах вăл вилҫĕ, терĕмĕр. Апла каласассăн, есĕ пире тепре килнĕ ҫухне, кĕҫĕн шăллăра та илсе килĕр манăн патма, терĕн; унсăр пуҫне куҫма та ан курăнăр, терĕн. Епир есĕ каланă пек турăмăр. Киле таврăнсассăн, епир санăн сăмахусене, пурне те, аттене каласа патăмăр. Пире атте тырă илме санăн патна татах йаҫĕ те, епир ун ҫухне те каларăмăр ăна санăн сăмахусене. Атте пире вара акă мĕн терĕ:—

„вара, аҫамсем, манӑн вӗсем (Іосифпа Веніамин) иккӗш те ватӑлмалӑх кунӑмсенҫе ҫуралнине пӗлместӗр-имӗн? Иккӗшӗнҫен пӗри таҫта кайрӗ ӗнтӗ акӑ: ӑна пӗр-пӗр кайӑк-мӗн ҫисе йаҫӗ пулӗ тесе шухӑшлатӑп: ку куна ҫитрӗм ӗнтӗ, ҫапах та пӗр сасӑ-ҫӗвӗ те ҫук. Есир ку ывӑлма та манӑн куҫӑм умӗнҫен илсе кайсассӑн, тата (ӑҫтан пӗлсе?) ҫитменнине ӑна ҫул ҫинҫе пӗр-пӗр синкер лекес пулсассӑн, есир вара мана ватӑлмалӑх кунӑмра, хуйхӑртсах вӗлерӗр!“ — терӗ. Еппин халӗ епир кунтан киле Веніаминсӑр таврӑнсассӑн, атте вал ҫукне курӗ те, вилӗ те; ҫав хуйха вӑл нийепле тӳсес сук; мӗшӗн тесессӗн, Веніамина атте хӑй ҫунӗ пек курать. Халӗ килӳҫӗн епӗ хам ҫине шантарса илсе килтӗм Веніамина; кунтан, санӑн патӑнтан ӑна калле киле илсе таврӑнмасассӑн, епӗ атте умӗнҫе ӗмӗрех айӑплӑ пулмалла. Манӑн Веніаминран пуҫне киле йепле пырса кӗрес? Йепле атте куҫне курӑнас? Вӑл хыпса ҫуннине курса, йепле ҫӑтса тӑрас манӑн? Ей ырӑ улпутам, унӑн вырӑнне хӑв патна мана хӑвар, вӑл тӑвансемпе пӗрле ватӑ атте патне, киле таврӑнтӑр!“ тесе йӑлӑннӑ Іуда Іосифа.

## 12. Іосиф хăйне пиҫҫĕшĕсене паллаттарни.

Іосиф тӳссессĕн, тӳссессĕн, урăх тӳсеймен вара. „Илсе тухăр кунтан Египет ҫынписене!“ тенĕ тарҫисене. Египет ҫыннисем тухса пĕтсессĕн, Іосиф, тӳсеймесĕр, пит хытă йĕрсе йанă. Унтан тăванĕсене каланă: „вара епĕ Іосиф вĕт!“ тенĕ: „аттем ҫăнах та сыв-и? ҫӳрет-и ха?“ тенĕ. Пиҫҫĕшĕсем, хăраннипе, шап-шурă шурса кайнă; ҫĕлхисем ҫыхлана йулнă: нимĕн ҫĕне те пĕлмен Іосифа хирĕҫ. Іосиф вĕсене: „килĕр хам патмарах, вара епĕ сирĕн шăллăр, Іосиф, вĕт?!“ тенĕ татах: есир мана Египете сутса йатăр; мана Турă пăрахмарĕ, мана сутнăшăн пĕри те ан хуйхăрăр та, ан ӳкĕнĕр те: Турă ҫаплаа ҫырнă пулĕ мана. Кусăр ҫасрах атте патне; каласа кăтартăр мĕн курнине, мĕн илтнине. Вăл кунта пĕтĕм килĕ-ҫурҫĕ, тĕпĕ-йăхăпех куҫса килтĕр, выҫлăх иртесси тата пиллĕк ҫул халĕ. Епĕ Египетре пуҫлăх пулса тăннине те калăр аттене; кунта куҫҫассăн, епĕ ăна „Гессем“ тийекен ҫĕре вырнаҫтарăтăм; есир пурăр-

та çавăнта пурăнăр: вăл çĕр пит аван!“ тенĕ. Çакна каласа пĕтерсессĕн, Іосиф Веніамина ыталаса илнĕ те, уйăрăлаймасăр, пит вăрах йĕнĕ; Веніамин та йĕнĕ. Іосиф вара пур тăванĕсене те ҫуп-тăва, ҫуп-тăва йĕнĕ. Вара „вунпĕр тăванăн“ ҫĕлхисем тин уçăлнă та, Іосифпа калаçа пуçланă. Іосиф патне тăванĕсем килнине Фараон та илтнĕ те, хĕпĕртенĕ; мĕшĕн тесессĕн, Іосифа вăл хăй те, унăн улпуҫĕсем те пит йуратнă. Фараон Іосифа хăй патне ҫĕнтерсе илтернĕ те, ашшĕне, нимĕнне хĕрхенмесĕр, пĕтĕм килĕ-çурҫĕпех Египет çĕрне куçарма хушнă. „Епĕ ăна ҫăн лайăх çĕр парăп!“ тенĕ. Унтан çамрăк аҫасемпе хĕрарăмсене илсе килме хăйĕн лайăх ураписене пара, пара йама хушнă. Іосиф, Фараон каланă пек, ашшĕ патне ырă, ырă, урописене парса йанă, тата çул çинҫе çимелĕх çăкăр вунă ашак çине тийесе йанă.

Іаков ывăлĕсем киле таврăнсассăн, ашшĕне пурне те йĕркипе кала, кала панă: „епир Іосифа куртăмăр, вăл Египетре аслă пуçлăх пулса пурăнат“ тенĕ. Іаков пĕртте ĕненмен. Вăл, Іосиф ăçтата пулин пурăнат пулĕ тесе шухăшласса,

тахҫанах пӑрахнӑ ӗнтӗ. Аҫисем Іосиф сӑмахне теҫӗр хут кала, кала панӑ; унтан Іосиф парса йанӑ ураписене кӑтартнӑ; Іаков ҫӗри лӑштах пулнӑ вара: „ан ҫӗнӗр ӗнтӗ, аҫамсем, хай савнӑ ывӑлӑм халӗ те пурӑнаҫ иккен-ха!... Ҫасрах кайам та, курам ҫавна куҫӑм-туллийех!“ тенӗ савӑннипе.

## 13. Іосиф ашшӗпе курнӑҫни.

Іаков Іосиф хыпарне илтсессӗн, малтан ӗлӗк, авал, аслӑ-ашшӗсем пурӑннӑ ҫӗре Турӑран пиллӗх ыйтма кайнӑ. Турӑ ӑна ҫӗрле курӑнса каланӑ: „ан хӑра, кайах Египете, Епӗ, унта санӑн йӑхна пит ӗрҫетӗп; санӑнпа пӗрле Хам та пырӑп унта; вӑхӑт ҫитсессӗн санӑн йӑхна унтан каллех кӑларӑп“, тенӗ. Іаков Турӑ хушнипе пур аҫи-пӑҫисене, тарҫи-тӗрҫисене пуҫтарса кайнӑ Египете. Мӗн пурӗ вӗсем ун-ҫухне 75-кӗн куҫнӑ. Египет ҫӗрне ҫывӑхарасра, Іаков хӑй килнине систерме Іудана Іосиф патне йанӑ. Іосиф ашшӗне хирӗҫ Гессем ҫӗрне тухнӑ, ашшӗне курсассӑнах ыталаса илнӗ те, нуммайҫҫен йӗнӗ. Іаков ҫун хавалӗпе: „аҫам,

есĕ сывне те пĕлтĕм ĕнтĕ, хăна та куртăм, еппин халех вилес ĕнтĕ манăн!“... тенĕ Іосифа. Іосиф пиллĕк тăванне Фараон патне йертсе кайнă. Фараон вĕсенҫен: „есир мĕнле ĕç ĕçле пĕлетĕр?“ тесе ыйтнă.—„Епир мĕн çамрăкранпах выҫăх-ҫĕрĕлĕх усраса пурăнатпăр. Халĕ выççăн аптăрарăмăр та, кунта килтĕмĕр!“ тенĕ Іосиф тăванĕсем. Унтан Фараон Іосифа каланă: „санăн патна аçупа тавануcем килнĕ мĕн. Египет çĕрĕ санăн аллăнта; ҫăн ырă çĕре вырнаçтар есĕ вĕсене; пурăнҫҫăр вĕсем Гессем çĕрĕнҫе. Хăшне, хăшне, хастарлăраххисене, манăн выҫăхсене пăхакан туса хур“ тенĕ. Унтан Іосиф ашшĕне те йертсе кайнă Фараон патне. Фараон ăна курсассăн „есĕ миçе çулта, старик?“ тесе ыйтнă.—„Епĕ çĕр çинҫе çӳре пуçланни çĕр вăтăр çул ĕнтĕ; çапах та аттем аннем, çулĕсене нуммай çитеймерĕç манăн кун-çулсем!“ тенĕ Іаков.

Іосиф вара хăй тăванĕсене Гессем çĕрне вырнаçтарнă. Унта Рамесес йатлă пуç хула пулнă. Іосиф вĕсене пиллĕк çулҫен хăй çимипе тăрантарса усранă.

## 14. Іов.

Іаков аҫисем пурӑнакан ҫӗр йенҫе, тата „Аравія“ йатлӑ ҫӗр пулнӑ. Ҫав Аравіяра, „Авситидія“ тийекен вырӑнта пӗр Іов йатлӑ пит пуйан ҫын пурӑннӑ. Вӑл пуйанни пӗтӗм таврари ҫӗре сарӑлнӑ. Іовӑн ҫиҫӗпин пуҫ вак выҫӑх пулнӑ, виҫӗпин пуҫ тӗве пулнӑ, пин пуҫ кӳлекен вӑкӑр, пиллӗкҫӗр пуҫ ашак пулнӑ; килӗнҫе темиҫе тарҫӑ ӗҫлесе тӑнӑ. Пуйанлӑхӗнҫен тата ытларах Іовӑн ырӑ ӗҫӗсем те пӗтӗм таврари ҫӗре сарӑлнӑ. Іов вӑл мӗскӗнсене нуммай ырӑлӑх кӑтартнӑ; хӑй пит тӳрӗ ҫын пулнӑ: ӑна ӗмӗрӗнҫе пӗр ҫын та: „Іов капла усал, Іов ҫапла усал“ тесе ҫӑвар уҫса калакан пулман. Унӑн ҫиҫӗ ывӑл, виҫӗ хӗр пулнӑ. Аҫи-нӑҫисем пӗр-пӗринпе пит тӳрӗ пурӑннӑ; ҫӑкӑр-тӑвар йаланах пӗрле ӗҫҫе-ҫинӗ. Пӗр-пӗрин патне пухӑнса ҫыслӑ калаҫкаласа, савӑнса ларнӑ. Іов, аҫисем ҫапла пухӑнса ларнассерен кайран, Турра парне панӑ. Вӗсем, пӗри-пӗри ыйтлашши сӑмах калаҫса Турра кӳрентермен-ши, тесе, шухӑшланӑ вӑл. Кӳрентернӗ

пулсассăн, „Турă каçартăр вĕсене!“ тесе кĕл тунă Турра вĕсемшĕн.

Пĕрре Турă умне Ангелсем пухăнса тăнă; вĕсем хыçĕнђен шуйттан та пынă. Турă шуйттанран: „есĕ ăçтан килтĕн?“ тесе ыйтнă.—„Епĕ çĕр-çинђе çӳрерĕм, пĕтĕм çĕре çавăрса тухрăм“ тенĕ шуйттан.—„Манăн Іов йатлă ђурана куртăн-и? Ун пек ырă, тӳрĕ, таса, çылăхсăр, куçĕр çинђе те тупас çук!“ тенĕ Турă шуйттана.—„Іов та Турра хисеплемесĕр, кам хисеплемелле тата? Есĕ унăн кил-çуртне сыхлатăн, тунă ĕçне малалла йаратăн; выђăхне-ђĕрĕлĕхне, ĕрђететĕн; акă Есĕ унăнне мĕн-пур пуйанлăхне, йури, сăнамаллах, ил-ха, вăл вара Сана çаврăнса та пăхмĕ, хисеплессе йăлтах пăрахĕ“, тенĕ шуйттан. Унтан Турă шуйттана каланă: „акă, еппин, Іовăн ырăлăхне санăн аллуна паратăп, кирек мĕн ту унăн йапалисене, анђах хăй сумне ан çыпçăн!“ тенĕ. Шуйттан ангелсем ушкăнĕнђен тухса кайнă вара.

Пĕрре Іов ађи-пăђисем, пурте, аслă тăванĕ патĕнђе хăнара ларнă. Çавăн ђухне Іов патне пĕр çын килнĕ те: „санăн вăкăрусем мăшăрăн,

мăшăрăн сухара çӳрет-ҫĕç, ашакусем те çавăнтах çикелесе çӳрет-ҫĕç,—сасартăк Савей çыннисем килҫĕç те, тарçусене пере-пере вĕлерҫĕç, вăкăрусене, ашакусене хуса кайрĕç, епĕ анҫах аран тарса хăтăлтăм!“ тенĕ. Ку тарçи сăмахĕсене ыррăн каласа та пĕтерреймен, тепĕр тарçи ҫупса та килнĕ Іов патне: „пĕлĕтрен вут анҫĕ те, санăн вак выљăхусене, тарçусене вĕтелерĕ йаҫĕ, епĕ анҫах ҫĕрĕ йултăм!“ тенĕ. Ку иккĕмĕш тарçи те ыррăн каласа пĕтерреймен хăй сăмахĕсене, тата виççĕмĕш тарçи ҫупса та çитнĕ: „Халдей çыннисем виç-ушкăнпа килҫĕç те, тарçусене вĕлерсе пĕтерҫĕç, тĕвӳсене хуса кайрĕç, епĕ анҫах тарса хăтăлтăм та, ҫасрах санăн патна систерме килтĕм!“ тенĕ. Виççемĕшĕ каласа пĕтернĕ çĕре, тата тăваттăмĕш тарçи ҫупса килнĕ: „санăн ывăлу—хĕрӳсем, пур те, аслă ывăлĕ патĕнҫе хăнара ларат-ҫĕç; сасартăк вăйлă çавра çил тухрĕ те, пӳрте çавăрса илсе, çĕмĕрҫĕ пăрахрĕ! пур те вилсе пĕтрĕç, епĕ анҫах çăлăнтăм та, санăн патна калама ҫупса килтĕм!“ тенĕ.

Іов çак усал хыпарсене пурне те итлесе пĕ-

терсессӗн, ура ҫине тӑнӑ та, хуйхипе ҫийӗнҫи тумтирне шарр! ҫурса пӑрахнӑ, пуҫӗнҫи ҫӳҫне илтерсе йанӑ, ҫӑркуҫланса ларнӑ та, Турра пуҫҫапса каланӑ: „аннемрен ҫарамас ҫуралтӑм, ҫӗр ӑшне те ҫарамасах кӗретӗп ӗнтӗ! Турӑ паҫӗ, Турӑ илҫӗ! Туррӑн йаҫӗ халӗте, кунтан малашне те, ӗмӗрех мухтавлӑ пулса тӑтӑр!“ тенӗ. Іов мӗн тӗрлӗ йывӑр хуйхӑ курсассӑн та, Турра ӳккелесе пӗр сивӗ сӑмах та каламан.

## 15 Іов асап курни.

Пӗлӗт ҫинҫе Турӑ умне Ангелсем татах пухӑннӑ; вӗсенӗн хыҫӗнҫен хай шуйттан татах пынӑ. Турӑ шуйттана каланӑ: „ӑҫтан килтӗн есӗ“? тенӗ. Лешӗ татах: „епӗ ҫӗр ҫинҫе ҫӳрерӗм, пӗтӗм ҫӗре ҫаврӑнтӑм!“ тенӗ. — „Ҫиперех куртӑн-и ӗнтӗ есӗ манӑн ҫурана Іова? Есӗ пӗр айӑпсӑрах мана ӑна пӗтерттересшӗн пултӑн; вӑл авӑ халӗ те ҫав—ҫавах: ырӑ, тӳрӗ, таса, кирек мӗнле ҫылӑхран та айакра тӑрат!“ тенӗ Турӑ шуйттана. Шуйттан Турра хирӗҫ каланӑ: „етем, вӑл хӑй хӗн курмасассӑн, ҫын хӗн курнине йепле те пулса тӳсӗ. Етем вӑл хӑй пурнӑҫне (ҫунне) усрасшӑн

килĕне пĕр шăрпăк йулми таранџџен салатĕ; анџах хăй ўтне-тирне, шăммине-шаккине суран йерниие џăтаймĕ, Сантан писĕ те, Сана хисеплеми те пулĕ вара“, тенĕ. Турă татах каланă шуйттана: „Іовăн ўтне-тирне кирек мĕн ту есĕ, анџах унăн џунне ан тив!“ тенĕ. Шуйттан Іов патне кайнă та, пĕтĕм ўтне-тирне, ҫанне-ҫурăмне ҫара суран анџах туса пăрахнă. Іовăн ўџĕ џĕрĕлех шăршланса ҫĕре пуҫланă. Вăл хула тулашĕнџе, кĕл ҫинџе џўлмек катăкĕпе пўрĕсене хыркаласа ларнă. Ҫаварĕнџен пит йывăр шăршă кĕнĕ; ҫавăнпа Іов патне кўрши-аршисем, пĕлĕшĕсем, хăйĕн арăмĕ те пыма йĕрĕннĕ. Пĕрре арăмĕ ун патнерех пынă та: „есĕ халĕ ҫапах та ырă пурнăҫна пăрахмастăн! Пăрах Турра: ан хисепле ăна! Вăл сана вара Хăйех вĕлерĕ: капла асапланиџџен, вилни ырăрах пулĕ!“ тенĕ. Іов арăмне каланă: „вара санăн ăсă пур-и? сук-и? Епир Турăран ырăлăх илме йурататмар ĕҫке: халĕ ĕнтĕ асапне те тўсес пулат!“ тенĕ. Іов ку асапĕнџе те Турра ўккелесе пĕр сăмах та каламан.

Іов џирпе асапланса выртнине унăн виҫĕ йул-

ташĕ илтнĕ те, ăна йăпатасшăн пулса, пынă унăн патне. Пынă ҫухне вĕсем Іова айакранах курнă; анҫах ăна паллайман вĕсем: Іов унҫухне пĕртте ҫĕрĕ ҫын йевĕрлĕ пулман. Вĕсем ăна курсассăн, шари! кăшкăрса йĕрсе янă, ҫĕрисем ҫăтайман пирки, тумтирĕсене ҫура, ҫура пăрахнă, хăйсенĕн пуҫĕсем ҫине хăйăр сапнă та, Іов тĕлне ларнă; ҫиҫĕ кун, ҫиҫĕсĕр пĕр тĕнмесĕр ларнă. Унтан вара Іов хуйхăрса каланă: „мана Турă ку асапа курма ҫырна пулсассăн, мĕшĕн ĕлĕк кун ҫутти курма панă-ши?“ тенĕ. Йулташĕсем вара унпа калаҫа пуҫланă. Вĕсем Турă Іова пĕр-пĕр ҫылăхĕшĕн хĕн кăтартаĭ пулĕ, тесе, шухăшланă. Ҫапла кала-кала Іовăн ҫĕрине тиверне. Іов вĕсене хирĕҫ каланă: „ку асапа епĕ ҫылăхăм пирки курмастăп; Турă хăш-хăш етеме пит йывăр асап йараĭ, хăшне-хăшне телейлĕ пурăнăҫ параĭ!“ тенĕ. Лешĕсем ҫапах та хăйсенĕннех каланă, Іов сăмахне ĕненмен. Іов вара йулташесенĕн хурлăхне тӳсеймесĕр, Турра йăлăна пуҫланă: „ей Турă, епĕ Санăн умăнта айăпсăрне, Есĕ мĕнле те пулин кăтарт-ҫĕ ҫаксене!“ тенĕ.

Турă Іов патне ҫавра ҫил пулса аннă та,

кӑлӑх паллӑ ыйтнӑшӑн ӳккеленӗ ӑна. Ҫапах та йалан Хӑй ҫине хытӑ шанса тӑнӑшӑн йуратнӑ ӑна. Іов йулташӗсене, Іова кӑлӑх хурлантарнӑшӑн, айӑпланӑ. Турӑ вӗсене Іова тархаслама хушнӑ, Іов вӗсемшӗн кӗл-тутӑр тесе. Іов йулташӗсемшӗн Турра кӗл-тунӑ, Турӑ вара унӑн йулташӗсенӗн айӑпне каҫарнӑ. Унтан кайран Турӑ Іова ҫас ҫӗртнӗ; Ӗлӗк ҫухалнӑ йапалисемшӗн халӗ икӗ-виҫ хут нумай панӑ. Іов ҫӗрӗлсесӗн, унӑн патне унӑн тӑванӗсем, пӗлӗшӗсем пынӑ; пыраканӗ пӗри куҫҫенеҫе пӗр пӗр йапала илсе пынӑ. Выҫӑх-ҫӗрӗлӗх те ӗлӗкхинҫен икӗ хут нумайланнӑ. Каллех унӑн ҫиҫӗ ывӑл, виҫӗ хӗр ҫуралнӑ. Асапӗсенҫен кайран, тата ҫӗр-хӗрӗх ҫул пурӑннӑ. Пит ватӑлса вилнӗ вӑл. Ывӑлӗсенӗн ывӑлӗсем авланса, аҫалӑ-пӑҫалӑ пулиҫҫенех пурӑнма Турӑ ҫырна ӑна.

## Ҫырӑва пӗлме Турӑ ӑнлантарат̆.

Икӗ таса ҫыннӑн, Кириллпа Маріенӗн Варфоломей йатлӑ ывӑлӗ пулнӑ. Вӑл ҫиҫӗ ҫула ҫитсен, ашшӗсем ӑна ҫырӑва вӗренме панӑ. Варфоломей наҫар вӗреннӗ, ҫавӑнпа ашшӗпе

амăшĕ пит хуйхăрнă. Вĕрентекен вĕренейменшĕн кĕненĕ ăна, ашшĕсем кунĕ кунĕпе кала, кала вĕренме хушнă ăна; вăл хăй пĕртте ӳркенмен, мĕн пур вăйĕпе тăрăшса вĕреннĕ, анҫах ҫапах ҫырăва ăнланайман. Варфоломей пĕҫĕкҫĕ ҫухнех Турă пулăшмасăр нимĕн ĕҫ аван пулманнăне пĕлнĕ. Пĕр вăхăтра Варфоломей, хăй ҫырăва ăнланайманшăн хуйхăрса, вăрманта пĕҫҫен ҫӳренĕ; ҫавăн ҫухне вăл монаха курнă. Вăл монах йывăҫ айĕнҫе Турра кĕл-туса тăнă. Ăслă аҫа ҫаранна, вăл кĕл-туса пĕтериҫҫен кĕтсе тăнă. Турă ҫынни кĕл-туса пĕтерсен, Варфоломей ун патне пынă та, пуҫ ҫапнă ăна. „Мĕн кирлĕ сана, аҫам?“ тесе ыйтнă монах. Аҫа каланă: „епĕ ҫырăва вĕренетĕп те, анҫах наҫар пĕлетĕп, вĕрентекен каланăне ăнланаймастăп, ҫавăнпа епĕ пит хуйхăратăп, хам мĕн тăвасса пĕлместĕп. Святой атте, йăлăнатăп епĕ сана, кĕл-ту маншăн Турра, Вăл санăн таса кĕллӳшĕн мана пулăшса, ăн патăрҫҫĕ“, тесе каланă Варфоломей. Турă ҫынни кĕл-туса, Святой хĕреспе пилленĕ те, таса аҫана каланă: „ĕнтĕ Турă ҫырăва вĕренме ăн парĕ сана“,

тенĕ. Ҫăнах Варфоломей ҫавăнтан вара ĕлĕкхи пекех тарăшса вĕренме тытăннă та, ҫасах кĕнеке вулама вĕреннĕ. Вăл Туррăн Святой кĕнекисене вулама йуратнă, уншăн аҫа вăйисене те пăрахнă вара. Мĕн ӳспĕҫеммĕн, ҫавăн ҫухлĕ ытларах Святой кĕнекесене вулама тытăннă, вĕсем ҫинҫен Турăран хăрама, Турра йуратма, Турă хушнăне итлесе пурăнма вĕреннĕ. Унтан вара Варфоломей монаха кĕнĕ. Монаха кĕрсен Варфоломейе Сергій йатлă хунă. Монаха кĕрсен, кирек камăнне те йатне улăштарса, урăх йат параҫҫĕ.

Варфоломей хăй Сергій йатлă монах пулсассăн, Турă умĕнҫе аслă, йурăхлă ҫын пулнă. Вăл ырă пурăнăҫпă пурăнса, нумай ҫынсенĕн ҫунĕсене ҫăлма вĕрентнĕ; вăл кĕл-тунипе пирĕн пур патшалăх та асапран хăтăлнă. Вилсессĕн те Турă унăн ӳтне ҫĕрмелле мар тунă. тĕлĕнмелле ĕҫҫем тумалла тунă; халĕ те вăл ҫӳлте, пĕлĕт ҫинҫе, хăне астуса, хисеплесе таракансемшĕн Турă умĕнҫе ҫарăнмасăр кĕл-тăват. Ҫавă Преподобный тĕлĕнмелле ĕҫҫем тăвакан Сергіене сентябĕрĕн 25 кунĕнҫĕ, тата

іюлĕн 5 кунĕнҫе астуса хисеплеҫҫĕ; унăн ҫĕрмесĕр тăракан ӳҫĕ Москавран инҫе мар, Троицкій Лавра тийекен монастырте выртаť.

Ей Преподобный Сергій атте! кĕл ту пирĕншĕн Турра, санăн Святой кĕллӳшĕн Турă Хайĕн ҫыруне пĕлме ăнлантартăр-ҫĕ пире, Хай хушнине итлесе пурăнма вĕренттĕр-ҫĕ пире.

## Ҫиркĕве кĕрсен кĕл-туса пĕтериҫҫен тăма кирлĕ.

Пĕр ҫук ҫын пулнă, унăн арăмĕпе пĕр ывăлĕ пулнă, вăл хăй пит йăвашı, лайăх ҫын пулнă; анҫах вăл йенҫе пит хытă выҫлăх пулнă та, вĕсенĕн ҫиме ҫăкăри те ҫитмен. Вăл ҫын хăй ҫемийĕне тăрантарма урăх май тупаймассăр ывăлне каланă: „ей аҫам, сана пĕр пĕр хуҫана тарҫа памасан, епĕ хамăра тăранса пурăнма май тупаймастăп“, тенĕ. Ывăлĕ каланă: „епĕ сан сăмахна йалан кăмăлпа итленине пĕлетĕн есĕ, ху йепле шухăшлатăн, ҫапла ту мана“, тенĕ. Апшĕ ывăлне тарҫа панă; пиллесе йана ҫухне, каланă ăна: „акă, аҫăм, ман ӳкĕтĕм сана ҫакă: кĕлĕ вăхăтĕнҫе ҫиркĕве каймасăр ан йул,

кайсан кӗлӗ пӗтмесӗр ҫиркӳрен ан тух!“ тенӗ. Вӑл аҫа хуҫа патӗнҫе пурӑннӑ ҫух хуҫине те пит тӑрӑшса ӗҫ тунӑ, кӗлӗ пулма-ссерен ҫиркӗве кӗлле те кайнӑ. Ҫав хуҫанӑн арӑмӗ хӑйсенӗн пӗр тарҫипе савӑшса пурӑннӑ, ӑна ку ҫӗнӗ кӗнӗ ҫук ҫын аҫи пӗлнӗ; ҫавӑнпа хуҫа арӑмӗ кӑна пӗтерме шухӑшланӑ. Вӑл упӑшкине елекленӗ: „ҫӗнӗ тарҫӑ сана вӗлерес тесе шухӑшлаҭ“, тенӗ. Вӑл арӑмӑн упӑшки, ҫав хуҫа, ӗҫне ыйтса пӗлмесӗрех, пӗр тӳрене тӗл пулнӑ та, каланӑ: „епӗ сан патна пӗр тарҫӑма тутӑр парса йарӑп, есӗ ун пуҫне касса татса, тутӑр ҫине ҫӗркесе хур; тепӗр тарҫӑм пырсан тутӑрпа лешинӗн пуҫне парса йар“, тенӗ. Ҫав ҫӗнӗ кӗнӗ ҫук йӗкӗте тутӑр парса йанӑ: йарсан, вӑл хуҫи хушнине, нимӗн пӗлмесӗр вилӗме кайнӑ. Кайнӑ ҫухне вӑл ҫиркӳ умӗнҫен иртсе каймалла пулнӑ, вӑл вӑхӑтра ҫиркӳре кӗлӗ пулнӑ; ҫиркӳре кӗл-туса йурланине илтсен, вӑл ашшӗ пилленӗ ҫухне каланӑ сӑмахсене асне илнӗ те, ҫиркӗве кӗлле кӗнӗ. Унта вӑл кӗлӗ пӗтиҫҫенех тӑнӑ.

Пӑртакҫӗ тӑрсан хуҫисем тӳре патне каҫҫӑн

пуҫне илсе таваќранма айаќплаќ тарҫине йанаќ. Ваќл тарҫаќ ҝиркуќ патеќнҝен иртсе кайнаќ ҝухне ҝиркеќве паќхса тухам халҌ тесе ҝиркеќве кеќнеќ; ҫаваќлте йулташне курсан, ыйтнаќ унтан: „туќре патне кайраќн-и?“ тесе. Лешеќ каланаќ: „кайман халҌ, кеќлеќ пеќтиҝҝен таќрас килет, есеќ ман выраќна ҫак тутаќра леҫме кай-ҝеќ, епеќ сан выраќнна хиреќҫ меќн каланине ыйтма кайаќп“, тенеќ. Айаќплаќ тарҫаќ тутаќра илсе кайнаќ: туќре, аќна-каќна пеќлмесеќр, тутаќр илсе пыракан тарҫаќнаќн пуҫне кастарнаќ. Кеќлеќ пеќтсен, пуҫне кастарма тесе йанаќ тарҫи туќре патне меќн хушеќ, меќн калеќ тесе хыпар илме пынаќ; пырсан туќре аќна тутаќр ҫине ҝеќркесе темеќн панаќ; ку тарҫаќ тутаќр синҝи йапалана пеќртте паќхмасаќр илсе таваќраннаќ та, хуҫине панаќ. Хуҫисем ваќл сываќ халлеќн таваќраннине, тутаќр ҫинҝе хаќйсенеќн савнаќ тарҫийеќн пуҫне курсан аптранаќ. Унтан вара ку еќҫ йеќпле пулҝеќ тесе ыйтса пеќлнеќ; ҫаваќн ҝухне вара веќсем, Тураќ айаќпсаќр ҫынна сыхласа, айаќплине веќлернине аќнланаќ.

# ЧУВАШСКАЯ АЗБУКА:

**А а, Ӑ ӑ, У у, Ы ы, Е е, Ӗ ӗ, Ӳ ӳ, И и,
Й й, В в, Л л, М м, Н н, Ӈ ӈ, Р р, С с,
Ç ç, К к, Ш ш, Т т, Ђ ђ, П п, Т т̌.**

# РУССКАЯ АЗБУКА:

**А а, Б б, В в, Г г, Д д, Е е, Ж ж, З з,
И и, І і, К к, Л л, М м, Н н, О о, П п,
Р р, С с, Т т, У у, Ф ф, Х х, Ц ц, Ч ч,
Ш ш, Щ щ, ъ, ы, ь, Ѣ ѣ, Э э, Ю ю,
Я я, Ѳ ѳ, Ѵ ѵ, й.**

## О.

он, сон, сок, вот, кот, тот, пол, кол, ком, нос, м**ы**ло, ш**и**ло, сов**а**, **о**лово, вин**о**, п**и**во, рот, вол, лом, пот, стол, нор**а**, сох, сот, к**о**лос, сл**о**во, окн**о**, вор**о**на, вор, сосн**а**, крыл**о**, м**о**ре, сом.

---

*Черными буквами означены ударенія.*

## я=йа.

я, яма, яр, моя, шея, пояс, твоя, мясо, воля, Коля, пуля, Ваня, няня, мяли, тяну, тятя, Митя, Вася, Катя, умылся, молился, время, вымя ясно, спорят.

## ю=йу.

юла, мою, мою, твою, рою, вою, пою, хаю, кую, свою, колю спорю.

## д, Д.

Да, дай, дуй, дом, тоска—доска, плоты,—плоды, путы—пуды, трутом—трудом, душа—туша, там—дам, тятя—дядя, таю—даю, соты—сады, дым—тын, иди, ходи, дерево, вода, надо, сюда, туда, дрова, куда, худой, люди, сиди, веди.

Дай доску.—Дуй на воду.—Дядя куда ходил?—Дуня, иди домой.—Кому надо воды?—Туда не ходи, там дымно.—Мой дом стоит около сада.—Я Ивану дам перо.—Ведро стоит на полу.

## г, Г.

Кора—гора, икра—игра, кот—год, колос—голос, укол—угол, холод—голод, кол—гол, криво—грива, моху—могу, туго—дуга, кости—гости, Лука—луга, храм, голова, град, гулял, гиря.

Высокая гора.—Древесная кора.—Кот упал на пол.—Плохой год.—На лугу ходит корова, у коровы рога.—У Герасима голос тонок.—Ходил на гумно, искал колос.—Красит рака горе.—Дуга крива, линейка пряма.—Не гони коня кнутом, а гони овсом.

## б, Б.

Папа—баба, пыл—был, пил—бил, пот,—бот, плоха—блоха, пух—бух, опух—обух, пашня—башня, Бог, брат, бок, бык, баня, баран, бой, борона, борода, башмак, бор, бери, греби, руби, булка, бутылка, банка, бумага, губа, труба, верба, грибы, серебро, бобы, дубовый, грубый, бурый, буланый, буква, бритва, буди, балка, люблю, любят, не брани, блины.

Баба шила шубу.—Бог нас любит.—Мой брат рубит дрова.—Мы топили баню.—Вася, греби.—Маша, люби няню.—Катя, лупи картошку.—Коля, дай Ивану бумаги.—У нас были гости и пили пиво.—Бык наш стар.—Я собаку ударил обухом.—Он опух.—Рыбы было много.—Гони барана со двора.—Бороной боронятъ.

3.

Лиза—лиса, коса—коза, запор—забор, роса—роза, сад—зад, язык, глаза, заря, базар, озорник, везу, изба, зима, зерно, замок, узел, злой—слой, зубы, назад, Захар, закон, забота, дозор, риза, запон.

Лиза, береги зубы,—Лиса хитра,—Мы сегодня варили суп.—Запором запирают ворота.—Двор и огород обносят забором.—У нас по середам бывает базар.—Мы сюда шли по задам.—Гриша озорник, за то и не любят Гришу.—Наша земля велика, народу на ней много.—У дяди Бориса была злая собака.—Коза любит капусту.—Пала роса на землю.—У кума

коса острая.—Настала зима, пошли холода.—Сундук заперт замком.

### Ъ, Ь.

Въ, къ, изъ, подъ, надъ, съ, отъ, объ.

Уголъ, уголь, пылъ, пыль, конъ, конь, сталъ, сталь, колъ, полъ, споръ, спорь, макъ, ракъ, клопъ, ларь, лось, путь, будь, кровать, косарь, локоть, лохань, моль, нуль, объяснить, объявить, съютить, тьма, ольха, Ольга, львы, льды, только, сколько, пять, шесть, шестъ, ель, мель, зять, мать, пить, плеть, ртуть, семья, друзья, стулья, ульи, братья, свинья, скамья.

### Ч.

Лучъ, калачъ, бичъ, ночь, печь, силачъ, чашка, чугунъ, чуть, чудо, очи, куча, богачъ, палачъ, ключъ, ручей, кучеръ, чума, вечеръ, черта, чего? что? къ чему? часто.

Я выпилъ чашку чаю.—Мальчики вечеромъ играли въ чушки.—Мы часто играемъ въ лап-

ту.—Чьи это ключи? Корова умерла отъ чумы.—Весной къ намъ прилетаютъ ласточки.—Что вы спите?—Ученикъ провелъ прямую черту.—Кузьма учится хорошо.—Чугунъ поставили въ печь.—Пришла ночь, легли спать.—Миша писалъ, а Павелъ читалъ.—Кучеръ поилъ лошадей.—Дышу чистымъ воздухомъ.

## Ж.

Саша—сажа, шить—жить, шарь—жарь, машу—мажу, тушу—тужу, жукъ, живой, женихъ. жилетъ, мужикъ, кожа, рогожа, жиръ.

Жукъ жужжитъ.—Мажу сажей кожу.—Мы съ Сашей гуляли въ саду.—Я тушу огонь.—Шубу потерялъ, вотъ и тужу.—Я очень хорошо вижу.—Жевать не могу: зубы болятъ.—Въ самое жнитво случился пожаръ.—Чужаго не бери.

## Ц.

Лицо, улица, курица, яйцо, купецъ, отецъ, царь, церковь, царица, свинецъ, царапать, си-

тецъ, масляница, овца, цыганъ, солнце, огурецъ, перецъ, рукавица.

Наша улица широкая.—Рябая курица снесла яйцо.—Мой отецъ ходилъ въ церковь.—Купецъ на двадцать рублей купилъ перцу.—На масляницу пекли блины.—Изъ свинца льютъ пули.—Маша сшила ситцевую рубашку.

## Щ.

Вещь, лещъ, свищъ, помощь, щи, щека, щука, пища, роща, тащи, гуща, щенокъ, ящикъ, ямщикъ, щавель щепка.

Линейка, карандашъ, бумага—учебныя вещи.—Щука тащитъ леща.—Павелъ, тащи щи на столъ.—Щи и каша—пища наша.—Отецъ рубитъ дрова, щепки летятъ въ сторону.—Роща шумитъ,—Щавель киселъ.

## йо=ё.

ёжъ, ёлка, моё, твоё, своё, куёмъ, поёмъ, идётъ, кладётъ, тёща, тётка, лёдъ, мёдъ, пёсъ, нёсъ, тёсъ, рёвъ, дёрнъ, шёлкъ, жёлтый, чёр-

ный, льёмъ, пьёмъ, шьёмъ, ружьё, копьё, старьё, семья, съёмъ.

Ёжъ ползётъ.—Собрались мальчики на ёлку.—Это перо моё, а то твоё.—Неси сюда подъёмъ, подмажемъ колеса.—Пастухъ идётъ за стадомъ и весело поётъ.—Пришла тёща въ гости.—Мёдъ сладокъ.—Тёсомъ кроютъ крыши.—Сторожъ мёлъ полъ.—У дяди Ивана былъ пёсъ-Борбосъ.

## ф.

фартукъ, шкафъ, .фунтъ, штрафъ, футъ, филинъ, Софья, графинъ, фонарь, февраль, фуражка, фабрика, грифель, графа, кафтанъ, флагъ, картофель, Варфоломей.

## ѳ.

Ѳома, Сиѳъ, Ѳёдоръ, Ѳёкла, Матѳей, Ѳедулъ.

## і (и).

Линія, чтеніе, Іюль, Іюнь, молнія, счастіе, синій, горькій, пріучать, растеніе, Іуда, Іосифъ, Іудей. Міръ, Владиміръ.

## ѣ=(йе).

ѣлъ, ѣхалъ, ѣзда, бѣлый, цвѣтъ, свѣтъ, дѣдъ, лѣто, рѣка, нѣтъ, сѣно, рѣпа, тѣнь, цѣпь, цѣпъ, хлѣбъ, бѣда, пѣлъ, пѣніе, мѣсяцъ, пѣна, телѣга, пѣсня, мѣра, снѣгъ, тѣсто, тѣсно, гнѣздо, звѣзда, сѣдло, лѣсъ, вѣсы, мѣна, мѣлъ, дѣти, Алексѣй, Сергѣй.

Я ѣлъ хлѣбъ.—Ямщикъ ѣхалъ на тройкѣ.—Весной и осенью ѣзда плохая.—Мнѣ дали чаю, а тебѣ нѣтъ.—Дѣти пошли въ лѣсъ собирать цвѣты.—Бѣлка орѣшки все грызётъ.—У меня на тѣлѣ шуба, а на шеѣ бусы.—Тёлку заперли въ хлѣвъ.—Рѣпа растётъ въ огородѣ.—Хлѣбу мѣра, слову вѣра.—Мѣсяцъ свѣтитъ по ночамъ.—Алексѣй и Сергѣй сѣли на сѣно и запѣли пѣсню.

---

Жду. Жму. Жгу. Жну. Жбанъ. Гдѣ. Здѣсь. Сдѣлалъ. Поглядѣлъ. Здравствуй. Захаръ. Жгли. Драть. Вздыхать. Вздуть. Задремалъ. Сгрёбъ. Задохнулся. Вздрогнулъ. Вздёрнулъ.

Грабли. Ноздря. Возлѣ. Ржаной. Дрожжи. Деревянный. Русскій. Классъ. Синяя. Желѣзо. Звать. Жать. Двинуть. Двадцать. Два. Девять. Пятьдесятъ. Шестьдесятъ. Семьдесятъ. Восемьдесятъ. Двѣ. Двѣсти. Розга. Разжалъ.

# Молитвы утреннія.

### Во имя Отца.

Ашшĕйен, Ывăлĕйĕн, Святой Сывлăшĕйĕн йаҕĕпе амин.

### Молитва мытаря.

Ей Ҭурӑ, хĕрхенсем мана çылăхлăскерне.

### Молитва къ Сыну Божію.

Ей Турӑ, Турӑ Ывăлĕ, Іисус Христос! Санăн ҕăн таса Аннӳпе мĕн пур святой çынсем кĕл-тунăшăн çырлах пире, амин.

### Слава Тебѣ Боже нашъ.

Мухтав Сана, пирĕн Турӑ, мухтав Сана.

### Царю Небесный.

Ей çӳлти Патша, Есĕ ҕуна лăплантаратăн,*) Есе тӳре Сывлăш, Есĕ пур çĕрте те пур, Есĕ пурне те пултаратăн, пур ырăлăх та Сантан тухаѓ, ҕĕрĕлĕх те Есĕ паратăн: пирĕн ăша кĕрсе вырăнаç, пур усалтан та тасат пире, ырă Турӑ, пирĕн ҕунсене çăл.

*) Канăçлантаратăн.

### Святый Боже.

Святой Турă, Святой Хăватлă, Святой Вилĕмсĕр, çырлах пире (3 хут).

### Слава Отцу.

Мухтав Ашшĕне, Ывăлне, Святой Сывлăшне, халĕ те, кирек хăçан та, ĕмĕр ĕмĕрех, амин.

### Пресвятая Троице.

Ѣăн таса виçле*) Турă, çырлах пире. Ей Турă, çылăхран тасат пире; ей Патша, епир йĕркесĕр пурăннине каçар; Ей Святой Сывлăш, Ху йатушăн пире вăйсăрскерсене тӳрлет.

### Господи помилуй.

Ей Турă, çырлах (3 хут).

### Слава и нынѣ.

Мухтав Ашшĕне, Ывăлне, Святой Сывлăшне, халĕ те кирек хăçан та, ĕмĕр ĕмĕрех, амин.

### Отче нашъ.

Ей çӳлти Аттемĕр, Санăн йату хисеплен-

---

*) Виç ипостаçлĕ. Виçлĕ ближе передаетъ русское слово „Троица“.

тĕр, Санăн патшалăху килтĕр, Санăн ирĕкӳ ҫĕр ҫинҫе те ҫӳлти пекех пултăр; пайан пурăнмалăх ҫăкăр пар пире; епир хамăра парăмлă пулнисене каҫарнă пек пирĕн парăмсене каҫар пире, ҫылăха ан кӳрт пире, усалтан хăтар пире.

## Тропари троичные.

Ей хăватлă, ырă Турă, ҫыврăса тăрсан Сана пуҫҫапатпăр, ҫунтан Сана Ангел йурри йурлатпăр: ей Святой, Святой, Святой Турă, Турă Амăшĕ кĕл-тунипе ҫырлах пире, тесе.

## Мухтав:

Ей Турă, Есĕ мана ырăн ҫинҫен сывă тăратрăн, халĕ ĕнтĕ ҫĕремпе шухăшăмсене тасат, Сана виҫлĕ Турра мухтаса йурлама ҫĕлхеме уҫăлтар: ей Святой, Святой, Святой Турă, Турă Амăшĕ кĕл-тунипе ҫырлах пире.

## Халĕ те:

Аслă Тӳре сут-тума сасартăк килсен, мĕн тунисем пурăмăрăн та уҫă курăнĕҫ, ҫавăнпа хăраса ҫур-ҫĕртех ҫĕнсе калар: ей Святой,

Святой, Святой Турă, Турă Амăшĕ кĕл-тунипе
çырлах пире, тесе.

Ей Турă, çырлах (12 хут).

## Отъ сна воставъ, благодарю Тя.

Ей таса виç-ипостаçлĕ Турă, епĕ çывăрса
тăрсан Сана тав-туса пуççапатăп, Есĕ нумай
тӳсĕмлĕ, ырă кăмăлупа мана найана, çылăхлă-
скерне çиленсе, тунă çылахăмсемпех пĕтерме-
рĕн, Ху çынна йуратнă тăрăх, мана тăрас
çук çĕртен тăратрăн; ирхи кĕлле тăрса Хăвăн
хăватна мухтамалла турăн. Халĕ ĕнтĕ манăн
шухăшăмсене тасатса ђĕлхеме уçăлтар, епĕ
вара Санăн сăмахусене вĕренем, Есĕ кăтартнă
йĕркене ăнласа илем. Ху хушнине тума тытă-
нам. Сана ђунтан аслăласа йурлам, Санăн ђăн
таса йатна: Ашшĕне, Ывăлне, Святой Сыв-
лăшне мухтаса йурлам, халĕ те, кирек хăçан
та, ĕмĕр-ĕмĕрех, амин.

## Пріидите поклонимся.

Килĕр, Патша Туррăмăра пуççапар; килĕр,
Христоса, Патша Туррăмăра ӳксе пуççапар;

килĕр, Христоса, Патша Туррăмăра Хăйне ӳксе пуççапар.

## Символъ Вѣры.

1. Пĕр Атте Турра ĕненетĕп, Вăл пурне те тытса тăрат; пĕлетпе çĕре, курăнаканнипе курăнманнине пурне те Вăл пултарнă, тесе. 2. Тата пĕр Іисус Христос Турра ĕненетĕп. Вăл Туррăн пĕртен пĕр Ывăлĕ, Вăл пур ĕмĕртен малтан Ашшĕнҫен çуралнă; Вăл çутăран çутă тухнă пек ҫăн Турăран çуралнă ҫăн Турă, Ăна пултарман, Вăл çуралнă, Вăл Ашшĕпе пĕрех, пур те Ун урлă пулнă, тесе. 3. Вăл пире, етемсене çăласшăн çӳлтен анса, Святой Сывлăш хăваҫĕпе Марія Хĕртен ӳтленсе çын пулнă, тесе. 4. Понтій Пилат вăхăтĕнҫе Ăна пирĕншĕн хĕрес çумне пăталаса, асаплантарса, вĕлерсе пытарнă, тесе. 5. Турă çырăвĕнҫе çырнă пек, Вăл виççĕмĕш кунне вилĕмрен ҫĕрĕлсе тăнă, тесе. 6. Вăл пĕлĕт çине çĕкленсе Ашшĕйĕн сылтăм йенне ларнă, тесе. 7. Вăл ҫĕррисене те, вилнисене те сут-туса уйăрма аслăлăхĕпе тата килмелле, Унăн патшалăхĕ нихçан та пĕтес çук, тесе. 8. Тата Святой

Сывлăш Турра ĕненетĕп, Вăл ҫĕрĕлĕх парать, Ашшĕнҫен тухать, Ăна Ашшĕпеле, Ывăлĕпеле пĕрле мухтаса пуҫҫапмалла; пророксене Вăл калаттарнă, тесе. 9. Ҫиркĕве ĕненетĕп, Вăл пĕрехҫех, таса, пĕтĕм ҫĕр ҫинҫе пĕрре анҫах, Вăл Апостолсенҫен йулнă, тесе. 10. Ҫылăха каҫарттарасшăн пĕрре анҫах тĕне кĕмеллине пĕлетĕп, 11. Вилнĕ ҫынсем ҫĕрĕлсе тăрассипе, 12. Леш тĕнҫере ĕмĕр ĕмĕрех пурăнассине кĕтсе тăратăп. Амин.

## Молитва 1-я св. Макарія Великаго.

Ей Турă, мана ҫылăхлăскерне тасатсам, епĕ Санăн умăнта пĕр ырă ĕҫ туман пулсан та, усалтан хăтар мана, Ху хушнине ăшăмра тытса тăмалла ту мана, епĕ Санăн умăнта уҫма тивĕҫлĕ мар ҫăварăма уҫма йурăхлă пулам, Санăн ырă йатна: Ашшĕне, Ывăлне, Святой Сывлăшне мухтаса тăрам, халĕ те, кирек хăҫан та, ĕмĕр ĕмĕрех, амин.

## Молитва 2-я того же святаго.

Ей Ҫăлакан, ҫур-ҫĕрте тăрса Сана мухтаса йурлатăп, Сана пуҫҫапса тархаслатăп: ҫылă-

хăмсемпех вилмелле ан ту мана, хĕрхен мана, ей Ху ирекӳпе пăталаннă Турă, мана нимĕне пĕлмесĕр çыврăраканскерне ҫасрах вăратса тă-рат, халĕ Сан умăнта тăрса кĕл-тунă çĕртех çăл мана; çак çĕр хыççăн килес куна çылăх-сăр ирттерсе йама пар мана; ей Христос Ту-рă, çăл мана.

## Молитва 3-я того же святаго.

Ей çынна савакан Патша Турă, ăйхăран тарсан Санăн ырă кăмăлу çине шанса, Есĕ хушнă ĕçсене тума хăйса тытăнатăп. Сана пуç-çапса тăрхаслатăп: пур вăхăтра та, пур ĕçре те пулăш мана, тăвас усалтан та, ку тĕнҫери пур ирсĕр йапаласемпе шуйттан улталаса çы-лăха кӳртесрен хăтар мана, Хăвăн ĕмĕрхи патшалăхна та çăлса кӳрт, Есĕ çуратнă мана, пур ырăлăха та Есĕ паратăн, епĕ пĕр Сан çине анҫах шанса тăратăп, Сана мухтатăп, халĕ те, кирек хăçан та, ĕмĕр ĕмĕрех, амин.

## Молитва 4-я того же святаго.

Ей Турă, Хăвăн нумăй ырăлăхупа, аван кăмăлупа мана Ху ҫуруна çак иртсе кайнă

*

çӗре пур усалтан та лайăх ирттерсе йамалла турăн. Ей пурне те пултаракан Патша Турă, мана Хăвăн ҫăн çуттупа, çутат, ҫӗреме тасат. Ху хушнине туса пурăнма тивӗçлӗ ту мана, халӗ те, кирек хăçăн та, ӗмӗр ӗмӗрех, амин.

## Молитва 5-я св. Василія Великаго.

Ей пурне те тытса тăракан Патша Турă, Ангелсенӗн те, етемӗн те Турри! Есӗ çўлте пурăнса айалтисене пăхатăн, çын ăшӗнҫи шухăшсене пӗлетӗн, унăн никам пӗлейми шухăшӗсене те виттӗрех курса тăратăн; Есӗ ӗмӗртен малтанхи вӗçӗмсӗр Çутă, Санăн улăшăнасси, урăх тӗрлӗ пуласси пӗрте çук; ей вилӗмсӗр Патша, епир халӗ Санăн пит ырă кăмăлу çине шанса, çылăхлă ҫӗлхепе тархаслатпăр, пирӗн кӗллӗмӗре хапăл ил, епир йе ӗçпе, йе сăмахпа, йе шухăшпа, йе пӗлсе, йе пӗлмесӗр тунă çылăхăмăрсене пурне те каçар, ўт-пӗвӗмӗрсемпе ҫунăмăрсене пур усалтан та тасат; ку тӗнҫери пурăнăçăмăра таса ҫӗрепе, лайăх шухăшпа ирттерсе йама пар пире, Хăвăн пӗртен пӗр Ывăлу, пире Çăлакан Туррăмăр Іисус Христос çутăлса аслăлăхӗпе килес

кунне кӗтсе тăма пар, Вăл Аслă Тӳре пулса пурне те ӗҫӗсем тăрăх сут-туса уйăрма аслăлăхӗпе килнӗ вăхăтра епир ӳркенсе, ҫывăрса ан йулар, лайăх ҫӳресе, ырă ӗҫсем туса кӗтсе илер, вара Унпа пӗрле савăнса, Туррăн аслă, ҫуртне керӗпӗр, унта ҭӗлхе калайми Санăн илемлӗ сăнна куракансем тем пек савăнаҫҫӗ, ӗмӗр праҫник туса йурлаҫҫӗ. Есӗ пурне те ҫутăлтарса тасатакан ҭăн Ҫутă, Сана пур ҭун та ӗмӗртенпелех мухтаса тăраť, амин.

## Молитва Ангелу хранителю.

Ей манăн мӗскӗн ҭунăмпа хурлăхлă пурăнăҫăма пăхса тăракан Святой Ангел, мана ҫылăхлăскере ан пăрахсам; хама хам ҭарайманшăн пăрахса ан кайсам манран, Ху вырăнна шуйттана ан пар, вăл тăрсан вăйсăр ӳт-пӗвӗме хупăрласа, мана пӗтӗмпех хăй аллине илӗ. Ей Туррăн Святой Ангелӗ, типсе кайнă аллăмран хытă тытса ҫăлăнма каймалли ҫулпа илсе кай мана, Есӗ манăн мӗскӗн ҭунпа ӳт-пӗве пăхса усракан, пурăннă кунăмсенҭе Сана ҫилентернине те, иртнӗ каҫ ҫылăха кӗнине те, пурне

те каçар мана, çак кун пăхса усра мана, усал улталасран та сыхла мана, пĕр çылăхăмпа та Турра ан кӳрентерем, маншăн Турра тархасла, Вăл мана Хăйĕнђен хăраса тăмалла тăвин-ђĕ, епĕ Унăн ырăлăхне курма тивĕçлĕ пулăпин-ђĕ, амин.

## Молитва къ Пресвятой Богородицѣ.

Ей мана пăхса усракан ђăн таса, Турă Амăшĕ, Хăвăн хăватлă таса кĕллӳпеле мана йăваш мĕскĕн ђуруна хуйха йересрен, ӳкĕнме манасран, ăссăр пуласран, ӳркенесрен хăтар, пăсăлнă ђĕремпе тĕттĕмленнĕ ăсăмран та пур ирсĕр усал кирле мар шухăшсене сирсе йар. Епĕ мĕскĕн, çылăхлă çын; ман усал шухăшсенĕн çулăмне сӳнтер; ăшăма усал шухăшсем кĕрессипе, тĕрлĕ усал ĕçсем тума тытăнасран та сыхла мана. Сана пур халăхсем те мухтаççĕ, ђăн таса йатна ĕмĕр ĕмĕрех аслăласа тăраççĕ, амин.

## Молитва къ своему Святому.

Ей Турра йурăхлă пулнă Святой çын (йатне асăн), Есĕ мана ђас пулăшакан, ман ђу-

нӑмшӑн кел-тӑвакан, епӗ Сана тархасласа пуҫ-ҫапатӑп, маншӑн Турра кӗл-ту.

### Пѣснь Пресвятой Богородицѣ.

Ей Турра ҫуратнӑ Хӗр, савӑн! Санпала Турӑ, тивлетлӗ Марія; Есӗ пур хӗр-арӑмсенҗен те мухтавлӑ, Санран ҫурални те мухтавлӑ, Есӗ пирӗн җунсене Ҫӑлакана ҫуратнӑ.

### Тропарь Кресту и молитва за Царя и отечество.

Ей Турӑ, етеммӳсене ҫӑл, Хӑвӑн халӑхна ырӑ курмалла ту; җӑн тӗне тытса тӑракан пирӗн аслӑ Патшана АЛЕКСАНД АЛЕКСАНДРОВИЧА тӑшмансене ҫӗнтерме вӑй-хӑват пар, патшалӑхна та Хӑвӑн Хӗресӳ хӑваҗӗпе усра.

### Молитва о духовномъ отцѣ.

Ей Турӑ, манӑн ҫылӑхӑмсене каҫарттаракан аттеме (йатне асӑн) ҫӑл, ҫырлах, манӑн ҫылӑхсене унӑн таса кӗллипе каҫар.

### Молитва о родителяхъ.

Ей Турӑ, манӑн аттепе аннене, пиҗҗесене, шӑллӑмсене, аккамсене, йӑмӑкӑмсене, тӑвансе-

не пурне те, тус-йышсене те (йатђёсене асăн) çăл, çырлах, ку тёнђере те, леш тёнђере те ырă курмалла ту вёсене.

## Молитва о ненавидящихъ насъ.

Ей Турă, мана кураймансене, мана хур-тăвакансене, мана усал тăвакансене пурне те çăл, çырлах вёсене, маншăн çылăхлăскершён ан пётер вёсене.

## Молитва объ усопшихъ родителяхъ.

Ей Турă, Хăвăн вилнё ђурусенён, манăн аттене анненён, (йатђёсене асăн) ђунёсене асăн, вёсем ирёклё, ирёксёр çылăха кёнине пурне те каçар, Ху патшалăхна кўртсе ёмёр Санăн ырăлăхна курса пурăнмалла ту вёсене.

## Достойно есть яко воистинну.

Ей Турра çуратнă Хёр, Сана асла хурса хисеплеме тёрёс тивёçлё, Есё пирён Туррăн ёмёр мухтавлă таса Амăшё. Есё Херувимсенђен те аслă, Серафимсенђен те мухтавлă; Есё хёр-халлён Сăмах Турра çуратнă, Есё Турă Амăшё, Сана аслăлатпăр.

### Слава и нынѣ.

Мухтав Ашшĕне, Ывăлне, Святой Сывлăшне, халĕ те, кирек хăçан та, ĕмĕр ĕмĕрех, амин.—Ей Турă, çырлах (3 хут).—Ей Турă, Турă Ывăлĕ Іисус Христос! Хăвăн таса Аннў кĕл-тунăшăн, Турра пăхăнса пурăннă таса аттемĕрсемпе пур святой çынсем те кĕл-тунăшăн çырлах пире, амин.

---

# МОЛИТВЫ ВЪ ПРОДОЛЖЕНІИ ДНЯ.

### Молитва передъ начатіемъ дѣла.

Ей Турăçăм Іисус Христос! Есĕ ĕмĕртен малтанхи Аçăвăн пĕртен пĕр Ывăлĕ, Есĕ Хăвăн таса çăварна уçса, „Мансăр пуçне нимĕн те тăваймăр“, тесе калана; ей Туррăм, Туррăм, Ху каланине ĭунăмпа, ĭĕремпе ĕненсе илсе Сана, ырă Турра йăлăнатăп: çак халĕ епĕ тытăнас ĕçе Саншăн Ашшĕйĕн, Ывăлейĕн, Святой Сывлăшейĕн йаĭĕпе туса пĕтерме пулăш мана çылăхлăскерне, амин.

### Молитва послѣ окончанія дѣла.

Ей Христос Туррӑм; пур лайӑх ӗҫсене те Есӗ туса пӗтерттеретӗн, ҫунӑма ӗнтӗ савӑнтарса хаваслантар, ҫӑл мана: пӗр Есӗ анҫах ырӑ кӑмӑллӑ Турӑ.

### Молитва предъ ученіемъ.

Ей ҫӳлти Патша, Есӗ ҫуна лӑплантаратӑн, Есӗ тӳрӗ Сывлӑш, (пӗтеҫҫен).

### Молитва послѣ ученія.

Ей Турра ҫуратнӑ Хӗр, Сана асла хурса....

### Молитва предъ обѣдомъ.

Ей Турӑ, пуринӗн те куҫӗсем ӗмӗтленсе Сан ҫине пӑхаҫҫӗ. Есӗ пурне те кирлӗ вӑхӑтра ҫимӗҫ паратӑн, Есӗ кӑмӑлупа ырӑлӑхлӑ аллуна уҫса, пур ҫуна та тӑрантаратӑн.

### Молитва послѣ обѣда.

Тав-та пуҫ Сана, пирӗн Турӑ Христос, Хӑвӑн ҫӗр ҫинҫи ырӑлӑхупа пире тӑрантарнӑшӑн, ҫӳлти патшалӑхна та кӳртмесӗр ан хӑвар пире.

# Молитвы вечерніа.

## Во имя Отца.

Аш̆ш̆ӗйӗн, Ывӑлейӗн, Святой Сывлӑш̆ӗйӗн йаҫ̆ӗпе, амин.

## Господи Іисусе Христе.

Ей Турӑ, Турӑ Ывӑлӗ Іисус Христос! Хӑвӑн таса Аннў кӗл-тунӑш̆ӑн, Турра пӑхӑнса пурӑннӑ таса аттемӗрсемпе пур святой ҫынсем те кӗл-тунӑш̆ӑн ҫырлах пире, амин.—Мухтав Сана, пирӗн Турӑ, мухтав Сана.—Ей ҫўлти Патш̆а. Святой Турӑ, Святой хӑватлӑ...(3 хут). —Ҫ̆ӑн тасӑ виҫипостаҫлӗ Турӑ, ҫырлах пире.—Мухтав: халӗ те. Ей ҫўлти Аттемӗр.

## ТРОПАРИ.

Ей Турӑ, ҫырлахсам пире, ҫырлахсам. Урӑх нимӗн те кала пӗлмесӗр ҫак кӗлӗпе анҫ̆ах Сана Патш̆а Турра тархаслатпӑр; ей Турӑ, ҫырлахсам пире. Мухтав Аш̆ш̆ӗне, Ывӑлне, Святой Сывлӑш̆не. Ей Турӑ, Сан ҫине анҫ̆ах ш̆анса тӑратпӑр: ҫырлахсам пире, пире ытла ан ҫи-

ленсем, епир йĕркесĕр пурăннине ан асăнсам; ырă кăмăлупа пирĕн çийĕ хĕрхенсе пăхса халĕ те ĕлĕкхи пекех тăшмасентçен хăтар пире: пирĕн Турă Есĕ, епир Санăн аллупа пулнă етемсем Санăн йатна асăнатпăр.—Халĕ те, кирек хăсан та, ĕмĕр-ĕмĕрех, амин.—Ей мухтавлă Турă Амăшĕ, ырă кăмăлна пирĕншĕн уçсам, епир Сана шанса тăракансем пĕтмелле ан пулар, Сан тăрăх хĕнрен хăтăлар: Христоса ĕненекен халăха Есĕ çăлса тăратăн.—Ей Тура, çырлах (12 хут).

## Молитва 1-я св. Макарія Великагс.

Ей ĕмĕрхи Турă, Есĕ пур çунлă йапаласенĕн Патши, Есĕ мана çак сехете çитеççен усрарăн, епĕ пайанхи кун йе ĕçпе, йе çăмахпа, йе шухăшпа çылăха кĕнине пурне те каçар; ей Турă, ўтĕм иреĕрĕнçен, усал шухăшсенçен мĕскĕн çунăма тасат; ей Турă, çак çĕре лайăх çывăрса ирттерме пар мана, епĕ хамăн мĕскĕн вырăн çинçен тăрса малашне пурăнас кунăмсене Санăн çăн таса йатна йурăхлă ирттерем, хама хирĕç тăракан ўтле, ўтсĕр тăшмансене

ҫӗнтерем. Ей Турӑ, хама ирсӗрлентерекен усал шухӑшсенҫен, аскӑн шухӑшсенҫен ҫӑл мана, Патшалӑх та, хӑват та, аслӑлӑх та Санӑн: Ашшӗйӗн, Ывӑлӗйӗн, Святой Сывлӑшӗйӗн, халӗ те, кирек хӑҫан та, ӗмӗр ӗмӗрех. амин.

## Молитва 2-я святаго Антіоха.

Ей Атте Туррӑн Сӑмахӗ, Іисус Христос! Есӗ пурне те тытса тӑракан ҫӑн Турӑ, Хӑвӑн нумай кӑмӑлушӑн мана Ху ҫуруна нихӑҫан та ан хӑварсам, йаланах ман ӑшра пулҫҫе. Ей Іисус, Есӗ Ху сурӑхусене кӗтекен лайӑх Кӗтӳҫӗ, ҫӗлене мана сӑхма ан йар, шуйттана мана илертме ан йар, манра ҫылӑх вӑрлӑхӗ пур. Ей Святой Патша Іисус Христос, Есӗ пурте пуҫҫапакан аслӑ Турӑ, епӗ ҫывӑрнӑ ҫухне таса Сывлӑшунӑн пӗтми ҫуттипе сыхласа тӑр мана, Есӗ унпала вӗренекенӳсене ҫутӑлтартӑн; ей Турӑ, мана та Хӑвӑн тивӗҫсӗр ҫуруна ҫывӑрнӑ ҫухне сыхла; ӑсӑма таса Евангелне ӑнлантарса ҫутӑлтар; ҫунӑма Хӗресне йураттарса аванлантар; ҫӗреме таса сӑмахупа тасат; ӳтӗме Ху асап курнине астутарса тӳ-

сӗмлӗ ту, шухӑшӑма йӑвашлӑхупа сыхла; Хӑна аслӑласа мухтама кирлӗ вӑхӑтра вырӑнӑм ҫинҫен тӑрат мана. Есӗ ӗмӗртен малтанхи Атте Турӑпӑ, ҫӑн таса Сывлӑш Турӑпа пӗрле ӗмӗрех мухтавлӑ, амин.

## Молитва 3-я.

Ей ҫынна савакан ырӑ Туррӑм, епӗ пайанхи кун йе ӗҫпе, йе сӑмахпа, йе шухӑшпа ҫылӑха кӗнине пурне те каҫар; ырӑ, канлӗ ӑйхӑ пар мана, тӗрлӗ усалтан витсе сыхлама Ангелна йар; Есӗ пирӗн ҫунӑмӑрсене, ӳтӗмӗреене усракан Турӑ, епир Сана: Ашшӗне, Ывӑлне, Святой Сывлӑшне мухтатпӑр, халӗ те, кирек хӑҫан та, ӗмӗр ӗмӗрех, амин.

## Молитва 4-я святаго Іоанна Златоустаго.

Ей Турӑ, ҫӳлти ырӑлӑхӑнтан ан хӑвар мана. Ей Турӑ, ӗмӗрлӗх асапран хӑтар мана. Ей Турӑ, йе ӑспа, йе шухӑшпа, сӑмахпа, йе ӗҫпе ҫылӑха кӗнине каҫар мана. Ей Турӑ, Ху мӗн хушнине пӗлтер мана, ӑна мана ан мантар, хӗн килсен тӳсӗм пар, ҫӗреме ҫемҫет. Ей Ту-

рă, çылăха кĕресрен хăтар мана. Ей Турă, усал шухăшсемпе тĕттемленнĕ ҫĕреме çутăлтар. Ей Турă, епĕ çылăхлă çын, Есĕ ырăлăхлă Турă, манăн ҫунăмăн вăйĕ çитейменнине курса хĕрхен мана. Ей Тура, таса йатна мухтама хăватна парса пулăш мана. Ей Турă Іисус Христос, мана Ху ҫуруна ҫĕрĕлĕх кĕнеки çине çырса хур, вилсен мана лайăх вырăн пар. Ей Турăçăм, Турăçăм, епĕ Сан умăнта халиҫҫен пĕр ырă ĕç те тумарăм пулсан та, ĕнтĕ Хăвăн ырăлăхупа малашне ырă ĕçсем тумалла ту мана. Ей Турă, ырăлăхун сывлăмне ҫĕрем варрине сирпĕт. Ей пĕлĕте, çĕре пултаракан Турă, мана çылăхлă, йĕрĕнмелле усал ҫуруна Хăвăн патшалăхăнта асна илсем, амин. Ей Турă, çылăхăмсенҫен ӳкĕннĕ ҫух хапăл ил мана. Ей Турă, ан пăрах мана. Ей Турă, усал пусмăрласран сыхла мана. Ей Турă, ырă шухăш пар мана. Ей Турă, вилессĕме астутарса кăмăлăма çемçетсе йĕрт мана. Ей Турă, çылăхăмсенҫен ӳкĕнме шухăш пар мана. Ей Турă, мана йăваш, таса шухăшлă, Хăна итлекен ту. Ей Турă, мана тӳсĕмлĕ, ҫĕрелĕ, йăваш ту.

Ей Турă, ҫěреме Хăнтан хăракан ту, епě вара ырă ěҫсем тăва пěлěп. Ей Турă, Сана пěтěм ҫунăмпа, пур шухăшăмпа савма йурăхлă ту мана, епě пěр ěҫěмре те Санăн ирěкěнтен ан тухам. Ей Турă, усал ҫынсенҫен, шуйттансенҫен, усал шухăшсенҫен, ытти тěрлě усал йапаласенҫен те витсе сыхла мана. Ей Турă, Есě мěн тăвас тенине пěлсе тăватăн, епě те ҫылăхлăскер Санăн ирěкў тăрăх пурăнам. Есě ěмěр ěмěрех мухтавлă. Амин.

## Молитва къ Пресвятой Богородицѣ.

Ей ырă Патшанăн ырă Амăшě, ҫăн таса, мухтавлă, Турра ҫуратнă Марія, Есě Хăвăн Ывăлна, пирěн Турра, тархасла: ҫуралнă ҫунăма Унăн ырă кăмăлěпе тўрлетсе ырă ěҫсем тума вěрент мана: вара йулашки пурăнăҫăма ҫылăхсăр ирттерсе Сан тăрăх райа кěрем, Есě анҫах Турра ҫуратнă мухтавлă таса Хěр.

## Молитва святому Ангелу Хранителю.

Ей Христосăн мана сыхласа тăракан, манăн ҫунпа ўт-пěве пăхса усракан святой Ангелě,

епӗ пайанхи кун ҫылӑха кӗнине пурне те касар, тӑпіман ҫылӑха кӳртесрен хӑтар мана, Турра манӑн пӗр ҫылӑхпа та ҫилентерес марҭӗ; маншӑн, ҫылӑхлӑ, Хӑна тивӗҫсӗр ҭурушӑн кӗл-ту, ҭӑн таса виҫ-ипостаҫлӗ Туррӑн ырӑлӑхне те, пур святой сынсенӗн ырӑлахне те курма тивӗҫлӗ ту мана, амин.

## Взбранной воеводѣ.

Ей Турӑ Амӑшӗ, Есӗ ҫар пуҫлӑхӗ пек тӑшмансене ҫӗнтеретӗн, епир ҭурусем' тӑшмансенҭен хӑтӑлнӑшӑн Сана тавтуса, мухтаса йурлатпӑр, Хӑвӑн пурне те ҫӗнтерекен хӑватлӑ вӑйупа пур усалтан та хӑтар пире, епир Сана: ей таса Хӗр, савӑн! тесе калар.

Ей таса, ӗмӗр мухтавлӑ Хӗр, Христос Турӑ Амӑшӗ, кӗллӗмӗре Хӑвӑн Ывӑлу, пирен Турӑ патне ҫитер, пирӗн ҭунсене Вӑл Сан тӑрӑх ҫӑлин-ҭӗ.—Ей Турӑ Амӑшӗ, епӗ Сан ҫине анҭах шанса тӑратӑп, витсе усра мана.—Ей Христос Туррӑм, куҫӑма уҫ, сывӑрнӑ ҫӗртех вилмелле ан пулам, тӑшманӑм—„ҫӗнтӗм ӗнтӗ кӑна„, тесе ан калатӑр.—Ей Туррӑм, ҭунӑм

хутне кӗрекен пул, танатасем нумай карса хунӑ ҫӗрте ҫӳретӗп, вӗсенҫен хӑтарса тӑр, ҫӑл мана, Есӗ ҫынна савакан ырӑ Турӑ. Манӑн ӗмӗтленсе тӑма Атте Турӑ пур, тархасласа хӑтӑлма Ывӑл Турӑ пур, витӗнсе тӑма Святой Сывлӑш Турӑ пур: ей виҫ-ипостаҫлӗ таса Турӑ, мухтав Сана.

## Окончаніе молитвъ.

Ей Турра ҫуратнӑ Хӗр... Мухтав Ашшӗне, Ывӑлне. Ей Турӑ, ҫырлах (3 хут). Ей Турӑ, Турӑ Ывӑлӗ Іисус Христос! Хӑвӑн таса Анн ӳ кӗл-тунӑшӑн, Турра пӑхӑнса пурӑннӑ таса аттемӗрсемпе, пур святой ҫынсем те кӳл-тунӑшӑн ҫырлах пире, амин.

## Ложась на постель.

Ей Турӑҫӑм, Хӑвӑн ҫӗрӗлӗх паракан таса Хӗресӳ хӑваҫӗпе пур тӗрлӗ усалтан витсе сыхла мана.

## Предъ сномъ.

Ей Турӑҫӑм Іисус Христос, ҫунӑма Сан аллуна паратӑп. Есӗ пилле мана, Есӗ ҫырлах мана, Есӗ ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫ пар мана. Амин.

# ЗАПОВѢДИ.

1. Санăн Турру Епĕ, Манран (Мансăр) пуçне санăн урăх турăсем ан пулҫҫăр. 2. Çӳлти пĕлĕт çинҫи йапаласене, айалти çĕр çинҫи йапаласене, çĕр айĕнҫи, шыври йапаласене, пуççăпса пăхăнса ан пурăн; вĕсенĕн кĕлеткисене те туса ан тытса тăр. 3. Турă йатне вырăнсăр ан асăн. 4. Турă кунне уйама астуса тăр: пур ĕçӳсене те ĕçлеме сана ултă кун пултăр, çиҫҫĕмĕш кун, уйав кунĕ, Туррушăн пултăр. 5. Аçуна аннӳне хисеплесе, итлесе пурăн: хăнах ырă пулĕ, çĕр çинҫе ĕмĕрӳ вăрăм килĕ. 6. Çынна ан вĕлер. 7. Аскăнланса ан çӳре. 8. Ан вăрла. 9. Çын çинҫен суйа суйса ан кăтарт. 10. Çын арăмне ан ăмсан, çын килçуртне ан хапсăн, çын уйне-хирне, ар-ҫурине, хĕр-арăм-ҫурине, вăкăрне, лашине, пур выҫăх-ҫĕрĕлĕхне те, нимĕнне те унăнне ан хапсăн.